# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

## ÇУТÇАНТАЛĂКРИ ПУЛĂМСЕМ

### Асамат кĕперĕ

1. Атăл урлă чĕн йĕвен ыватрăм.
2. Атăл урлă пурçăн тилхепе картăм.
3. Атăл урлă хĕлĕх карнă.
4. Атăл урлă — Улатимĕр кĕперĕ [56].
5. Асатте пĕкки — Атăл урлă.
6. Пĕкĕлме пĕкки — Атăл урлă.
7. Çичĕ тĕслĕ çут хăю Атăл урлă ывтăнчĕ.
8. Çичĕ тĕслĕ çутă карăм Çавал урлă карăнчĕ.
9. Вăрман урлă вăрăм кĕпер хывăнчĕ.
10. Пӳрт урлă чĕн йĕвен ыватрăм.
11. Сăрлă пĕкĕ — сăрт урлă.
12. Асламас [57] кĕперри авăнчăк.
13. Улатимĕр хапхине çичĕ сăрпа сăрланă.
14. Авра-çавра пурçăн тутăр.
15. Хӳхĕм хăю сехетлĕх.
16. Эреветлĕ-теветлĕ, кĕпи арки хăйăклă.
17. Арпа çуни, пурçăн тилхепи.
18. Пăрçа урапи, пурçăн тилхепе.

### Аслатиллĕ çумăр

19. Асанкасси [58] асса килет, Сиккасси [59] сиксе килет, Кум-касси куçса килет, куççульне тăкса килет.

20. Асанкасси асса килĕ, Сиккасси сиксе килĕ, Йĕпреç хĕрĕ йĕрсе ярĕ.
21. Ахмача[60] ахăрса килет, Çиçтепе[61] çиçсе килет, Хурамал[62] хăпса килет, çут куççуль тăкса килет.
22. Йăлтăр-йăлтăр йăлтăркка, калтăр-калтăр калтăркка, ала витĕр алтăркка.
23. Кĕмсĕрт! турĕ, йăлт! турĕ, пăрçи шăпăрр! тăкăнчĕ.
24. Хапăс[63] çинче халт-халт! Явăш[64] çинче ялт-ялт! Пирĕн çие пат-пат!

## Аслатипе çиçĕм

25. Аслăк çинче тур лаша кĕçенет.
26. Асатте урхамахĕ çĕр кисретсе кĕçенет.
27. Çармăс лаши кĕçенет — çавра тĕнче кисренет.
28. Çӳл тӳпере çӳрен ут кĕçенет.
29. Ту çинче турхан[65] лаши кĕçенет.
30. Тура лаша кĕçенет—тимĕр кăвак çӳçенет.
31. Лаша чупать, çĕр чĕтрет.
32. Кăмака ишĕлет.
33. Вутланта[66] вут çапать, Хĕлеçре[67] хăйă çунать.
34. Вĕлт турĕ — вĕлле хыçне пытанчĕ.
35. Йăлт пăхрăм та — юман хыçне пытантăм.
36. Йăлт! турĕ те чалт! турĕ — куç умĕнчен çухалчĕ.
37. Кĕпĕрнаттăр урапи кĕпер çинче илтĕнет.
38. Пӳрт тăрринче папай кĕрлет.
39. Малтан йăлтăркка, кайран кăлтăркка.
40. Упăшки «саспа илĕп» тет, арăмĕ «куçпа илĕп» тет.
41. Асламас куçĕ хĕм сапать.
42. Çӳлти касра чан çапни аял касра илтĕнет.
43. Асатте çулу шаккать, хĕлхемĕ кунта сирпĕнет.
44. Аçтăрханта вут касаççĕ, турпасĕ кунта сирпĕнет.
45. Аçтăрханта çулу çапаççĕ, çути кунта курăнать.
46. Çеçенхирте хĕр вылять, çути кунта курăнать.
47. Çĕрпе пĕлĕт хушшинче вутлă çĕлен вăй вылять.
48. Çиçтĕпере хăй çутнă, çути кунта курăнать.
49. Йалт-ялт тутăр шăтать.
50. Ярăм-ярăм йăлт та йăлт!
51. Йăлăм урлă йăлтăртăк.
52. Çеçенхир варринче ылтăн юпа.
53. Çеçенхир варринче ылтăн туя выртать.
54. Алли çук — шаккать, вучĕ çук — çунать.
55. Вĕçет вутлă ухă, никам та тытаймасть.
56. Шаклатăп, маклатăп, йыт вĕртмĕп, хулă хуçмăп.
57. Çулла асатте мĕкĕрет-вăрçать, хĕлле çывăрать.

58. Ураскилт[68] енче халт! Ялтра[69] енче ялт!
59. Янасалта[70] ялт та ялт! Ураскилтре телт те телт!
60. Яваш çинче ялт-ялт! Хапăс çинче халт-халт!
61. Янасал ялт! Ураскилт хӳлт!
62. Янасал ялт! турĕ, Ураскилт халт! турĕ, Кĕртекасси[71] тĕрр! терĕ.
63. Хĕлеç çинче хĕç вылять, Çĕрпӳре çĕр чĕтрет.
64. Чак-чак, чанкăртак, айăн тимĕр пит тимĕр, акалама тинĕс пек.

## Ăшă

65. Кашни килтех кушак ырри.
66. Кăмака çинче кушак вылĕ.
67. Пирĕн килте кирли пур.
68. Пӳртре мĕн курăнмасть?
69. Хăй пӳрт тулли, çапах та ăна курма çук.
70. Хĕлле — хӳтлĕх тулли, çулла — тĕнче тулли.

## Вăхăт

71. Асламас кайăкĕ килет те иртет, килет те иртет.
72. Килет те иртет; тарса хăтăлма çук, хăваласа çитме çук.
73. Маншăн та килет, саншăн та килет; маншăн та иртет, саншăн та иртет.
74. Патшана та пăхăнмасть, тиеке те тăхтамасть.
75. Пĕлĕт мар — шăвать, юхăм мар — иртет.
76. Тем пек тытса чарасчĕ — тытса чарма мехел çук.
77. Шур сухаллă хăта пур, хăтлă килсе хăтлă кайма юрататть.
78. Ĕçлекеншĕн нихçан та çитмест, юлхав çыншăн ытлашши.
79. Кăнтăрлаччен вăкăр кӳлсе каять, кăнтăрларан мулкачпа каять.
80. Яланах шăвать — хăйĕн çитес çĕрĕ те çук, яланах васкать — хăйĕн тăвас ĕçĕ те çук.

## Вучах

81. Икĕ кайăк пуçа-пуçăн выртаççĕ.
82. Икĕ мулкачă кута-кутăн выртаççĕ.
83. Икĕ така кута-кутăн сĕкĕшеççĕ.
84. Улпут чашки тăп-тулли.

## Кӑвайт вырӑнӗ

85. Хӗрлӗ тилӗ йӑваланнӑ вырӑнта ҫичӗ ҫулсӑр курӑк шӑтмӗ.

## Кӑвар

86. Пӗр карта ут — тытса чарма ҫук.
87. Пӑхма ҫӑмӑл пек, йӑтма тӑрсан — ҫӗклеме ҫук.
88. Пӑхма ҫӑмӑл, йӑтма йывӑр.
89. Пӗр тирӗк йӑвана ниҫтан та ҫыртса ҫиеймӗп.
90. Пӳрт йӗри-тавра мӗн ҫӗклесе ҫаврӑнаймастӑн?
91. Мами чашки пӗр чашӑк, ниҫтан тытса ҫиеймӗн.
92. Мами шӑрҫи, мӑн шӑрҫи, ниҫтан тытса тиреймӗн.
93. Ҫакӑ пӳртре мӗн йывӑр?
94. Пӗр япала ниме те тиркемест, пӗр шӗвӗ япалана тиркет.
95. Шыва кӗрет хӗп-хӗрлӗ, шывран тухать хуп-хура.
96. Тирӗк тулли типӗ салма.

## Кӑмрӑк

97. Ҫӗре чикрӗм — ҫӗрмерӗ, шыва ятӑм — путмарӗ.
98. Шивӗкӗм, шӗнкӗрӗм, шыва ятӑм — путмарӗ, ҫӗре чикрӗм — ҫӗрмерӗ.
99. Шывра путмасть, ҫӗрте ҫӗрмест.

## Кӗл

100. Ҫак пӳртре апӑшт пур.
101. Ҫак пӳртре мӗн кичем?

## Кӗркунне

102. Асаттен пӗр хӗрӗ ула куна юратать.
103. Йӑрӑм-ярӑм, ула-чӑла, йӗре-кула, йӗпе куҫ.
104. Йӗпе куҫ каять, хаяр куҫ килет.
105. Кӗркури каять, Хӗлимун килет.
106. Ҫулленех пӗр пичче килет, ула кунсем илсе килет.
107. Пӗри калать: мана шанма ҫук, эпӗ кӗскё ӑслӑ, тет.

## Кӗрт

108. Карта ҫумӗнче шур ёне выртать.
109. Анкартинче эскер выртать.

110. Пӳрт хыҫӗнче кӳпӗннӗ сурӑх выртать.
111. Ҫарта витӗр куҫ ярӑп.

## Кунпа ҫӗр

112. Аппӑшӗ шап-шурӑ, йӑмӑкӗ хуп-хура.
113. Вӑртахӑн икӗ хӗр: пӗри хура, тепри сарӑ.
114. Йӑмӑкӗ пиччӗшӗ патне хӑнана каять, пиччӗшӗ унтан вӑрмана тарать.
115. Пӗр тӗнче пӗтет, тепӗр тӗнче тухать.
116. Сар пикепе хура пике ылмашӑнса тӑраҫҫӗ.
117. Шур акӑшпа хура акӑш ылмаш вӗҫсе килеҫҫӗ.
118. Шурӑ кӑвакарчӑнпа хура курак ылмаш вӗҫсе килеҫҫӗ.
119. Сарпипе Хурапи вӗҫрен вӗҫе ҫӳреҫҫӗ.
120. Ҫӗрпӳ хӗрӗн хура чаршав, пинпӳ хӗрӗн шурӑ чаршав.
121. Ҫурри хура, ҫурри шурӑ.

122. Хура акӑш килсессӗн,
Шуррин кайма тӳр килет;
Шурӑ акӑш килсессӗн,
Хурин кайма тӳр килет.

123. Хура ӗне килсе выртать —
Шурӑ ӗне тӑрса каять;
Шурӑ ӗне килсе выртать —
Хура ӗне тӑрса каять.

124. Хура кайӑк килчӗ те
Пур халӑха ӳкерчӗ,
Шурӑ кайӑк килчӗ те
Пур халӑха тӑратрӗ.

125. Хура чаршав карӑнать —
Хура халӑх йӑванать,
Шурӑ чаршав карӑнать —
Хура халӑх вӑранать.

126. Шӑркалчӑ шап-шурӑ, хурами хуп-хура.
127. Шурӑ тӑван шурӑ шупӑрпа, хура тӑван хура халатпа.
128. Атӑл урлӑ, Сӑр урлӑ сӑнсӑр карчӑк хӑпса килӗ.
129. Ҫайӑк ҫуначӗпе сулса янӑ та пӗр тӗкӗпех пур тӗнчене витсе лартнӑ.
130. Хура кайӑк хура ҫунаттипе сулса ярать те ҫут тӗнчене хупласа хурать.
131. Хура улӑп килет те пӗтӗм тӗнчене ҫӗнсе тухать.
132. Хура ӗне пӗтӗм тӗнчене ҫӗнӗ.

## Кӳлĕ

133. Асатте куçне аллă икĕ улăп та çĕклеймĕ.
134. Аслă улăхра асатте куçĕ çуталса выртать.
135. Улăх варринче улăп куçĕ пур.

## Мĕлке

136. Ĕмĕр хăвалăн — тытаймăн.
137. Хăвалатăп-хăвалатăп — хăваласа çитмелли çук, тĕкетĕп — тĕксе юлмасть, вăхăт çитсен — хăех пĕтет.
138. Шăлсан — шăлса пăрахмалла мар; çĕклесен — çĕклесе пăрахмалла мар; вăхăт çитсен — хăех каять.
139. Хăвалăп-хăвалăп — çитеймĕп, çитсен те тытаймăп, тытсан та чараймăп.
140. Çуса та яраймăп, шăлса та яраймăп.
141. Куçпа курăн, алăпа тытаймăн.
142. Чупрăм-чупрăм — хуса çитеймерĕм.
143. Вутра çунмасть, шывра путмасть.
144. Шыва ятăм — путмарĕ, пуртăпа касрăм — витмерĕ.
145. Ĕмĕрне ирттерет — пĕр сăмах каламасть, чей те ĕçмест.
146. Куçа курăнать, ӳчĕ çук.
147. Пĕрене çинчен мĕн касаймастăн?

## Пас

148. Юпа тăрринче пасар чĕнтĕрĕ.
149. Кĕçĕн пике кĕмĕлĕ кĕçех çĕре ӳкес пек.
150. Матĕрне акка çӳреме кайнă та, çăраççи ӳкнĕ юлнă.
151. Юпа тăрринче пасарлăх.
152. Ай-уй! Ан тивех — ӳкетĕп.
153. Ан тĕкĕн — кайса ӳкет.
154. Çĕн çын чупса пырать — тенки тăкăнса пырать.
155. Ан тĕрткеле — хăсас килет.
156. Шăнкăр-шăнкăр туй килĕ — чӳрече умне пай ларĕ.

## Пăр

157. Айлăм çĕрте кĕмĕл пĕркенчĕк.
158. Шыв çинче кĕмĕл кĕпер.
159. Хĕлип пичче кĕмĕл урай сарса хурĕ.
160. Кĕркуннехи кĕмĕл çитти çуркуннепе çĕтĕлет.
161. Хĕллехи хулăн тир çулла çĕтĕлсе пĕтет.
162. Кĕрхи шывра çуралать, çурхи шывра çухалать.

163. Сивӗпе ҫуралать, ӑшӑпа ҫухалать.
164. Мамин тенки — ват тенки ҫухрӑмранах курӑнать.
165. Сӑвайсӑр, каштасӑр, хӑмасӑр, пуртӑсӑр кӗпер хывнӑ.
166. Сивӗре чул пек, ӑшӑра шыв пек.
167. Сип-сивӗ те — тимӗр мар, ҫап-ҫутӑ та — тӗкӗр мар.
168. Шывра ҫуралать, шывран хӑрать.
169. Шывра путмӗ, вутра ҫунмӗ.

### Пӑр айӗнчи шыв

170. Тул-тулашка, тулашка,
Тулта выртать валашка;
Кӑвак пӗлӗт айӗнче
Кулса выртать упӑшка.

### Пӑр кайни

171. Асатте ирӗк памасӑр аслӑк ҫиийӗ тапранмасть.
172. Тапӑртанран[72] тапкӑ килмесӗр тапӑрти выльӑх тапранмасть.
173. Патшаран указ килмесен, тимӗр пукан тапранмасть.
174. Хусантан указ килмесӗр тимӗр хӑма ҫурӑлмасть.
175. Ҫуна каять, турти юлать.

176. Тим-тим тимӗртак,
Тимӗртак мар, тимӗр сак;
Тимук ирӗк парсанах,
Ҫав тимӗр сак тапранать.

### Пӑр ҫурӑлни

177. Атӑл урлӑ вӑрӑм пушӑ выртать.
178. Атӑл урлӑ вӗрен ывӑтрӑм.
179. Атӑл урлӑ йӗс тилхепе ывӑтрӑм.
180. Тинӗс урлӑ хӗлӗх карнӑ.
181. Туран указ килмесӗр тимӗр хӑма ҫурӑлмӗ.

182. Тимӗр, тимӗр, тимӗртак, тимӗртак;
Тимӗртакӑн тӑнкӑртак,
Ай тинӗс, тип тинӗс.

### Пӑр ярапи

183. Пӳрт ҫумӗнче шур кишӗр.
184. Карнис хӗрринче кӗмӗл туя.

185. Пӳрт хӗрринче йӗке пур, хӗвелпеле ирӗлет.
186. Ан тӗкӗнех — ӳкетӗп.
187. Кутӑн Куҫма ҫуралать, куҫҫуль тӑкса ҫухалать.
188. Ҫурт ҫумӗнче саламат аври ҫакӑнса тӑрать.
189. Ҫурт ҫумӗнче шӗвӗркке ӳсет.
190. Шӗвӗркке куҫӗ пат! пат! тумлать.
191. Йӗке вӗҫӗнчен шыв тумлать.
192. Пӳкле ача куҫӗнчен пӳр юхать.

## Пӗлӗт

193. Ҫунатсӑр вӗҫет, урасӑр чупать.
194. Шурӑ та, кӑвак та — никам та улӑхса тытаймасть.

## Пушар

195. Хӗрлӗ автан яла ҫунтарать.
196. Хӗрлӗ автан пӳрт ҫинче авӑтӗ.
197. Хӗрлӗ вӑкӑр макӑртать.

## Сӗрӗм

198. Кӑмака ҫамкинче кӑвак тенкӗ пур.
199. Кӑмака ҫинче кӑвак тенкӗ выртать.
200. Кӑмака ҫинче кӑвак така выртать.
201. Кӑвак сурӑх кӗрте ларӗ.

## Сивӗ

202. Алӑк тытса уҫмассерен шурӑ сурӑх пӳрте кӗрет.
203. Алӑк тытса уҫмассерен Хӗлип мучи килех кӗрет.
204. Алӑкран кӗтӗм—хуҫкалантӑм, урай сыппине ҫитрӗм—хуҫкалантӑм.
205. Шур тухатмӑш тултан кӗчӗ, тултан кӗчӗ те хуҫкаланма пуҫларӗ, хуҫкаланчӗ-хуҫкаланчӗ те куҫ умӗнчен ҫухалчӗ.
206. Алӑкран кӗрет, кӗрсенех пӗтет.
207. Пӳрте шур сурӑх кӗртсе ятӑм, пӑхса тӑрсах ҫухатрӑм.
208. Шурӑ сурӑх алӑкран кӗрет, тӗпелелле иртеймест.
209. Алсӑр-урасӑр кӗлеткесем ӳкерет.
210. Алӑсӑр-урасӑр аслӑк тӑратӑп.
211. Тункатасӑр аслӑк хывӑп.
212. Алли ҫук, пӳрни ҫук, сӑмса вӗҫне чӗпӗтет.
213. Асти килет пуртӑсӑр, кӗпер хывать хӑмасӑр.

214. Пуртăсăр, савăлсăр, сăвайсăр кĕпер хывать.
215. Хаяр старик пуртăсăр кĕпер тăвать.
216. Юпасăр кĕпер хывтартăм.
217. Куçăм та çук, аллăм та çук, тĕрĕ тĕрлес енĕпе манран ăста çын та çук.

218. Сăнсăр кăна мучи пур,
Сăмсаран чĕпĕтес йăли пур.

219. Çăварĕ çук, шăлĕ çук, çара ӳте чĕпĕтет.
220. Çилленчĕк мучи пур: çитмĕл çулхи карчăка вунçиччĕри хĕр тăвать, çитмĕл çулхи старике вунçиччĕри яш тăвать.
221. Хĕлип мучи хăй аллипе тыткалать.

## Сывлăм

X222. Чупса-чупса пынă чух кĕмĕл çĕррĕм тухрĕ ӳкрĕ, ăна уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.

223. Утса-утса пынă чух
Кĕмĕл çĕрĕ тухрĕ ӳкрĕ,
Ăна уйăх курчĕ—илеймерĕ,
Хĕвел курчĕ — ярса илчĕ.
224. Кĕмĕлпи кĕмĕлне çухатнă:
Уйăх курнă — ухтарнă,
Хĕвел курнă — пуçтарнă.
225. Пай-пай-пай укçа,
Пайăр кăна çут укçа,
Уйăх акса хăварать,
Хĕвел тухса пуçтарать.
226. Пĕчĕк-пĕчĕк çăраççи
Ӳкрĕ-ӳкрĕ — çухалчĕ:
Уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.
227. Çĕнĕ çын çăл патне кайнă,
Çăраççине ӳкерсе хăварнă:
Уйăх курнă — илеймен,
Хĕвел курнă — тиркемен.
228. Улăхпа утса гыраттăм,
Çăраççи ӳкрĕ — çухалчĕ:
Уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.

229. Лăкăштăк инке шыв ăсма анать, çăраççи ӳксе юлать, уйăх курать — илмест, хĕвел курать — илет.
230. Уйăх акать, хĕвел пухать.
231. Уйăх салатĕ, хĕвел пуçтарĕ.

232. Қаҫа хирĕҫ пике килет,
Ҫĕр каҫиччен ҫĕрте ларать,
Ире хирĕҫ тăрса ларать,
Хĕвеле курсан—кулса ярать.

233. Илпек тенки ҫĕрте выртать,
Илме тăрсан ҫук пулать.
234. Ахах тесе пăхнăскер
Ҫут куҫҫулĕ пулайрĕ.

235. Ирхинехи Илемпи кăнтăрлаччен пурнаймасть.
236. Қатаран — Марфа, патне пырсан — хытхура.
237. Шăрпăк тăрринче тӳрпи ларать.
238. Мĕн куҫĕн шăрҫа ҫук?
239. Мăн Ваҫлин куҫĕ шăтса тухнă.
240. Хĕлип арăмĕн куҫĕ шăтăк.

## Ҫăлтăрсем

241. Асанне ҫĕрри пуҫ ҫинче.
242. Асамлă куҫ ҫĕре ӳкет, анчах ҫĕре ҫитеймест.
243. Ампар умĕнче тĕрĕллĕ шупăр ҫакăнса тăрĕ.
244. Аслăк ҫинче вĕт чулсем выртаҫҫĕ.
245. Аслăк тăрне вĕт чул ывăтрăм.
246. Интĕк-кинтĕк, мемелĕк куҫĕ ҫап-ҫут.
247. Йăлмахва[73] хирĕнче йăлтăр-йăлтăр.
248. Йăлăм хĕрĕн йăлтăркки хĕвел ансан курăнать.
249. Йĕр хăварса йĕрĕлче ӳкет, йĕрĕлчине тупма ҫук.
250. Қаҫхи карăм ҫине кĕмĕл сапнă.
251. Қăвак хире пăрҫа сапнă.
252. Маччана вĕтĕ тулă сапрăм.
253. Пус тĕпне кĕмĕл ҫĕрĕ ятăм.
254. Маччa ҫине мерчен сапрăм.
255. Пуҫ тĕлĕнче кĕмĕл ҫĕрĕ выртать.
256. Мачча ҫинче хĕрĕх ҫăкăр выртать.
257. Пӳрт тăрринче ҫантаркка кĕпе выртать.
258. Пӳрт тăрринче кĕрчĕллĕ кĕскĕ выртать.
259. Пӳрт тӳпинче пăхăр улача кĕпе выртать.
260. Пӳрт тăрринче пӳштĕрлĕ шупăр ҫакăнса тăрĕ.
261. Пӳштĕрлĕ шупăр пӳрте витĕ.
262. Тĕпсĕр тинĕсре ахахсем выртаҫҫĕ.
263. Ҫурт тӳпинче ҫут тӳме.
264. Шанк пăр ҫине пăрҫа акрăм.
265. Асатте хирне пăрҫа акнă.

266. Эпир, эпир, эпирччĕ,
Хĕрĕх те пĕр хĕрĕччĕ,
Аллă та пĕр ачиччĕ,
Çĕрĕпе çуй турăмăр,
Ирхине çук пултăмăр.
267. Эпир, эпир, эпирччĕ,
Эпир çĕр пин хусахчĕ,
Хусан хуçи хушнипе
Хурал тăма килтĕмĕр,
Самар хуçи хушнипе
Сапаланса пĕтрĕмĕр.

268. И эпирччĕ, эпирччĕ,
Эпир вуниккĕн пĕр хĕрччĕ;
Пĕр хăма çине пухăнтăмăр,
Çутăличчен салантăмăр.

## Çăлтăрçемпе тӳпе

269. Асатте çурчĕн маччи кăвак,
Маччи тулли çут мамак.
270. Асатте улăхĕ виçесĕр,
Сурăхĕсем хисепсĕр.

271. Кăвак шăналăкăн тăрри чăпар.
272. Шăналăкпа пăрçа сарнă: шăналăкне чĕркеймĕн, пăрçине çиеймĕн.
273. Асатте шăналăкĕ çинче пин-пин шăрçа.
274. Ахпӳрт [74] хирне ахах сапнă: куракансем пур, пухакансем çук.
275. Йĕтем тулли илем пĕрчи.
276. Кăвак тинĕс тулли кĕмĕл пулă.
277. Кăвак уйра çут кĕмĕл нумай.
278. Кăвак шăналăк çинче пин нухрат.
279. Çĕре хирĕç çĕр пин нухрат.
280. Улăх тулли утлă çар, пурте вутла выляççĕ.

## Çăлтăрсемпе уйăх

281. Асламас хирĕнче аслă кĕтӳ: выльăхĕсен шучĕ çук, кĕтӳçĕ пĕрре кăна.
282. Кăвак хирте пин сурăх, пин сурăха — пĕр кĕтӳç.
283. Хурамал [75] хирне хурсем тухĕç, хур сыхлама хуçи тухĕ.
284. Çаранĕ аслă, çарĕ йышлă, çарпуçĕ пĕрре.

285. Аслă хирте çар тăрать, вăта çĕрте — çар пуçĕ.
286. Аслă хирте акшар чулĕ, вăта çĕрте — арман чулĕ.
287. Елчĕк хирне енчĕк хунă, енчĕк тавра — вак укçа.
288. Йĕри тавра пашалу, варринче çăкăр.

289. Кăвак çитти саратăп,
Вĕтĕ шăрçа сапатăп,
Вĕтĕ шăрçа хушшине
Кĕмĕл ывăс хуратăп.

290. Нурăс[76] хирне нухрат сапнă, вăта çĕре тухъя хунă.
291. Шăналăк çине шăрçа сапнă, шăп варрине тухъя хунă.
292. Пĕр хуран салма, варринче çăмах.
293. Темеш[77] хирне тенкĕ сапнă, вăта çĕрте хутаççи выртать.
294. Явлăк çине ясмăк сапнă, вăта çĕрте турилкке.
295. Эпĕ чăпта сарăп, пăрçа акăп, варрине кулачă хурăп.
296. Пĕр çын хыçĕнчен пин çын пырать.
297. Пăлхар[78] хирне пăрçа сапнă, пăрça çинче хур çӳрет.
298. Улăхне виçмен, выльăхне шутламан, кĕтӳçĕ мăйракаллă.

299. Икçĕр утмăл вĕт кайăк,
Тĕменпеле пĕр кайăк.

## Çăлтăрсемпе хĕвел

300. Йĕтем çине пăрça сапрăм, Ахмат тухрĕ — пуçтарчĕ.
301. Ахпӳрт[79] хирне ахах сапрăм, Ахмат курчĕ—пуçтарчĕ.
302. Вирьял хирне вир акрăм, Виркка килчĕ — пуçтарчĕ.
303. Пăслăк[80] хирне пăрça сапрăм, Пăртта тухрĕ — пуçтарчĕ.
304. Туттай тухсан, çуттайсем çухалаççĕ.

## Çĕр

305. Çут тĕнчере мĕн мăнтăр?
306. Атте арчине çĕклеймĕн.
307. Халăх ури айĕнчен тухаймасть, пĕтĕм халăха тăрантарать.

## Çĕрпе пĕлĕт

308. Çĕрелле пăхрăм — хура куртăм, çӳлелле пăхрăм — кăвак куртăм.

## Çилпе çавраçил

309. Алăсăр, урасăр, алăк уçать.
310. Алăсăр-урасăр пӳрте кĕресшĕн чӳречерен шаккать.
311. Алăсăр-урасăр тусан тустарать.
312. Çунатсăр вĕçет, сăлтавсăр йĕрет.
313. Çӳлте вĕçет çунатсăр, çĕрте чупать урасăр.
314. Кайăк мар — вĕçет, йытă мар — вĕрет, ача мар — йĕрет.
315. Пĕвĕ çук, ури çук — пĕр вырăнта тăни çук; çуначĕ çук, çулĕ çук — çитсе курман çĕрĕ çук.
316. Утсăр урапа çулсăрах чупать, хăваласа çитме çук.
317. Тĕнчере пĕр лаша пур, ăна никам та тытса чараймĕ.
318. Пичче лашине тытса чараймăн.
319. Улать, çухăрать, хăй курăнмасть.
320. Илтме пур та — курма çук, туйма пур та — тытма çук.
321. Сăмса тавра çаврăнать, алăпа тытмалла мар.
322. Çинçе пилĕк çӳрен ут тĕнче тавра çаврăнать.
323. Тĕнче тăлăхĕ тĕнче тавра йĕрсе çӳрет.
324. Хир варринче хирĕлсе çӳрет, вăрмана кĕрсен — лăпланать.
325. Хун ачи хум кастарать.
326. Хирте йĕрет, мăрьере улать.
327. Чунсăр чупкăн тĕнче касать.
328. Чарусăр ача чартак çинче макăрать.
329. Пурне те чуптуса тухать.
330. Асатте урапи çулсăр та кусать.
331. Аçтаха урапи çулпа та кусать, çулсăр та кусать.
332. Йĕрĕх урапи хыçĕнчен йĕр юлмасть.
333. Çеçенхирте туман урапа кусать.
334. Тухатмăш туйĕ тусан çавăрать.
335. Улăп урапи уй тăрăх кусать.
336. Урнă усал урапи улăх урлă кусса килет.

## Çумăр

337. Мăн асаттен шыв çӳпçи тӳнсе кайнă.
338. Мăн асатте Мăнтăр[81] хирне шыв сапать.

339. Яра пар, яра пар,
Ярапине хама пар,
Ялсем çине, хирсем çине,
Янкăр пичче, парне пар.

340. Пай-пай Паймулла,
Пик-пик Пикмулла,
Ана çине, çаран çине
Шыв юхтарать пĕр мулла.

341. Çинхетер çипписем çавхатер çинçе.
342. Хура кашма çине çут кĕмĕл тăкăнать.
343. Сывлăшран шыв юхать.
344. Туртăп ярăп — тĕнчипех тухăп.
345. Хăй вăрăм, çинçе, курăк çинче курăнмасть.
346. Куççăр сурăх куççульне юхтарать.
347. Куççăр пике куççульпе йĕрет.
348. Ашапатман[82] вĕççе килет, акшар чулĕ тăкса килет.
349. Аçтăрхантан аçтаха килĕ, аçа чулĕ сапса килĕ.
350. Турхан çарĕ килет те тулăх хире тустарать.
351. Асанне шăрçине никам та пуçтармасть.
352. Мăн асатте миххинчен шурă пăрçа тăкăнать.
353. Паймула пăрçа акать, пăрçи çиме юрăхсăр.

## Çумăр пĕлĕчĕ

354. Кăвак хирте мамăк куписем выртаççĕ.
355. Асаттен шур сурăхĕсем ялан çӳлти улăхра.
356. Мăнтăр[83] хирĕнче мăнтăр сурăхĕсем çӳреççĕ.
357. Хĕвелтен вăйлă, çилтен йăваш.
358. Каяс çĕрĕ те çук, килес çĕрĕ те çук, пĕр вырăнта тăма та халĕ çук.
359. Мана сынсем кĕтеççĕ, эп килнине курсанах, пурте тарса пĕтеççĕ.
360. Çунатсăр вĕçет, урасăр чупать.
361. Юхăмĕ çук — юхать, çуначĕ çук — вĕçет, хăяматран тухать, мур тĕпне çитет.
362. Юхма[84] çийĕн юхать, Шăхаль[85] çийĕн шăвать, Ишек[86] урлă иртет, Выçли[87] урлă вĕçет, ăçта кайнине хăй те пĕлмест.
363. Юлан хуса çитеймест, патша та чараймасть.
364. Тӳре хĕрĕ тӳпере тĕкĕнмесĕр макăрать.
365. Ури çук — çӳрет, куçĕ çук — йĕрет.
366. Хура халатлă пике хурланмасăр макăрать.

## Çумăр, çĕр, йывăç-курăк

367. Пĕри тăкать, тепри ĕçет, виççĕмĕшĕ ӳсет.
368. Пĕри юхтарса тăрать, тепри пуçтарса тăрать, виççĕмĕш çитĕнсе пырать.
369. Çăван çăвать, ĕçен ĕçет, ӳсен ӳсет.

370. Янкăр явать — парне парать, Явăш хирĕ хунав ярать.
371. Йĕпреç хĕрĕ йĕрсе тăрĕ, Юхма хĕрĕ юрса тăрĕ, Пухтел[88] хĕрĕ пухса тăрĕ, Ӳрмел[89] хĕрĕ ӳссе тăрĕ.

## Çу (çулла)

372. Пĕри калать: çĕрсене кĕскетĕп, кунсене вăрăмлатăп, тет.
373. Хĕвекле çимĕç пĕçерет, Хĕлимун çисе пĕтерет.

## Çулталăк, уйăх, эрне, кун

374. Йĕтем çинче пĕр кăшăл: вуникĕ хут сăвăраççĕ, тăватă хут авăсаççĕ, çичĕ хут аллаççĕ, пĕр пăрça тухать.
375. Пĕр капанра виççĕр утмăл пилĕк кĕлте.
376. Çеçенхир варринче ватă юман, ватă юманăн вуникĕ турат, вуникĕ туратра тăватшар йăва, тăватшар йăвара çичшер çăмарта.
377. Пĕр наратăн вуникĕ турат, кашни туратра тăватшар йăва, кашни йăвара çичшер çăмарта, çăмартисем çурмалла: çурри шурă, çурри хура.
378. Кантюк катинче катăркас ларать, çав катăркасăн вуникĕ турат, кашни турат çинче тăватшар йăва, кашни йăвара çичшер çăмарта.
379. Мăн асатте картишĕнче вуникĕ юпа, кашни юпа çинче тăватшарункă, кашни ункăра çичшер йĕвен.
380. Сад ларать: садра вуникĕ лекке, леккинче тăватă йăран, йăранĕнче çичĕ купăста.
381. Хурама турат виççĕр утмăл пилĕк юплĕ.
382. Вуникĕ çăмаха — пĕр кăшкар.
383. Асатте пахчинче вуникĕ улмуççи, кашни улмуççире тăватшар турат, кашни турат çинче çичшер панулми.
384. Вуникĕ ăмăрткайăк, аллă икĕ чана, виççĕр утмăл пилĕк шăнкăрчă пĕр çăмарта йăтса кайнă, тет.
385. Виççĕр утмăл пилĕк шăнкăрчă, вуникĕ чана, çичĕ куккук пĕр çăмарта тунă.
386. Виççĕр утмăл пилĕк шăнкăрчă, аллă икĕ чавка, вуникĕ кăвакарчăн пĕр çăмарта тунă.
387. Виç уйăх — мучи, виç уйăх — сар хĕр, виç уйăх — çил ачи, виç уйăх — чикан.

## Çулталăк хушши

388. Асаттен тăватă сий: виçĕ тăлăп, виçĕ кĕрĕк, виçĕ сăхман, виçĕ чаппан.

389. Пӗр йӑвара виҫӗ курак, виҫӗ куккук, виҫӗ карӑш тата виҫӗ кӑсӑя.
390. Пӗр ҫулпа тӑваттӑн утаҫҫӗ: Ҫурпике, Ҫупике, Кӗрпике тата Хӗлпике.

## Ҫуркунне

391. Йӑлтӑр-ялтӑр, шӑнкӑр-шӑнкӑр, симӗс ешӗл, вӗл-вӗл-вӗл.
392. Ҫулленех пӗр пике килет, ҫутӑ кунсем илсе килет.
393. Ылтӑн хӑма уҫӑлӗ, хурт-кӑпшанкӑ тапранӗ.
394. Малтан ӑшӑ хыпарӗ килет, каярах хӑйҫи килет.

## Тӑман

395. Ах, ах, ахӑм карти хыҫӗнче лӗпсӗр-лӗпсӗр хӗр ташлать.

396. Пи пушмак, пи пушмак,
Пинер [90] карти хыҫӗнче
Лӗпсӗр-лӗпсӗр упа ташлать.

397. Тулта тухатмӑш пур: вӗрет, сурать, алхасать, урӑмсурӑм тулашать.
398. Арҫури пек ҫухӑрать, аҫтаха пек ахӑрать.
399. Уравӑш [91] хирӗнче урнӑ упа ташлать.
400. Хуралт хыҫӗнче хӗл мучи ташлать.
401. Асатте шӑпӑрӗ ҫул шӑлать.
402. Шурӑ хирте шур куян чупать, йӗрӗ курӑнмасть.
403. Юр ҫийӗпе юс чупать — йӗр хӑварни палӑрмасть.
404. Ҫеҫенхирте ула ӗне макӑрать.
405. Тӗкме витӗр тӗк тухать.
406. Алӑсӑр-урасӑр ҫынна вӗлерӗ.
407. Алӑк хыҫӗнче Алтатти алхасать.
408. Алӑк хыҫӗнче Тянка ташлать.
409. Аналалла та Энтри, тӑвалла та Энтри.

## Тӑм

410. Уйӑх курать, хӗвел илет.

411. Чупса-чупса пынӑ чух
Кӗмӗл ҫӗррӗм тухрӗ ӳкрӗ,
Ана уйӑх курчӗ, хӗвел илчӗ.

## Тӗнче

412. Асатте ҫурчӗ нихӑҫан та ҫӗрес ҫук.
413. Пӗр авалхи кермен пур, унӑн вӗҫне-хӗрне никам та пӗлсе пӗтереймӗ.
414. Хушши хӗвеллӗ, хӗрри тӗтреллӗ.

## Тӗтӗм

415. Ашшӗ аттине тӑхӑниччен ывӑлӗ пӗлӗт патне ҫитнӗ.
416. Ашшӗ атӑ тӑхӑниччен ывӑлӗ Сарая [92] ҫитет.
417. Ашшӗ атӑ тӑхӑниччен ывӑлӗ Самара (е Саратова) ҫитет.
418. Ашшӗ ура сыриччен ывӑлӗ Хусана ҫитет.
419. Ашшӗ атӑ тӑхӑниччен ывӑлӗ Хусана ҫитет.
420. Кӗрӳшӗ кӗрӗк тӑхӑниччен хунӗ Хусана ҫитнӗ.
421. Амӑшӗ урай сӗрсе тухиччен ашшӗ Хусана кайса килнӗ.
422. Ашшӗ Аксуран [93] тухиччен ывӑлӗ Хусана ҫитнӗ.
423. Амӑшӗ тухиччен ывӑлӗ Мускава ҫитнӗ.
424. Ашшӗ урине сыриччен ывӑлӗ Мускава кайса килет.
425. Урмай ура сыриччен мучи Мускава ҫитет.
426. Шӑлнӗ Хусана ҫитиччен пиччӗш Мускава ҫитнӗ.
427. Ури ҫук, тӗк тӑрать.
428. Кӑмака умӗнче хура качака ташлӗ.
429. Алӑсӑр-урасӑр пӗлӗте хӑпарӗ.
430. Ени картара, хӳри тӳпере.
431. Хӑй сентре пек, выртма ҫук.

## Тӗтӗмпе мӑрье

432. Мӗн каран, хура ҫӑвар? Кама куран, хура ҫӑвар?
433. Аҫта каян, мӑн сӑмса? — Эпӗ те пырап, кӑвак чаппан.
434. Аҫта каян, хура сӑхман? — Ан чӗн мана, мӑн ҫӑвар!
435. Аҫта каян, кӑвак сухал? — Сана мӗн ӗҫ, хура сухал.
436. Аҫта каян, кӑвак сухал? — Ан кӗрле, мӑн сӑмса.
437. Ан макӑр, Макар — мӑн ҫӑвар! — Ан пӑх, хура пит, ман ҫине!

## Тӗтре

438. Аякран пӑхрӑм та — шурӑ ҫурт, ҫывӑхран пӑхрӑм та — ним те ҫук.
439. Катаран пӑхрӑм та — ката вӑрман, патне пытӑм — пай вӑрман.

440. Катаран курăп пайăр хура, патĕнчен курăп пĕр хура, хулă тесе хуçаймăп, курăк тесе татаймăп.
441. Катаран пăхрăм — пайăр мар, хуçма тăрсан — хулă мар.
442. Уйра урасăр кĕлет пур.
443. Уйра тĕкĕсĕр кĕлет ларĕ.
444. Уй варринче уратасăр-мĕнсĕр кĕлет ларĕ: ним тусан та тапратмалли çук, тапранас чух хăех тапранать.
445. Тинĕс урлă лĕпсĕр-лĕпсĕр упа каçĕ.
446. Хир варринче шур кĕтӳ çӳрет.
447. Вут хутмасăр тĕтĕм тухĕ.

## Тул çутăлни

448. Тимĕр хапха уçăлчĕ.
449. Ылтăн хăма çурăлĕ (уçăлĕ), хурт-кăпшанкă тапранĕ.
450. Ылтăн каска йăванĕ, çĕр хурчĕ тапранĕ.
451. Ылтăн чаршав уçăлĕ, хурт-кăпшанкă тапранĕ.
452. Ылтăн алăк уçăлчĕ, хурт-кăпшанкă тапранчĕ.
453. Хусантан указ килмесĕр, тимĕр хапха уçăлмасть.
454. Хусантан саккун килмесĕр, хура чаршав уçăлмасть.
455. Хусантан саккун килмесĕр, хăма çурăлмасть.
456. Хусантан указ килмесĕр, çутă пукан (кире пуканĕ) çурăлмĕ.
457. Хусантан хут килет те, тимĕр хăма çурăлать.
458. Алтăр урлă кăвак лаша пăхать.
459. Ампар урлă кăвак лаша пăхать.
460. Аслăк урлă ик шур лаша пăхаççĕ.
461. Асаттен кăвак лаши катаранах курăнать.
462. Айăмпийĕн Питимĕр, пайтах тăрсан — Паймулла.
463. Шăлтлатмăп, пăтлатмăп, йыт вĕртмĕп.

## Тумлам

464. Алăк умĕнче автан ташлать.
465. Пӳрт умĕнче Чиперпи ташлать.
466. Алăсăр-урасăр алтăр алтать.
467. Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать.
468. Çунатсăр чавка çурт çумĕнче вак чавать.
469. Уксах салтак пус чавать.
470. Шăпăрлан чĕппин сăмси те çук, çапах шăтăк шăтарать.

471. Шулап тăрăх шулли [94] чупать;
Шулап хĕрне çитсессĕн,
**Çутă мерчен юхтарать.**

472. Янкăр-янкăр ярка ячĕ,
Хура хăмăр парне пачĕ.
Таппи-таппи ташша ячĕ,
Ташă вĕçĕ алтăр пулчĕ.

473. Алтрăм, алтрăм, эмел тупрăм,
Алтса çитсен, кĕмĕл тупрăм,
Арăш-пирĕш парне патăм.

474. Асанне куççулĕ пат-пат-пат!
475. Тумиле хĕрĕ туй хыççăн йĕрĕ.
476. Пӳрт умĕнче те чап-чап, кĕлет умĕнче те чап-чап.
477. Шиппин-шеппин, хлепит-купит.
478. Çумăр хыççăн панч! панч!

## Тӳпе

479. Алпа туман чатăр пур,
Курман пулсан — тухса кур.

480. Асатте маччи каштасăр.
481. Асатте маччине кăвак сăрпа сăрланă.
482. Мăн асаттен калпакĕ ылтăн кĕмĕл шăрçаллă.
483. Мăнтăр çинче мăн калпак.
484. Пин халăхăн пĕр сунчăк.
485. Кăвак сăнлă мăн хуран тĕнче çине ӳпленнĕ.
486. Пай[95] мучи калпакĕ пайăр кăвак.
487. Тĕрлĕ çитти çӳлте выртĕ.

## Хĕвел

488. Ав, çӳлте пирĕн асатте вут чĕртнĕ.
489. Асатте кăмаки хутмасăрах хĕрӳллĕ.
490. Асанне ывăсĕ пĕтĕм çĕре çутатать.
491. Пĕлĕт тăрăх хĕрлĕ çăмха чупать.
492. Анлă улăх çийĕнче ылтăн çăмха курăнчĕ.
493. Кăвак кавир тăрăх ылтăн панулми кустарăп.
494. Ылтăн кустăрма тĕнче тавра çаврăнать.
495. Кăвак уйра ылтăн кустăрма.
496. Кăвак шăналăкăн ылтăн саплăк.
497. Ялтăрма ялтăркки ял çине килсе ӳкрĕ.
498. Вăрман урлă сар каччă курăнĕ.
499. Пĕлĕт çинче илемлĕ хĕр çӳрет.
500. Чипер хĕр пысăк уйпа çӳрет.
501. Сарпике кулли тĕнче тулли.
502. Илемпи кулать, тĕнче тулать.

503. Чи-чи Чиперпи, ҫав Чиперпи кулнӑ чух чиперленет ҫут тӗнче.
504. Пурте ӑна юратаҫҫӗ, куҫран пӑхма вӑтанаҫҫӗ.
505. Йӑлт пӑхать те йӑл кулать, кӳлӗ ҫинче вӑй вылять.
506. Ялтӑр пӑхӑп, йӑл кулӑп.
507. Хитререн хитре, ҫӳллӗрен ҫӳллӗ.
508. Вӑрмантан ҫӳлте, кун ҫутинчен ҫутӑ.
509. Куҫӗ ҫук — пӑхать, вучӗ ҫук — ҫунать.
510. Вутсӑрах ҫунать, ҫунатсӑрах вӗҫет, урасӑрах чупать.
511. Кӑнтӑрлаччен вӑкӑр кӳлсе каять, кӑнтӑрларан вара мулкачпа каять.
512. Каҫа хирӗҫ пытанать, ирпе каллех тупӑнать.
513. Хура чатӑр уҫӑлмасӑр, чипер пике курӑнмасть.
514. Асатте хапхи уҫӑлчӗ, асанне ҫӑмхи курӑнчӗ.
515. Кӑвак арча уҫӑлчӗ, ылтӑн ҫӑмха курӑнчӗ.
516. Хусантан ылтӑн турпас[96] килсе ӳкӗ.

## Хӗвел анни

517. Анаткас хыҫне ылтӑн ҫӑмха анса ларчӗ.
518. Юман кутне юн тӑкнӑ.
519. Юманлӑхра юн тапать.

## Хӗвел ҫути

520. Карӑнтӑк витӗр ылтӑн туя кӗрет.
521. Чӳречерен ылтӑн кӗвенте кӗрет.
522. Ылтӑн ҫӑмхан ылтӑн ҫиппи чӳрече витӗр карӑнать.
523. Пӳрте вӑрӑм вырӑс кӗрет.
524. Вӑрӑм вырӑсӑн вӑрӑм туйи чӳречерен кӗрех кайрӗ.
525. Сала урлӑ, хула урлӑ салам ярать Саламни.
526. Хушка ӗне хушӑкран пӑхать.
527. Шӑлатӑп-шӑлатӑп — шӑлса кӑлараймастӑп, йӑтатӑп-йӑтатӑп — йӑтса кӑлараймастӑп.
528. Айҫук, тайҫук, тытса пӑхма май ҫук.

## Уйӑх

529. Ҫӳллӗ ҫӗрте ҫурла пур, ҫӳллӗ ҫын та илес ҫук.
530. Асатте ҫурли ҫап-ҫутӑ, алла тӑсса илме ҫук.
531. Ӗҫҫи пулмасан та, асатте ҫурли ҫап-ҫутӑ.
532. Кӗмӗл ҫурлан аври ҫук.
533. Кӗтеснер[97] ҫинче кӗмӗл ҫурла.
534. Асанне пӳрчӗ умӗнче ҫур ҫӑкӑр ҫакӑнса тӑрать; йытӑсем вӗреҫҫӗ, хыпса илеймеҫҫӗ.

535. Аслăк çинче çур çăкăр выртать.
536. Çур çăкăрăм çурт çинче, касса илме ал çитмест.
537. Ампар урлă çур çăкăр ывтăп.
538. Аслăк çинче Асламас кулачи.
539. Лаç тăрринче пĕр чăкăт.
540. Аслă хирте кĕмĕл кустăрма.
541. Йывăç тăрринче кĕмĕл çĕрĕ.
542. Пирĕн пуç тĕлĕнче Пинерпи тухйи.
543. Кăвак çивитти çинче кĕмĕл турилкке.
544. Кăвак хирте кĕмĕл çатма.
545. Кăвак шăналăкăн кĕмĕл саплăк.
546. Кĕмĕл ывăс тӳпере çакăнса тăрать.
547. Уй тӳпинче уйран ывси.
548. Шурча тĕлĕнче шур чашăк.
549. Кĕпĕрне çинче кĕмĕл чаплашка.
550. Малтан — çурла, кайран — ывăс, юлашкинчен — катăк çатма.

551. Пĕрре пăхрăм — çурлаччĕ,
Тепре пăхрăм — çăмхаччĕ,
Тата пăхрăм — çухалчĕ.

552. Çут кӳлĕре çут кăвакал ишет.
553. Шур Атăл варринче шур акăш ишсе çӳрет.
554. Кĕсменсĕр ишет, çунатсăр вĕçет, тымарсăр ӳсет, çимесĕр пĕтет.
555. Хушка ут вăрман урлă пăхать.
556. Хушăлка [98] хирĕнче хушка пуçлă ут çӳрет.
557. Авалхи çурт çинче Айпăлат пур.
558. Кăвак уйра Уйпике çӳрет.
559. Уй тӳпинче Уйпике, кĕмĕл тухъя — пуçĕнче.
560. Пушă хирте хĕрлĕ хĕр çӳрет.
561. Юпи çук, хунарĕ çунать.
562. Кăнтăрла çывăрать, каç пăхать, ир вилет.
563. Тулать-тулать, тулса çитсен — катăлма пуçлать.
564. Çути пур, ăшши çук.
565. Пĕр кĕтӳç пин сурăх пăхать.

## Уйăх катăлни

566. Хăрăк йывăç тăрринче кайăк ларать: туртрăм-туртрăм — антартăм, пусрăм çĕçĕсĕр, пĕçертĕм вутсăр, çирĕм шăлсăр.

## Уйăх çути

567. Чӳречерен йĕс кĕвентепе чышаççĕ.
568. Чӳрече витĕр икĕ йĕс кĕвенте ывтăп.
569. Алăсăр-урасăр, ту-сăрт урлă каçса çӳрет.
570. Алăсăр-урасăр, хушăкран кĕрет.
571. Хушка çамкалли хушăк витĕр пăхма юратать.
572. Якуркка чӳречинчен Укахви пăхать.

## Уйăхпа хĕвел

573. Ылтăн кайăк кун кунлать, кĕмĕл кайăк çĕр çĕрлет.
574. Этремен[99] хирĕнче икĕ кайăк: пĕри вĕçсе килсен, тепри каять.
575. Пĕр патшан икĕ хуралçă: пĕри кăнтăрла хураллать, тепри каçхине хураллать.
576. Ылтăнпала Кĕмĕлпи ылмашăнса тăраççĕ: пĕри килсе кун кунлать, тепри килсе çĕр çĕрлет.
577. Сар ачи килет — сар хĕрĕ пытанать, сар хĕрĕ килет — сар ачи пытанать.
578. Хĕветĕр пур та — Укахви çук, Укахви пур та — Хĕветĕр çук.
579. Илемлĕ хĕр Илемпи ирпе килет те каçпа килне ăсанать, хăй выранне йăмăкне хăварать.
580. Аппăшĕ кун каçипе хăнара, йăмăкĕ çĕр каçипе хăнара.
581. Аппăшĕ хăнана килет, йăмăкĕ тарса пытанать.
582. Аппăшĕ çутлăха юратать, йăмăкĕ сĕмлĕхе юратать.
583. Ирентей пичче ир килет те каç каять, хăй выранне вăртахне хăварать.
584. Асламас икĕ хĕр ӳстернĕ: пĕри ылтăн тухъяпа, тепри кĕмĕл тухъяпа.
585. Ылтăн сулă çухалать, кĕмĕл алка тупăнать.
586. Кăнтăрла ылтăн калпак, каçпа кĕмĕл тӳпеттей.
587. Хĕветĕр пичче — ылтăн пуç, Укахви инке — кĕмĕл пуç.
588. Аслапин икĕ хĕр пур: пĕри ăшшăн пăхать, тепри сивĕн пăхать.
589. Ылтăн ывăса кăнтăрла тыткалăп, кĕмĕл ывăса каçхине тыткалăп.

590. Пĕве-пĕве пĕвешки,
Пĕве хыçĕнче ерĕшки;
Кăвак пĕлĕт айĕнчен
Пăхса выртать упăшки.
591. Ампарăшки — ярăшки,
Кулса выртать упăшки.

## Хӗвел, шыв, йывӑҫ, ҫӗр

592. Пӗри ҫунать хӗмленсе, тепри чупать кӗрлесе, тепри ларать тӗлӗнсе, тепри выртать тӗлӗрсе.

## Хӗвел, шыв, ҫил, ахрӑм

593. Вутсӑрри хӗртет, урасӑрри чупать, ҫунатсӑрри вӗҫет, чӗлхесӗрри калаҫать.

## Хӗл

594. Асаттен пӗр хӗрӗ шурӑ куна юрататъ.
595. Йӑкӑр-якӑр, пӑлтӑр-палтӑр, кӑвак шурӑ, хаяр куҫ.
596. Малтан сив хыпарӗ килет, каярах хӑйҫи килет.
597. Ҫулленех пӗр мучи килет, шурӑ кунсем илсе килет.
598. Хӗлӗп хӗрӗ ларма килет, шур кашмине илсе килет.

## Чул

599. Шыв ҫӗклеймӗ, ҫӗр ҫӗклӗ.
600. Муклашка, таклашка, ниҫтан тытса туртаймӑн.

## Чул, курӑк, шыв

601. Пӗри наян, тепри ӳсӗр, тепри чупкӑн.

## Эрне

602. Ҫичӗ тӑванӑн пӗр йӑмӑк.
603. Ҫичӗ тӑван пӗрин хыҫҫӑн тепри хӑвалаҫҫӗ.
604. Ҫичӗ хунав пӗр тӗпрен.
605. Пӗр каштара ҫичӗ автан.
606. Пӗр ампарӑн ҫичӗ алӑк.
607. Ҫинук инкен ҫичӗ хӗр, кашни кун пӗр хӗрӗ хӑнана килсе ҫӳрет.
608. Пӗр йӑвара ҫич ҫӑмарта: улттӑшӗ шурӑ, ҫиччӗмӗшӗ чӑпар.
609. Ҫичӗ листаллӑ кӗнекен улттӑшӗ ахаль листа, ҫиччӗмӗшӗ ылтӑн листа.
610. Асаннен ҫичӗ тутӑр: улттӑшӗ шурӑ тутӑр, ҫиччӗмӗш хӗрлӗ тутӑр.

## Юр

611. Алпа туман шур ҫитти ҫӗр питне витсе хучӗ.
612. Вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн тӗнчене шур пир саратӑп.

613. Хура çĕре шур пĕркенчĕк витнĕ.
614. Хура кашма çине шур кашма.
615. Хура çĕр çине шурă мамăк витĕнет.
616. Асанне шупăрĕ пĕтĕм çĕре хупларĕ.
617. Аслă çĕр çине мамăк тӳшек сарăлĕ.
618. Тусем çине, хирсем çине сарса хунă шур тӳшек.
619. Ылтăн хыпар килсессĕн, кĕмĕл сарăм тапранать.
620. Эпĕ тусан пек вĕтĕ, çапах çĕре хуплатăп; эп шывран çуралнă, шыва та хамах çуратап; мамăкла уйра выртатăп, сахăрла хĕвел çутинче йăлтăртататăп.
621. Аçталла пăхатăн, унта шурă, ниçта та хура вырăн çук.
622. Пӳрт хыçĕнче кӳпнĕ сурăх выртать.
623. Укушка умĕнче шур упа выртать.
624. Карта тăрăх канти чупать.
625. Ушкăн-ушкăн куян чупать.
626. Тулта купа, пӳртре шыв.
627. Вĕçет — чĕнмест, выртать — чĕнмест, вилет — кĕрлет, чарна пĕлмест.
628. Кĕр килет, çур каять.
629. Хĕлле ăшалать, çуркунне шăранать, çулла вилет, кĕркунне чĕрĕлет.
630. Упăшкам пуçĕ кăпăш-кăпăш.
631. Арчи кивĕ, хуппи çĕнĕ.

## Юр йăлтăркки

632. Мамăк тӳшек çинче ĕнчĕ пĕрчи выртĕ.
633. Хывăх ăшĕнче ĕнчĕ пĕрчĕ.

634. Йăли-йăли йăлми чечек,
Ире-каçа пĕлми чечек.
635. Пĕчĕк-пĕчĕк çăраççи
Ӳкрĕ-ӳкрĕ — çухалчĕ;
Уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ.

636. Мами тенки — ик тенкĕ, пуçтарса та çитереймĕн.
637. Вуçми тенки вуç выртать, илме тăрсан — çук пулать.
638. Куçпа курăн та алпа тытаймăн.

## Юханшыв

639. Аласăр-урасăр анаталла çул хывать.
640. Чĕлпĕрсĕрех чупать, çилсĕрех янрать.
641. Асатте çулĕ — кăвак çул, çуран утса тухас çук.
642. Вăрăм кăвак лашана нимле тытса чарма çук.

643. Вĕçрен чупать, канса курмасть.
644. Çĕрĕн-кунĕн çĕлен шăвать.
645. Çак тĕнчере мĕн çывăрмасть?
646. Тĕрмит-тĕрмит, сикки тĕрмит.
647. Утăп — ура вырăнĕ пулмĕ, касăп — турпас пулмĕ.
648. Уйсем урлă, хирсем урлă улах ларма хĕр чупать.
649. Хĕлле çыврать, çулла шавлать.
650. Шаккап-шаккап — сасă пулмасть, утап-утап — йĕр пулмасть.
651. Юхать-юхать — юхса пĕтеймест, чупать-чупать — чупса çитеймест.

## Юханшывпа çырансем

652. Икĕ килĕнтеш юнашар выртаççĕ, хушшинче ют хĕр.
653. Икĕ тăван юлаççĕ, çичĕ ючĕ килневаскать.
654. Юпах тиха юртса каять, туртисем выртса юлаççĕ.
655. Лаши туртать, çуни шумасть.
656. Тур лаша юртса пырать, турти тăрса юлать.
657. Икĕ турти тĕк тăрать, хура çăрхи çăрхалать.
658. Юхма хĕрĕ юхса каять, ашшĕ-амăш тăрса юлать.
659. Ик енче Иккасси [100] хĕрĕ, вăта çĕрте Вăрăмпуç [101] хĕрĕ.
660. Юхин хĕр юхтарĕ, çĕклеттер хĕр çаклатĕ.

## Юханшыв, çаран, хăмăш

661. Выртан выртать, тăран тăрать, юхин юхать — таçта васкать.
662. Пĕри чупать, тепри выртать, виççĕмĕшĕ пуççапать.
663. Пĕри чупса çÿреме юратать, тепри канса выртма юратать, виççĕмĕшĕ хумханса ларма юратать.
664. Виçĕ пĕртăван пур, пĕри калать: чупас, тет; тепри калать: выртас, тет; виççĕмĕш калать: сулланса ларас, тет.

## Юханшыв, чул, хăмăш

665. Пĕри калать: каяр, тет; тепри калать: юлар, тет; виççĕмĕш калать: ара, тет, апла та, капла та юрĕ, тет.
666. Пĕри калать: атьăр тăрар, тет; тепри калать: атьăр чупар, тет; виççĕмĕш калать: атьăр йĕпенер, тет.

## ЙЫВАҪ-КУРАК

### Авăс

667. Ухмах хулти çатăлти.
668. Лявук арăм çатăлти.

### Вăрман

669. Çулла тумланать, хĕлле пăрахать.
670. Çулла симĕс, хĕлле çара.

### Вĕлтĕрен

671. Карта витĕр кăшкăрать.
672. Çатан витĕр кипке парать.
673. Вут пек пĕçерет.
674. Хăй вут мар, çапах та пулин вĕтелет.
675. Шăтан куштан, прати куштан.

### Вĕрене

676. Çулла симĕс хыс тăхăнать, кĕркунне сарă кĕрĕк тăхăнать.

### Йăмра

677. Вăрт-вăрт, вăртан килен, нимче хули Микули.

### Йĕкел

678. Пĕр юмана икĕ çуркам тăвăп — икĕ такана тăвăп.
679. Пĕр юман касăп та икĕ такана кăларăп, икĕ пулене тăвăп.
680. Путинке кутамкки пуçхĕрлĕ.
681. Энтри пĕрни пуçхĕрлĕ.
682. Салтак — сакайне, калпак — хыççăн.
683. Салтакĕ — сакайне, шлепки çӳле тăрса юлчĕ.
684. Тутарĕ сикет, калпакки юлать.
685. Кам хăйпе пĕрле пӳртне сĕтĕрет?
686. Мăн хуранăн пăтти йӳçĕ.

### Йĕкелпе мăйăр

687. Çпирка çĕлĕкпе, Туши такмакпа.

## Йывăç

688. Çӳлелле çĕр юп, аялалла çĕр юп, вăти çĕрĕнче пĕрре.
689. Пĕр салтакăн пин алă, пин ура.

## Йывăç варри

690. Йывăçпа таппа-тан, уйăхпа хĕвеле курăнмасть.

## Катăркас çырли

691. Шалта тимĕр, тулта нимĕр.

## Кăмпа

692. Пĕчĕкçеççĕ паттăр
Çĕр витĕр тухрĕ-тухрĕ,
Хĕрлĕ çĕлĕк тăхăнчĕ.
693. Пĕчĕкскер, хитрескер,
Çĕр мăкăртса тухнăскер,
Пурçăн тутăр çыхнăскер.

694. Çĕр ăшĕнчен шлепке тăхăнса тухать.

## Куршанак

695. Шак-шак юман, шак юман,
Шак юманта шак турат,
Шак туратра шак йĕкел.
696. Тупи-тупи тупиçĕм,
Тупи ури хуçăкçăм,
Арăш-пирĕш кĕрӳçĕм,
Пĕр çыртăп та пĕр ямăп.
697. Чипи-чипи, чипиçĕм,
Чипи-хӳри çариçĕм;
Исепкеçĕм кĕрӳçĕм,
Пĕр тытăп та пĕр ямăп.

698. Пĕр юпа çинче пин шăрт, патне пыма çук — сăхаççĕ.
699. Пĕр юпа тăрринче хĕрĕх кĕлте ларать.
700. Хитре Хĕрккен хĕрĕх муркка.
701. Çĕнĕ Мертлĕре [102] çитмĕл кукша.
702. Эп тивместĕп, хăй тивет.
703. Ан тив, Тимуххи! Тивмен çынпа мĕн тăван?
704. Ан тĕкĕн, Тимухха, тивмен çĕртен тивертĕп.

705. Куштан, сана тĕкĕнместĕп, тĕкĕнсессĕн — уйăрăлмастăп.
706. Тивмен çĕртен тивертĕп.
707. Çыпăçать, çыпăçать Спиритун Элекçи кĕрӳшĕ.
708. Юнсăр, чунсăр, çынпаварлă.

## Мăйăр

709. Ашĕ нимĕр, тулĕ тимĕр.
710. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă.
711. Сăк-сакăлта, сакăлта, сакăрвунă сакăлта.
712. Авкаланать, хуçкаланать, тĕкли ăшĕнчен якли тухать.
713. Тĕкли, тĕкли ăшĕнчен яки, яки ăшĕнчен тутли.
714. Тимĕрĕ тулта, çимĕçĕ шалта.
715. Пĕчĕк хуранта тутлă пăтă пиçĕ.
716. Сап-сар тиек, сар тиек, никам та ытарас çук.

717. Ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ,
Тĕм хушшинче курăнчĕ,
Алран алла кусса кайрĕ,
Шăл хушшине пырса лекрĕ.

## Мăйăр курланки

718. Пĕр сар ачан çичĕ хăлха.
719. Хусан тиек, сар тиек, ӳпне выртса улталать.
720. Хусан турпас — сар турпас, ӳпне выртса астарать.

## Палан

721. Атăл хĕрринче ахах шăрçи ларĕ.
722. Атăл урлă ахах куртăм.
723. Юнĕ пур та, чунĕ çук.

## Пĕрлĕхен

724. Юмми юман, туппи селен.

## Пилеш

725. Юплĕ-юплĕ чĕрĕ йывăç çинче мерчен сапаки çакăнса тăрать.
726. Юплĕ-юплĕ чĕрĕ йывăç çинче чĕрĕ аш çакăнса тăрать.
727. Пăхма хитре, çиме йӳçĕ.
728. Çулçăллă, çупкăллă, теçеткеллĕ тӳмеллĕ.

## Пиçен

729. Ан тив, ан тив, Тимухха, тивмен çĕртен тивертен.
730. Эп тивместĕп ăна, хăй тивет.

731. Ипикăм-тупикăм,
Тупан ури хуçăкăм,
Исенекĕм-варакăм,
Курăк çине пусаймăп.

732. Чиркӳ тăрăллă, шуйттан чĕрнеллĕ.
733. Иштин-куштан, пăрати куштан.

## Пухра

734. Уйра ыхра килли ларать.
735. Уйра тăвар килли ларать.

## Сарана

736. Чипер-чипер кайăксем хĕл хĕллеме кайĕç, ылтăн çăмартисем тăра юлĕç.
737. Хĕл-хĕл кайăк, хĕл кайăк, хĕл хĕллесе кайсар-и *, ылтăн-кĕмĕл çăмарти йăвине тăрса юлсар-и? **
738. Алтрăм-алтрăм, алма тупрăм, алтса çитсен, кĕмĕл тупрăм.

## Çăка

739. Вăрманта — çӳрен, çулта — хушка, киле килсен — кăвак.
740. Вăрманта — турă, çула тухсан — хушка, киле кĕрсен — тимĕр кăвак.
741. Тулта — турă, шалта — шурă.

## Çĕмĕрт

742. Вăрман урлă хура каччă пăхса ларать.
743. Вăрман хĕрринче хура каччăм кăшкăрать.
744. Яп-яп ярапаллă, писмен кутлă, пăталлă.
745. Ярăп-ярăп, яра парăп, исмелĕп те тӳмелĕп.
746. Ю-у! кайăп, çӳле кайăп, писмелĕп те тӳмелĕп.
747. Ярăп-ярăп ярапи, пиçмен тĕпне тӳмелĕп.
748. Тулашĕ нимĕр, шалашĕ тимĕр.

* Кайрĕ-и?

** Юлчĕ-и?

749. Варри тимĕр, тулашĕ нимĕр.
750. Ашĕ тимĕр, çийĕ нимĕр.
751. Йăлтăр-йăлтăр хура шăрçа.
752. Малтан шурă, унтан симĕс, унтан хура.

## Çĕр çырли

753. Пĕчĕкиç Пикенки кунĕн-çĕрĕн пуççапса ларать.
754. Пĕчĕкиç Пиняка пуççапа-пуççапа сăра ĕçтерет.
755. Пĕчĕк Пимпи пуçне чиксех ларать.
756. Çут пуçĕнче пукане тайкаланса тăрĕ.
757. Пĕчĕк кинĕм пуççапса ларĕ.
758. Ни улпут мар, ни хуçа мар, пуççапмасăр иртес çук.
759. Ни тиек мар, ни пурмис мар, пуççапмасăр илеймĕн.
760. Ни тиек мар, ни пурмис мар, пуççапмасăр иртеймĕн.
761. Пĕчĕк пичи пуçне çĕклеймĕ.

## Çулçă

762. Уй варринче суккăр кайăк вĕçет.
763. Уй варринче суккăр чĕпĕ вĕçет.
764. Вăрманта суккăр чăхă вĕççе çӳрет.
765. Вăрмантан сава турпасси вĕççе килет.
766. Вăрман хĕрринче уксах мулкач ташлать.
767. Кам капăрри—вăрман урлă, кăптăр-кăптăр—лакăма.

## Тунката

768. Сĕм вăрманта кĕсел тирки ларать.

## Упа кĕпçи

769. Вар хĕрринче уйран çӳпçи ларать.
770. Çӳпçе çинче çӳпçе, чăн тăрринче шăрт.
771. Катка, катка, катка çинче çӳпçе, чăн тăрринче шăрт.

## Уткăшкар

772. Çеçенхирте сăрлăх ларать.
773. Сĕм вăрманта çекĕллĕх йывăç тупаймăн.

## Утмăлтурат

774. Ячĕ утмăл, хăй пĕччен.

### Хăях

775. Симĕс хăю алла касать.

### Хурăн

776. Шур вăкăрăн тирĕ урлă.
777. Шур сурăхăн тирĕ урлă.
778. Ашĕ тăрăх, тирĕ урлă.
779. Урпаш [103]—урлă, Исментер [104]—тăрăх.
780. Урташ [105]—урлă, Исментер — тăрăх.

### Хурлăхан

781. Пĕчĕкçеççĕ куркам пур, куркам тулли кĕрпем пур.

### Хыр

782. Хĕлле те, çулла та пĕр тĕс.
783. Хĕлĕн-çăвĕн юсанĕ, çийĕнчи тумтирне пăрахмĕ.
784. Хĕлле тăлăппа, çулла аçампа.

### Чăрăш

785. Çулла та пĕр, хĕлле те пĕр.
786. Хĕлле те пĕр кĕрӳ, çулла та пĕр кĕрӳ.

### Чечек

787. Пĕр майра пуçне пилĕк пурçăн тутăр çыхнă.

### Чие

788. Тĕсĕ юн тĕслĕ, тути пыл тутлă.

### Шур çырли

789. Юнĕ пур та, чунĕ çук.

## ПАХЧАÇИМĔÇ

### Арбуз

790. Симĕс арчара хĕрлĕ тавар.
791. Ниçтан кĕме шăтăк çук, шалта пин çын пурăнать.
792. Симĕс чиркӳ ăшĕнче хура халăх кĕлтăвать.

## Йӳç кăшман

793. Атякка-катякка, карта айĕнче муклашка.
794. Вырăсĕ шалта, сухалĕ тулта.
795. Тĕпсакайĕнче мушелник выртать.

## Кавăн

796. Икшик-тукшик, мăнтăр Якур.

## Кăшман

797. Мучей шалта, сухалĕ тулта.
798. Хăй пӳртре, çивĕчĕ тулта.
799. Юнĕ пур, чунĕ çук.
800. Ик-чак, чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
801. Тĕпсакайĕнче мушелник выртать.

## Кишĕр

802. Майри шалта, çитти тулта.
803. Хăй шалта, çӳçĕ тулта.
804. Çивти тулта, хăй шалта.
805. Хĕрлĕ хĕр тĕрмере ларать, çӳçĕ тулта.
806. Хĕрлĕ хĕр тĕттĕм пӳлĕмре ларать, çивĕчĕ тулта.
807. Вăр çаврашка — уçă мар, хӳри пур та — шăши мар.

## Купăста

808. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать.
809. Пин-Пинеççе, Пинеççе, пин хут кĕпе тăхăнать.
810. Пĕчиккĕç пукане пур, пин хут кĕпе тăхăнать.
811. Пĕчĕкçеççĕ пукане хĕрĕх хут кĕпе тăхăнать.
812. Çĕтĕк майра çĕр хут сараппан тăхăннă.
813. Мăнтăр майра сакăрвун сараппан тăхăнать.
814. Пĕр майра хĕрĕх хут сараппан тăхăннă.
815. Пинпӳ майрин пин саплăк, çĕрпӳ майрин çĕр саплăк.
816. Хăрах ураллă пиччен пин саплăк.
817. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк.
818. Пĕр тунката тăрринче пуп тăрать, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тум тăхăннă.
819. Пĕчĕкиç салтак çитмĕл çич кĕпе тăхăннă.
820. Çитмĕл хут тăхăннă, пĕрне те çĕлемен.
821. Урлă-пирлĕ кĕпеллĕ, хура сăран атăпа.
822. Пĕр карта сурăх, пурте хăрах ура çинче тăраççĕ.
823. Шурă чăхă пĕр ура çинче тăрать.

824. Лăпă-лăпă çунатлă,
Утмăл икĕ туратлă,
Хутлă-хутлă хутаçлă,
Урлă-пирлĕ кĕпеллĕ.

825. Хутлă-хутлă хутаçлă, хура сăран атăллă.
826. Хуч-хучала, хучала, хучала варринче мамала, мамала урлă, вар урлă, урлă-пирлĕ йĕс кĕпер.
827. Хуч-хуч хучала, варри мунчала.
828. Хуч-хуч хучăкла, хучăла çинче мунчала, мунчала çинче çаврашка.
829. Хутлă-хутлă, хутарлă, симĕс сăрлă кĕперлĕ.
830. Хутлă-хутлă хутала, хутала та мамала.
831. Қасман пир тĕрки айĕнче çĕр утмăл мулкачă.
832. Қачăр-качăртатмăш, чун илĕртмĕш, тухатмăш.

833. Сит-сителти, сителти,
Çич ял çинчен сителти.

834. Мăкăнь пĕрчи пек ўкнĕ, шурă хут пек ўснĕ.
835. Қатта, катта, катта-кипĕк, иссе чăккаç киев кĕпĕк.

## Мăкăнь

836. Пĕчĕк майра пурçăн тутăр çыхнă.
837. Çĕр тĕпĕнчен тухнăскер,
Пурçăн тутăр çыхнăскер,
Симĕс сумка çакнăскер.
838. Çаврăнтăм пăхрăм — çавра пуç,
Қарăнтăм пăхрăм — катăк пуç,
Чăн чиперри — хĕрлĕ пуç.

839. Пурçăн тутăрлă кинĕм пур, кунĕн-çĕрĕн пахчара.
840. Пĕр калпак ăшĕнче çичçĕр казак.
841. Пĕр пĕчĕк хулара çичçĕр салтак вăрçă вăрçать.

## Пăрăç

842. Пăхма чипер, çиме йўçĕ.
843. Крачи, прачи, йăмăх чечек.

## Суханӈ

844. Чунсăр-юнсăр, çынна макăртать.
845. Çапмасăрах макăртать.

846. Çыртмасть, чӗпӗтмест, макăртать.
847. Ыраттармасть, макăртать.
848. Куçран пăхса макăртать.
849. Пӗчӗк кăна аппа пур, куçран пăхсан, макăртать.
850. Çӗтӗк майра çынна йӗртет.
851. Пӗр майра пин хут пăхса макăртать.
852. Симӗс, чăмăр, куççуль кăларӗ.
853. Пӗр майрана пăхăп та йӗрӗп ярăп.
854. Чипер акая пăхап та йӗреп, пăхап та йӗреп.
855. Пӗчӗк акие куратăп та йӗрсе яратăп.
856. Çӗтӗк майра енне пăхăп та йӗрсех ярăп.
857. Çиеп те йӗреп, çиеп те йӗреп.
858. Пӗр майран çӗр хутлă сараппан, кашни хутне уçмассерен макăртать.
859. Пӗчӗкçеççӗ кинӗм пур, сакăр хут кӗрӗк тăхăннă, ун кӗрӗкне кам хывать, вăл макрать.
860. Ларать йăранта пӗр карчăк, мӗнпур çӗтӗк çийӗнче, куран-пӗр макăрать.
861. Пирӗн асатте вуник тăлăп тăхăннă; кам ăна хывать, çав макрать.
862. Картара аллăшар-утмăлшар хут тумтир тăхăннă хаяр старик ларӗ.
863. Пӗр муллан утмăл хут тумтир.
864. Сарă Сарпикен сакăрвун сараппан.
865. Пӗр майран çӗр хут сараппан.
866. Çӗр çӗрлерӗм — çӗрӗк пăяв туртрăм; пур пурларăм — пур халăха юрарăм.
867. Арăк мар, çарăк мар, çулçи ешӗл, милӗк мар.
868. Çап-çавраka — çарăк мар, сип-симӗс те — милӗк мар.
869. Кăтăр-кăтăр кăткă тӗмески, симӗс кайăк — упăшки.
870. Кашта, кашта, кашта, кипек иске чăпкаç киев кӗпӗк.
871. Симӗс купчек таянчăк.
872. Ихихи, чичипи, симӗс хӳри япашки.
873. Пирӗн кинемийӗн симӗс хӳре.

### Сухан çыххи

874. Эсӗ кунта тăр, ампар тавра çаврăнса килем.

### Çарăк

875. Хăй çавраka — уйăх мар; хӳреллӗ — шăши мар; ешӗл — вăрман мар.
876. Чипер те — хӗр мар, хӳри пур та — шăши мар.
877. Ах, чипер те — аки мар, хӳри пур та — шăши мар.
878. Чипер-мӗн те — аки мар, хӳри пур та — шăши мар.

879. Хӯреллӗ — шăши мар, чăмăр — арбуз мар.
880. Кăштăр-кăштăр — вăрман мар, вăр-çаврашка — укçа мар, хӯри пур та — шăши мар.
881. Симӗс вăрман, çаврака хӗвел, шăши хӯри.
882. Чипер акин хӯри вăрăм.
883. Кăтăрти çаврашка, шит те çурă хӯри пур.
884. Хăпартнă хăпарту пек, ларма хӗр пек.
885. Тутли шалта, йӯççи тулта.

## Çӗрулми

886. Çӗр айӗнче йӗс тукмак.
887. Авăтăп-авăтăп — эмел тупăп, тӗпне çитӗп — кӗмӗшке * тупăп.
888. Сакайне çерçисем кӗрр! вӗçсе кӗчӗç.
889. Сакайӗнче ик куçлă кашкăр выртать.
890. Мăнтăр та, çăвӗ çук.
891. Сакайӗнче хӯресӗр шăши.
892. Пат-патăлит, патăлит, шик-шителти, шителти.
893. Алтик [106], алтик тӗпне çитсен, тӗпик [107] тупрăм.
894. Алтăр алтăп, алчик тупăп, тӗпне çитӗп, тӗпик тупăп.
895. Какалек-макалек, карта ăшӗнче муклашка.

## Хăмла

896. Ашшӗ тӯрӗ, амăшӗ кукăр, хӗрӗ лăпсăркка, ывăлӗ пит хаяр.
897. Ашшӗ тӯрӗ, амăш кукăр, хӗрӗ лăстăк, ывăлӗ ухмах.
898. Ашшӗ тӯрӗ, амăшӗ кукăр, ачи-пăчи кăпăшка.
899. Ашшӗ тӯрӗ, амăш кукăр, ачи вӗçкӗн.
900. Ашшӗ тӯрӗ, амăш кукăр, ывăлӗ куштан, хӗрӗ лăстăк.
901. Амăш кукăр, ашшӗ тӯрӗ, ачи пӗчӗккӗ.
902. Ашшӗ тӯрӗ, амăшӗ кукăр, хӗрӗ начар, ывăлӗ усал.
903. Ашшӗ тӯрӗ, амăшӗ кукăр, ывăлӗ — Макçăм, хӗрӗ — Настти.
904. Чи! турӗ, пи! турӗ, çӯле кайрӗ, йăва çавăрчӗ, çăмарта турӗ.
905. Ши! кайрăм, пи! кайрăм, çӯле кайрăм, çăмарта турăм.
906. Çу! кайăп, ю! кайăп, çӯле çитсен, йăва тăвăп.
907. Чи! кайăп, йăва çавăрăп.
908. Нарат, нарат çинче турат, турат çинче йăви, йăви çинче çăмарти.
909. Чӗлпӗр тăрăх ăйăр самăртрăм.
910. Макаççи шăрчӗ, мăн шăрчӗ, сӯс шăртлама юрамасть.

* Кӗмӗл.

### Хămла çырли

911. Хĕрли ăшĕнче шурри.
912. Çăри хĕрлĕ, уççи шурă.
913. Хĕрри хĕрлĕ, варри шурă.
914. Тулашĕ хĕрлĕ, шалашĕ шурă.
915. Вырăсĕ шурă, калпакки хĕрлĕ.

### Хăяр

916. Пĕр пӳртре пин çын пурăнать, кĕме-тухма шăтăк çук.
917. Хутлă хуралтăн хапхи çук.
918. Симĕс чиркӳн алăкĕ çук.
919. Пĕр чиркӳре çын лăках.
920. Ҫарти — тĕм, карти айĕнче муклашки.
921. Ҫакалек-макалек, карта ăшĕнче муклашка.
922. Çеçенхирте симĕс тукмак выртать.
923. Макçăм пахчинче симĕс хăйра.

### Хĕвелçаврăнăш

924. Шĕвĕр хуранăн пăтти тутлă.
925. Улпут майрин ылтăн çӳç.
926. Пуçĕ пысăк, мăйĕ çинçе, сарă пурçăн тутăр çыхнăскер.
927. Мĕкĕт хĕрĕ вăрăм, пилĕкĕ çинçе, симĕс хысĕ хăй çинче.

## ТЫРПУЛ

### Вир

928. Алтăмпик, алтăмпик — çĕр çирĕм çăмарта.
929. Пĕр йывăç çинче çĕр çирĕм çăмарта.
930. Вĕт вăрманăн тăрринче темиçе пин çăмарта.

### Йĕтĕн

931. Уйра ылтăн пуçлă ача ларĕ.
932. Тимпĕл-тимпĕл кăвак чечек.
933. Кучĕ çип пек, тăрри пăрçа пек.

### Ҫалча

934. Исенет те писенет, çулталанксăр тапранмасть.
935. Хирте пĕрмеллĕ сăхман выртать.

## Кантăр

936. Катаран — кар вăрман, патне çитсен — сĕм вăрман.
937. Аякран пăхсан — тамăр [108] хăва, патĕнчен пăхсан — ёнчĕ хăва.
938. Катаран пăхсан — катăр [109] вăрман, патне çитсен — патăр [110] вăрман.
939. Кучĕ туя пек, туйи çинче çиппи пур, тăрри милке пек.
940. Сикĕп-сикĕп пăрçа пек, симĕс курăк сухан пек.
941. Пуçне çийĕпĕр, тирне тăхăнăпăр.
942. Уй варринче симĕс пустав сарнă.
943. Уй варринче симĕс салтак тăрĕ.

## Кантăр вăрри

944. Турчăка вĕçĕнче тутли пур.
945. Юмах юплĕ, Ахматяк çимĕçĕ çуллă.

## Кантăрпа пуса

946. Хĕрпе арăм хутăш.
947. Хăмăшпа хăях хутăш.
948. Хурăнпа йăмра хутăш.
949. Чăвашпа мишер хутăш.
950. Вырăспа тутар хутăш.
951. Никăнпа Якур хутăш.
952. Пуп кўрши тутар.
953. Пĕр вăрлăхран ик тĕслĕ япала.

## Кантăрпа пăрçа

954. Çемек çĕлĕкпе, Туши такмакпа.

## Пăри

955. Пĕр хутаçра икĕ мăйăр.
956. Пĕр хутаçра ик кăчăкă.
957. Пĕр сăпкара икĕ ача.
958. Пĕр пўлĕмре икĕ карчăк.
959. Пĕр шăшин икĕ пакарта.
960. Пĕр шăшин икĕ хўре.
961. Пĕр йĕнĕре икĕ çĕçĕ.
962. Пĕр пĕрмере ик кулач.
963. Пĕр кушаккайăкăн икĕ пакарта.

## Пăрçа

964. Утрăм-утрăм, улма тупрăм.
Улталарăм, кĕмĕш * тупрăм,
Элчĕ килчĕ, парне пачĕ,
Улмаш кĕрÿ ташша ячĕ.
965. Нарат-нарат, турат-турат,
Турат çинче йăви пур,
Йăви çнче çăмарти.
966. Кукăр-макăр турат пур,
Турат çинче кукăль пур,
Кукăль ăшĕнче çăмарта пур.

967. Кукăль ăшĕнче çăмарта.

968. Чу! кайăп, йăва çаврăп,
Сакăршар çăмарта тăвăп.
969. Туратлă-туратлă,
Турачĕсем йăвallă,
Йăвисем çăмарталлă.

970. Явман кантра, çăрман чуста, çупман кукăль.
971. Тути такмаклă, урти ÿртмахлă, паттимĕр патаклă.
972. Ирчемеклĕ — чечеклĕ, урхамахлă — кĕрĕклĕ.
973. Чупма халĕ пур та, чунĕ çук.
974. Тăлти-талти тăрсакай, хытса тăран енсекей.
975. Луп-луп Петĕр, луп Петĕр, кăштăр-каштăр Михали.

## Сĕлĕ

976. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи,
Йĕтĕр тăрри шерепи.
977. Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи,
Йĕтĕр тавра шерепи.
978. Вĕтĕр-вĕтĕр вĕтĕрти,
Йĕри-тавра шерепи.
979. Йĕри-тавра шерепе,
Чăн варринче тунката.
980. Эреветлĕ-теветлĕ,
Шерепеллĕ-тĕвеллĕ.
981. Хурт-кăпшанкă тапранать.
Ылтăн алăк уçăлать.
982. Йăрăп-ларăп, яра парăп,
Исмелĕп те тÿмелĕп.

* Кĕмĕл.

983. Шерепи-шерепи янавар, янавар вăрри улпут кайăкне тут тытать.

### Тулă

984. Чипер акамăн хырăмĕ çурăк.
985. Чипер акайăн хырăмĕ çурăк.
986. Чипер кайăкăн хырăмĕ çурăк.

### Урпа

987. Акарин те макарин,
Ыран-паян килмесен,
Ўкетĕп те вилетĕп.

988. Ўкетĕп-ўкетĕп — тытсамăр.
989. Ан тĕк, каччă, хăсатăп.

### Хуратул

990. Виç кĕтеслĕ пўртĕм пур, тухса кĕме шăтăк çук.
991. Виç кĕтеслĕ кĕлетĕм пур, ниçтан кĕме шăтăк çук.
992. Виç кĕтеслĕ чăланăм пур, ниçтан кĕме шăтăк çук.
993. Пирĕн килте чăлан пур, ниçтан кĕме алăк çук.

### Ыраш

994. Ик эрнерен çуралать, сакăр эрне сăпкара выртать, çирĕм пилĕк эрне кипке ăшĕнче çывăрать, тăватă эрне ўсет, икĕ эрне савăнать, икĕ эрне самăрлать, икĕ эрне саралать, çулталăкра çаврăнать.
995. Юмах ярăп, юптарăп, ана çине саптарăп, вун уйăхран выртарăп.
996. Кăçал кăларса яратăп та тепĕр çул пуçтаратăп.

### Ыраш калчи

997. Хирте тĕрленĕ сăхман выртать.
998. Исенет те писенет, çулталăксăр тапранмасть.
999. Инкерлĕ-синкерлĕ, çулталăксăр тапранмĕ.
1000. Симĕс кайăк — пуçана.
1001. Так-так такана, симĕс кайăк — пуçана.

### Ыраш пусси

1002. Тинĕс мар, пĕлĕт мар — хумханать.

### Ыраш хăмăлĕ

1003. Уйра уйран çӳпçи дарать.
1004. Сарă хырăн варри хăвăл.
1005. Шур хырăн ăшĕ хăвăл.
1006. Пĕлĕт çинче мĕн чухлĕ çăлтăр, çĕр çинче çавăн чухлĕ шăтăк.

### Ясмăк

1007. Пĕр такмакра икĕ çӳхӳ.
1008. Пĕр хутаçра икĕ пашалу.
1009. Пĕр сăпкара ик ача.
1010. Ипчăк-лапчăк, пашалу лапчăк.
1011. Ипчăк-лапчăк, эпеç лапчăк.

## ТИСКЕР ЧĔРЧУНСЕМ

### Арлан

1012. Пĕчĕк мучи мунча тăвать.
1013. Лутра вырăс — мунча ăсти.
1014. Пăрçа хуçи парлакра, мăйăр хуçи вăрманта.
1015. Тенис, Тенис, крепле Тенис, ула пикка купилкка.
1016. Ик-чик чăмăртак, ула мăйлă купик.

### Ăтăр

1017. Ултă уйăх пулă çиет, çичĕ уйăх çулçă çиет.

### Йĕкехӳре

1018. Нӳхрепре хĕсĕр ĕне çӳрĕ.

### Кашкăр

1019. Хӳри — тукмак, шăлĕ — шак-шак.
1020. Вăрман хыçĕнче тихасем кĕçенеççĕ, киле килмеççĕ.
1021. Тӳп-тӳп тӳпечук, тӳпе тăрри илечук.
1022. Вăрманта кăвак Макаç çӳрет.

### Мулкач

1023. Çулла сăрă, хĕлле шурă.
1024. Çулла кăвак, хĕлле шурă.

1025. Шик! шăхăртăм, шĕшкĕ кутне куклентĕм.
1026. Шик-шик шикленет, ката кутне кукленет.
1027. Шаккăм-шаккăм шикленĕп, щĕшкĕ кутне лăпчăнăп.

1028. Сикрĕм, сикрĕм, шиклентĕм,
Шĕшкĕ кутне лăпчăнтăм.

1029. Тăл-тăл, шĕшкĕ кутне çитсен, пăк!
1030. Ши-ши! У-у! илемлĕ тĕлт-тĕлт! шĕшкĕ кутне пашт!
1031. Мăш-мăшарик, мăшарик, шĕшкĕ айĕн кăп-кăп.

1032. Ятамас салтак йăлт та ялт,
Çăнăх чăпти паш та паш.

1033. Кĕске кутлă Кĕçтенкке йĕтем хыçне вĕçтерет.

## Çĕлен

1034. Вăрăм-вăрăм вăрăмчăк, ылтăн пуçлă кĕмĕлчĕк.
1035. Аслаттен пушине нимпе те йăтса çапаймăн.
1036. Кăмака айĕнче тимĕр туя выртĕ.
1037. Тĕпсакайĕнче йĕс кĕвенте выртать.

## Çĕленпе калта

1038. Юмах юмпăлтик, иштар-пиштар кушăлтик.

## Тилĕ

1039. Çеçенхирте пурçăн тĕрки выртать.
1040. Çеçенхирте йĕс тукмак выртать.
1041. Хĕрлĕ хĕрлемес хир чăххине хĕрхенмест.

## Упа

1042. Урлă ура — утаман.

## Чĕрĕп

1043. Вăрманта йĕплĕ çăмха выртать.
1044. Пĕчĕк пичче çара йĕп витĕннĕ.
1045. Тӳн-тӳн, тӳн карчăк, тӳн карчăкăн пин шăрпăк.
1046. Пĕр çăмхана пин йĕп чикнĕ.

### Шăши

1047. Пирĕн сакайĕнче хăлхисене шăмарса çӳрекен пур.
1048. Нӳхрепре касман така çӳрĕ.
1049. Йăпăр-япăр Енеши, ырçа çинче пĕр канаш.
1050. Умне пытăм — пуçне каçăртрĕ, аякка кайрăм — хӳрине кăтартрĕ.

### Юс

1051. Пĕчĕкçĕ пикли [111], хӳри вĕçĕ туйăкли [112].
1052. Инçетрен курăнать, çывăхран пытанать.

## КАЙĂК-КĔШĔКПЕ ШЫВРИ ЧĔРЧУНСЕМ

### Ăсан

1053. Ахан-çахан халтăрч.
1054. Ахан-сахан хултăрч.

### Кайăк

1055. Алăсăр, пуртăсăр пӳрт лартрĕ.

### Кайăк йăви

1056. Ик-чак пĕр чăмăртак.

### Кайăк хур

1057. Пĕр кашта автан, пурте пĕр пек авăтать.

### Карăш

1058. Уй варринче Станюк пичче çăм тапĕ.

### Кăвакарчăн

1059. Хĕрлĕ туна апăрша.

### Кăвакарчăн, чĕкеç, кăвакал çăмартисем

1060. Илемпин иккĕ, Тăвампин тăваттă, Салампин саккăр.

## Кăсăя

1061. Сик-сик кутлă, кăс çĕлĕклĕ, пурçăн йĕмлĕ.

## Куккук

1062. Хир-хир кайăк, хир кайăк, ылтăн-кĕмĕл çăмарти йăвине выртса юлать.

## Курак

1063. Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек.

## Пăрчăкан

1064. Хăй пăр-пăр, хӳри лăп-лăп.

## Пулă

1065. Тĕпсакайĕнче çар иртет.
1066. Аслăк айĕнче çар вылять.
1067. Çунатлă — вĕçеймест, ури çук — хуса çитмелле мар.
1068. Пуçĕ пур та — çӳçĕ çук; çăварĕ пур та — сасси çук.
1069. Çĕр çинче утмасть, йăва çавăрмасть, ачине çуратать.
1070. Шăрчĕ пур та — сысна мар, çури пур та—лаша мар.

## Рак

1071. Усси вăрăм, вунсакăр ура.
1072. Сак айĕнче мушелник выртать.
1073. Астаçă мар, çĕвĕçĕ мар — çăварĕнче шăрт, аллинче хачă.

## Çăхан

1074. Тумил-тумил тумтирпе: хура сăран аттипе, йĕс тĕреллĕ пиçиххипе.
1075. Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек.

## Çерçи

1076. Чи! шăхăрать, чу! каять.
1077. Аслăк кашти çине тухать те, ший! шăхăрать те кĕрет тăрать.
1078. Иштек-куштак, хӳри пăр-пăр.

1079. Ишĕк-пашăк, хӳри тăр-тăр.
1080. Сукмак çинче кĕнтти ташлать.

## Тăмана

1081. Қаçхине вăранать, кăнтăрла çывăрать.
1082. Қаçпа çӳрет, кăнтăрла ларать.
1083. Анкартинче апăрша ача пек ахăрать.

## Тăрна

1084. Сăхманĕ кĕске, хăй вăрăм.

## Ула курак

1085. Пĕтĕл-пĕтĕл тумтирпе, хура сăран аттипе, Иленушка пиçиххипе.
1086. Импĕл-тимпĕл тумтирпе, пилĕк урлă хырмули, хура сăран атăпа.

## Ула куракпа шапа

1087. Қарта çинче—калахман, шыв хĕрринче — шалахман.
1088. Еххĕм салтак сарăлса выртать, уксах салтак талт! сикет.

## Улатакка

1089. Сик-сик кутлă, сик кутлă; чалк сухаллă, кĕс кĕрĕклĕ; пурçăн йĕмлĕ, ука тухъяллă.
1090. Пĕчикĕç куçлă, эреветлĕ-теветлĕ, пурçăн йĕмлĕ, пуш кутлă.

## Чакак

1091. Кĕлетĕнчен тĕкки вăрăм.
1092. Кĕлеткинчен хӳри вăрăм.
1093. Пӳрчĕ мăтăк, тĕкки вăрăм.
1094. Хура сăран аттипе, пуянски пиçиххипе, кĕримски çĕлĕкпе.
1095. Тăпăр-тăпăр хура сăран атăпа.
1096. Илински тумтирпе, хура сăран аттипе.
1097. Ларать хуран пек, хӳри ешĕл сухан пек, кăшкăрать шуйттан пек.

1098. Хура хуран пек, ешӗл сухан пек, ларать мулла пек, кӑшкӑрать шуйттан пек.
1099. Сик-сик кутлӑ, пурҫӑн йӗмлӗ, кӑшт ҫӗлӗклӗ.
1100. Аслӑк ҫинче кантти[113] ташлать.
1101. Елли елсе вyртӗ, уксах салтак сиксе ҫаврӑнӗ.

## Чӗкеҫ

1102. Хир-хир урлӑ, уй-уй урлӑ эреветлӗ-теветлӗ хӗр килет.
1103. Хир-хир урлӑ, хир урлӑ, ял-ял урлӑ, ял урлӑ эреветлӗ-теветлӗ хӗр килет.
1104. Пӗчӗкҫеҫҫӗ, эреветлӗ-теветлӗ.
1105. Пӗчӗкҫеҫ питлӗ-куҫлӑ, эреветлӗ-теветлӗ, пӗтӗр сӑт.
1106. Эреветлӗ-теветлӗ яка Петӗр пӑчӑн-тӑрр!
1107. Лаши пӗчӗккӗ, ҫапах тинӗс хыҫне ҫитнӗ.

## Чӗкеҫ йӑви

1108. Алӑпа тунӑ ҫурт ҫумӗнче сӑмсапа тунӑ ҫурт пур.

## Шапа

1109. Тинӗс варринче качака путекӗ кӑшкӑрать.
1110. Ҫырма тӑрӑх Валук майри кӑшкӑрса чупӗ.
1111. Ҫырмара Пакар майри макӑрать.
1112. Симӗс Сисменти квак! тесе мухтанать.
1113. Тӗпсакайӗнче Мартин таки ташлать.
1114. Атя, матка, ҫырма тӑрӑх яра пар.
1115. Пирӗн сакайӗнче ҫутти пур.

1116. Алтын аркаш, алтын аркаш,
Талт сиктермӗш кӑнт-кӑнт-кӑнт!

1117. Сикки матка шыв тӑрӑх.

## Шӑнкӑрчӑ

1118. Хура йӑмӑкӑн юрри хитре.

## Шӑнкӑрчӑ йӑви

1119. Шӑчӑ тӑрринче пӳрт ларать.

1120. Удельни [114] майра — кĕлет тăрăх, симĕс майра — шыв тăрăх.

## ХУРТ-КАПШАНКА

### Вăрăмтуна

1121. Вĕçет каять, сасси çинçе, сăмси вăрăм; кам ăна вĕлерет — юн тăкать.

### Кăпшанкă

1122. Хăй хуп-хура — çăхан мар, мăйракаллă — вăкăр мар.

### Кăткă

1123. Кĕвен-кĕвен, кĕвен ут, кĕвен ут та çӳрен ут, тайки мине таймик, ту хăпарсан аймик.
1124. Пилĕк-пилĕк пилен ут, сула пулса вилми ут, ту хăпарса ывăнми ут.
1125. Çинçе пилĕк — хура ут, пилĕк урлă хăлха ут, сула пулсан — вилми ут, ту хăпарсан — шуçми ут.
1126. Пи-пи пиен ут, çурлă-кĕрлĕ вилен ут, амак тивсен — вилми ут.
1127. Пи-пи пиен ут, çинçе пĕвĕм юлан ут, шыв ĕçтерсе ывăнми ут.
1128. Кирлĕ-курлă, купи урлă, купи çуллă, хĕрĕх çухрăма кайĕ, сула пулса вилмĕ.
1129. Кăнтăвай кăтăклă, мăй шăмми шăтăклă.
1130. Кăнтăк-кăнтăк кăнтăклă, çăпати пуçĕ сыпăклă.
1131. Кăнти кăтăклă, мăйĕ сыпăклă.
1132. Анчăк-пинчăк хывăх çинче.
1133. Супар [115] вăрманĕнче ниме тунă.

### Кăткă йăви

1134. Çеçенхир варринче туй хуранĕ вĕрет.
1135. Çеçенхир варринче çăл вĕрет.
1136. Сĕм вăрманта сĕт вĕрет.
1137. Ӳплере вĕтĕ халăх вĕркет.

### Лĕпĕш

1138. Чунĕ пур, юнĕ çук.

1139. Хёлле вилет, çулла чĕрĕлет.

### Нăрă

1140. Вăкăр мар — мырялlă *, сысна мар — çĕр чакалтать, кайăк мар — çунатлă.
1141. Вĕçет — нăрлать, ларать — шăтарать.
1142. Вĕçет — мĕкĕрет, ларать — çĕре чакалать.

### Пăрçа

1143. Пĕчĕк курпунскере пилĕк тăван тытма тăчĕç — тытаймарĕç, ик тăван тытрĕç те вĕлерчĕç.
1144. Йăлт-ялт йăрсаккай, мăрт-март мăрсаккай.
1145. Тутар таки хўресĕр.

### Пыйтă

1146. Вĕт вăрманта вĕт кайăк.
1147. Атикĕм-патикĕм, ури чалăш.
1148. Пĕçим-пĕçим, пĕçим ури качим.

### Сăвăс

1149. Йытă вĕрмест, çын сисмест, хăй çынна сыпçăнать.

### Сăпса, тĕкĕлтура, пыл хурчĕ

1150. Пуян ывăлĕ Путирак, Тутил ывăлĕ Тутирак, Пынт ывăлĕ Пытирак.
1151. Анатри Антрак, Тури Тутирак.

### Çĕрура

1152. Макар пиччин çичĕ карт, вуник ура, кайра-малта икшер майрака.
1153. Пĕр шăрттанăн çичĕ карт.

### Таракан

1154. Чунĕ пур та юнĕ çук.
1155. Алăкран кĕтĕм, акам куртăм.
1156. Карта тăрăх канька[116] чупĕ.
1157. Пирĕн пуç тĕлĕнче мĕн пуçхĕрлĕ çўрет?

---

* Майракаллă.

1158. Шăлсăр карчăк шăм кăшлать.
1159. Ҫăмака хыҫĕнче хыслă пуканик ташлать.

## Тĕкĕлтура

1160. Ҫеҫенхирте ула ĕне макăрса ҫӳрет.
1161. Ҫеҫенхирте ула ĕне макăрать.
1162. Пĕр варта ула ĕне макăрса ҫӳрĕ.
1163. Аякран ула ĕне мĕкĕрсе килет.
1164. Ула ĕне пĕтĕм хире мĕкĕрсе ҫаврăнать.
1165. Уй хĕрринче ула тына макăрать.
1166. Ҫырма тăрăх вăкăр мĕкĕрсе анать.
1167. Тĕпсакайĕнче сар чăхă кăтăклать.
1168. Мăш-мăш мăшăлтăк, мăшла-тĕмĕш тĕмĕш цек, акăн-тĕкĕн йĕке пек, ĕнĕҫ тапăр, ҫăн тапăр.

## Хăнкăла

1169. Пӳрт тавра хĕрлĕ ҫăмха кусса ҫаврăнать.
1170. Ҫилĕрен хĕрлĕ ҫăмха.
1171. Лаптак пушмак — Ҫарсак Еххĕм.
1172. Мăнтăр-мăнтăр, мăнтăр кут, Нестĕр амăш—шыҫмак кут.
1173. Элекҫи арăмĕ лапчăкĕ.
1174. Лапчăк сăмса пусмилла.
1175. Лаптак кашта.
1176. Лапчăк та шăршлă.
1177. Айĕ те тӳшек, ҫийĕ те тӳшек.

## Шăна

1178. Кĕтĕр-кĕтĕр этемсем кĕтӳ хуса тухаҫҫĕ.
1179. Вĕҫет — ҫил мар, юрлать — ҫын мар.

## Эрешмен карти

1180. Атăл урлă хĕлĕх карăп.
1181. Тĕпсакайĕнче пурҫăн тутăр ҫакăнса тăрать.
1182. Пирĕн пӳртре кĕтесре алăпа туман ала ҫакăнса тăрать.
1183. Ҫатаран пăхсан — катанпир, патĕнчен пăхсан — шăлапир.

# ҪИЛТИ ЙЁРЧУНСЕМ

## Ашак

1184. Вăрăм хăлхаллă — мулкач мар, чĕрнеллĕ — лаша мар.

## Ёне

1185. Малта сенĕк, кайра ҫулкă, варринче пичке.
1186. Сенки малта, ырҫи варĕнче, шăпăрĕ кайра.
1187. Ҫӳпҫи малтан, хурси хыҫҫăн.
1188. Пуҫĕ — сенĕк, хырăмĕ — пичке, хӳри — милке.
1189. Пуҫĕ — ухват, хӳри — саламат.
1190. Тăрри сенĕклĕх, кучĕ ҫулăклăх, варри ҫӳпҫелĕх.
1191. Сенĕкне тăратнă, ырҫине ҫакнă, ҫулăкне сĕтĕрсе пырать.
1192. Сенки сиктерсе пырĕ, ҫулки шăлса пырĕ, ырҫи тулса пырĕ.
1193. Ырҫи шыв ĕҫĕ, кăвак кăвакарчăн вăйă вылĕ.
1194. Пĕр кĕлетĕн тăвата тĕке.

## Ёне каяшĕ

1195. Картлă-картлă пашалу, йытта парсан — йыт ҫимест.

## Ёне мăйраки

1196. Пур-пур йывăҫ пасарать, пушăт йывăҫĕ пасармасть.
1197. Мĕн пасарин пасарĕ, пушăт йывăҫҫи пасармĕ.
1198. Пин йывăҫа пас тытĕ, ик йывăҫа пас тытмĕ.
1199. Палан йывăҫне пас тытмĕ.
1200. Сайра акипе Майра аки хире-хирĕҫ.

## Ёне ҫилли

1201. Пĕр сăпка айĕнче тăваттăн пĕртăван ҫумăртан хупăрланса лараҫҫĕ.
1202. Кăмака айĕнче сăпка ҫакăнса тăрать.
1203. Пĕр кăмака айĕнче тăвата хутаҫ.
1204. Тăват кăвакал пĕр ҫĕрте.
1205. Аслăк айĕнче тăпăрчă хутаҫҫи ҫакăнса тăрать.
1206. Сак айĕнче сарă такмак ҫакăнса тăрать.
1207. Пӳрт хыҫĕнче тăпка ҫакăнса тăрать.
1208. Кăмака айĕнче мами тăпки ҫакăнса тăрать.
1209. Хутаҫне хуҫи темле силлесен те кăмăс пулас ҫук.
1210. Енчĕкре сĕт йӳҫмест.

## Ĕне, сурăх, сысна чĕччисем

1211. Тăванпилин тăваттă, Илемпилин иккĕ, Сарампин саккăр.
1212. Сарампин саккăр, Тăвампин тăваттă, Илемпин иккĕ.
1213. Саламатăн саккăр, туй çыннийĕн тăваттă, эсремейĕн иккĕ.
1214. Саплăкĕ пур та, çĕвви çук.

## Йытă

1215. Пусма вĕçĕнче пиçмен хуплу.
1216. Вăр-вăр, тяп, лăп.
1217. Тулта хуралçă, пÿртре улпут.
1218. Пÿртре куккăль, тулта йĕкĕрĕлче *.
1219. Ялта япташка, киле пырсан — купташка.

## Йытă хÿри

1220. Шăршлă кÿлĕ хĕрринче кукăр çăка ларать.

## Йытăпа кушак

1221. Кăмака çинче кар тилĕк, урайĕнче ур тилĕк.
1222. Кăмака çинче Картилак, урайĕнче Уртилак.
1223. Урамĕнче Уртилак, кăмака çинче Картилак.

## Качака

1224. Каçăр пичче кĕрĕк аркине тавăрнă.
1225. Кĕрĕк аркине тавăрса хунă, сенĕкне çĕкленĕ, йĕтеме утă пуçтарма каять.
1226. Каринке кантăр кăларма каять: кĕрĕк аркине тавăрнă, сенĕкне хулпуççи çине хунă.
1227. Мĕтюк сенĕк йăтса пахчана каять.
1228. Чипер акка анкартне сенĕк йăтса каять.
1229. Сухаллă та — ват çын мар; туратлă та — йывăç мар; хутаçлă та — кĕлмĕçĕ мар.
1230. Вăкăр мар — мăйракаллă, ĕне мар — сăваççĕ, старик мар — сухаллă.
1231. Асатте пек сухаллă, шуйттан пек мăйракаллă.
1232. Кам сухаллă çуралать?
1233. Ват инкен сухалĕ кăн-кăвак.
1234. Мăйраки хÿринчен вăрăм.

---

* Йĕрĕлче.

1235. Упа мучи хырăмĕ ăшă-и, манăн ăшă-и?
1236. Хаййăм-хăййăм хăй айĕнчи, карта витĕр панчи.
1237. Çырмара пĕчĕк Курмиле арăмĕ макăрать.

## Кушак

1238. Кăмака çинче пуçламан шăрттан выртать.
1239. Кăмака çинче меме[117] салтак выртать.
1240. Кăмака çинче сăрлă туя выртать.
1241. Кăмака çинче кăп тиек ларĕ.
1242. Кăмака çинче кăп тилек, сак çинче сак тилек.
1243. Кăмака çинче каптирек ларĕ.
1244. Кăмака çинче кĕрĕк пĕркенсе выртать.
1245. Кăмака айĕнче сăрлă-сăрлă патак выртать.
1246. Кăмака айĕнчен пĕр салтак тухать.
1247. Мăркин-маркин—мăркин салтак, курас килмест курпун салтак.
1248. Сак айĕнче йĕс хўре.
1249. Пĕчик салтак пўртелле пăшалне тăратса кĕрет.
1250. Пĕчик кинеми турчка йăтсах çўрет.
1251. Пĕчĕкçеççĕ кинеми пур, турахупне йăтать те çўрет.
1252. Пирĕн кинеми турчкине йăтсах çўрет.
1253. Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, кĕнчелеççине йăтсах çўрет.
1254. Пирĕн хăна-хĕр ир тăрать те кĕнчелеççи йăтса тухса каять.
1255. Мăр-мăр мăрлатать, патаккине тăратать.
1256. Энтрух пичче анкарти тăрăх шертине тăратса çўрет.
1257. Вата кайăкçă пăшалне пўртре те тăратса çўрет.
1258. Чăл-чăл куçлă, пăк-пăк çăварлă, пăшалне тăратнă, пўртелле кĕрет.
1259. Уретник пăшалне тăратнă.
1260. Пĕчĕкçеççĕ йыттăм пур, ир тăрать те куяна каять.
1261. Ĕçчен куштан, мăр-мăр салтак.
1262. Тăвата кăчăркка, икĕ йăлтăркка, пĕр шĕвĕркке.
1263. Аялта тăваттă, çўлте иккĕ, пĕри чанк.

## Кушак, ача, путек

1264. Сак çинче Сактирлек, урайĕнче Утирлек, кăмака çинче Кăтирлек.

## Лаша

1265. Арăслан кайăк (аслан, услан, вуслан, ăсан, суслан, шуслан, ăмăрткайăк, улпут кайăкĕ) шыв ĕçет, ик текерлĕк вăйă вылять.

1266. Иккĕн пăхаççĕ, пĕри ĕçет, иккĕн выляççĕ.
1267. Тăваттăн тӳп-тӳп, пĕри харамса.
1268. Тăваттăн хăйăрлаççĕ, пĕри авăсать.
1269. Тăваттăн тараççĕ, хĕрĕххĕн хăвалаççĕ.
1270. Тăваттăн тӳп-тӳп, хăй пĕччен.
1271. Тăваттăн пыран тӳп-тӳп-тӳп, икĕ хăлхине качă-качă.
1272. Тăваттăн тăпăл-тăпăл, иккĕн хăть-хуть, пĕччен вăш-вăш.
1273. Тăвată уралла — тискер кайăк мар.
1274. Суха тăвакан мар, сĕтел тăвакан мар, платник мар, ялта хăй тарçă.
1275. Платник мар, столяр мар, маляр мар, ялта ятлă ĕç-лекен.
1276. Иххи-пахҫи, тăлтти-талтти.
1277. Ахи-пăхи, шăнкăлт-тункăлт.

### Лаша çăварлăхĕ

1278. Аш хуранта тимĕр пиçет.

### Лаша ури

1279. Пĕр старикĕн сухалĕ каялла.
1280. Тăвată старик, тăваттăшĕн те сухалĕсем каялла.
1281. Тирĕк айĕнче чакак макрать.
1282. Чашăк айĕнче чакак чаклатать.
1283. Алтăр айĕнче автан авăтĕ.
1284. Аслăк айĕнче автан авăтать.
1285. Хупăлчаллă тирĕк айĕнче автан авăтать.
1286. Алтăр айĕнче кăчăр-кăчăр!
1287. Чĕввик-чĕввик, кап-кап!

### Лаша хӳри

1288. Вăрмана кайрăм — çĕклемлĕх вут тупмарăм.
1289. Сĕм вăрманта çекĕллĕх тупаймăн.
1290. Сĕм вăрманта сенĕклĕх тупаймăн.
1291. Пĕр çын хыçĕнче пин çын тăрать.
1292. Лашаран кайра, çунаран малта.

### Лашапа çуна-урапа

1293. Чĕррине вилли хăвалать.
1294. Чунли тарать, чунсăрри хăвалать.
1295. Чĕррин тăваттă, виллин саккăр.
1296. Тăваттăн утаççĕ, иккĕн шăваççĕ.

## Пичев

1297. Пиччӗшӗпе шӑллӗ тупӑшса чупаҫҫӗ.

## Путек

1298. Сак ҫӑвипе йӑпӑштӑк, урай варрипе тӗпӗртӗк.
1299. Ишелӗ-кушалӗ, амӑш айне хыпалӗ.

## Путек-сурӑх каяшӗ

1300. Пӗр сак уҫсан, сакӑрвун салтак сиксе тухӗ.

## Сурӑх

1301. Тулта кӗрӗкпе сӑхман макӑрӗ.
1302. Хӗлӗн-ҫӑвӗн кӗрӗкпе.
1303. Хӗлле те, ҫулла та кӗрӗкпе.
1304. Тӑкӑр-тӑкӑр тӑват ура, мӑтӑр-мӑтӑр пӗр тута.

## Сурӑх, йытӑсем, ҫын, кашкӑр

1305. Шуру-муру килнӗ те чикки-приккине вӑрласа кайнӑ. Ҫавна чам ачисем илтнӗ те хуҫисене каланӑ. Хуҫисем шуру-муруна хӑваласа ҫитсе вӗлернӗ, чикки-приккине илсе таврӑннӑ.
1306. Пурис пуртӑ вӑрланӑ, ӑна Simenӗ сиснӗ, Курмили курнӑ, Ҫитӑрӗ ҫыртнӑ, Хӑватей хӑвалать.

## Сысна

1307. Ҫӳлелле пӑхмасть, сусӑр мар, хӑй ҫаплах йынӑшать.
1308. Ҫӗр ҫинче пурӑнать, ҫӳлелле пӑхмасть, нимӗн ыратмасть, йынӑшса выртать.
1309. Ҫӳлелле пӑхмасть, нимӗн тӑваймасть, йынӑшса выртать.
1310. Чунлӑ япала хӗвеле кураймасть.
1311. Хӑй капан пек, хӗвелпе уйӑха курмасть.
1312. Пирӗн пӗр кахал карчӑк пур.
1313. Нӑш-нӑш, нӑш тӑвар, нӑш тӑвар, нӑш тӑвар та кинчевер.

## Сысна шӑрчӗ

1314. Пӗр сӑрт ҫинче пин ҫын сӑнӑпа тӑраҫҫӗ.

### Утă çуни

1315. Атăл урлă лăпсăр-лапсăр упа каçать.

### Юланут

1316. Икĕ пуç, ултă ура, пĕр хÿре.
1317. Улт уралла, пĕр хÿрелле, икĕ пуçлă.

### Автан

1318. Пуçĕ — тукмак, хÿри — çурла.
1319. Пуçĕ тура пек, хÿри çурла пек, кăшкăрать мулла пек.
1320. Пĕр майра кут хыçне икĕ çурла чикнĕ каять.

1321. Сар сарана, сарана,
Сарана çинче саркайăк;
Виççĕ тăрса кăшкăрсан,
Вилĕ-чĕрĕ тапранать.

1322. Ик хут çуралать, икĕ уралла — çын мар, юрлать.
1323. Килĕрен казак.
1324. Кăт-кăтăвăш, кăтăвăш, хÿри вĕçĕ ялавăш.

### Автанпа чăх

1325. Туприн тупать, яприн япать.

### Вĕлле хурчĕ

1326. Хун хĕрĕ хунт[118] илет, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвать.
1327. Хунĕм хĕрĕ, хура хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвĕ.
1328. Çинçе пилĕк, сарă хĕр, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвать.

1329. Тăп-тăп тăпиçăм,
Тăпи ура хуçăкçăм,
Пиçен-таçан курăкçăм,
Курăк çине пусаймăп.

1330. Ашĕ йăтăнни йĕрсе ларать, кушак пиçиххи çыхни кулса ларать.

1331. Сăр-сăр, сăрма калак,
Тиксĕр катман тик-калак.

1332. Вĕр-вĕр вĕрене,
Вĕрене варри вĕр-ылтăн,
Çӳппи-çаппи пин ылтăн.

1333. Нăр-нар! терĕ те йывăç тăрне улăхса ларчĕ.

## Кăвакал

1334. Вăрăм инке шыва анать.
1335. Сутир матки.
1336. Лăкăшти инке шыва анать.
1337. Ах! темесĕр урата урлă каçаймасть.
1338. Пошшол матка шыв тăрăх.
1339. Пат-пат Унеçи, нăкăл-нăкăл Утати.
1340. Кĕреçипе хырать, шăприпе шăлать.
1341. Кĕреçи малтан, ырçи кайран.
1342. Кĕреçи малта, ырçи хыçалта.
1343. Малтан кĕреçи, унтан ырçи, унтан çулки.
1344. Лакăшти инке шыва анать.
1345. Çырмара Ахтар кăшкăрĕ.
1346. Çырмаран нăкăл-накăл Утатти утса хăпарать.
1347. Çырмаран Макар арăмĕ макăрса хăпарĕ.
1348. Анатран Антун арăмĕ кăшкăрса хăпарĕ.
1349. Пĕр пиçиххиллĕ, симĕс пуçлă.
1350. Утюк шыва сикĕ.
1351. Эрхип арăм — пуклак кут.
1352. Алăк урлă ах! темесĕр каçаймĕ.
1353. Ипчăк-купчăк, симĕс купчăк тайкаланчăк.
1354. Ишеми, кинеми, акмак-такмак, шыв тĕпĕнче вут илĕп.
1355. Анатран Макар майри макăрса хăпарать.

## Кăвакалпа хур

1356. Лутра инке шыва каять, вăрăм инке шывран улăхать.

## Кăркка

1357. Асли пырать çул тăрăх кăпăрт-кăпăрт тумтирпе.
1358. Хултăр-хултăр хултăрчă Хурасана култарать.

1359. Автей каять йĕтеме,
Кĕрĕк аркине тавăрнă;
Кĕпи кĕске — салтак пек;
Туни вăрăм — Петрав пек.

1360. Ҫăлтăр-кăлтăр кăткă тĕми, симĕс кайăк упăшки.
1361. Ҫатĕр-катĕр кăтрапи, симĕс кайăк упăшки.
1362. Хун хĕрĕн кĕпи чăпар.
1363. Тик-тик калтам, тик калтам, ылтăн пуçлă тик калтам.
1364. Ылтăн пуçлă никăлтăк.
1365. Ҫăкăлттин — кукша пуç.
1366. Урам тăрăх хранцус майри макăрса çӳрет.

## Хур

1367. Шыва кĕрсен те, типĕ çӳрет.
1368. Вăрăм инке шыва каять.
1369. Вăрăм матка шыв кӳме каять.
1370. Хăрах ура çинче шехерек[119] тăрать.
1371. Хунĕ хĕрĕ хăрах ура çинче ларать.
1372. Лӳп-лӳп, лӳпиççе, ĕçлениççе, кукиççе.

## Чăх

1373. Лутра майра — пичке ăсти.
1374. Пĕчĕк майра — пичке ăсти.
1375. Пĕчĕкçеç вырăс — пичке ăсти.
1376. Ҫăтик кăтартмăш, чун йăпатмăш.
1377. Лутра инке сак çинче, пӳлле инке ту çинче.
1378. Ҫакалашкă-каçрашкă аллă хут кĕпе тăхăнать.
1379. Пирĕн кинĕн пин кĕпе, урама тухсан курăнĕ.
1380. Пирĕн аки лайăх та, урам урлă каçнă чух кĕпи уçă-
лать каять.
1381. Пирĕн акин кĕпи нумай, хыçĕ курнать.
1382. Пĕр çĕлĕкĕн çĕр саплăк.
1383. Пĕр майра çинче темиçе тĕслĕ сараппан.
1384. Иккĕ çуралса пĕрре вилет.
1385. Ҫил уççи, çил хуппи çити.

# ЭТЕМ

## Алăсем

1386. Икĕ Арахман нимле ĕçрен хăраман.
1387. Ҫасман касăк, хуçман хуçăк.
1388. Пĕр юпа çумĕнче икĕ сенĕк.
1389. Ҫак тĕнчере мĕн çемçе?

## Алри юн тымарĕ

1390. Уçман арчара казак пур.
1391. Уçман сунтăхра касман касăк выртать.
1392. Пĕчĕкçеççĕ сунтăхра чунли пур.
1393. Юр айĕпе юс чупать.

## Ача

1394. Тăхăр уйăх тĕрмере ларнăскер, çулталăк çурхах ăшĕнче выртнăскер, çулталăк çум çакки пулнăскер.
1395. Кăтит кăтатмăш, чун йăпатмăш.
1396. Кун ирттермĕш, чун йăпатмăш.

## Ват

1397. Тĕпсакайĕнче симĕс тăпка çакăнса тăрать.
1398. Пĕр такмакра симĕс кĕрчеме.
1399. Кăмака айĕнче симĕс пукане ташлĕ.
1400. Мăн сакайĕнче пукане ташлать.

## Кăвапа

1401. Çеçенхирте пĕр пăрçа.
1402. Асламас кĕперри çинче виçĕ пус выртĕ.
1403. Пĕтре çинче пĕр кăмпа.
1404. Çеçенхир варринче пĕр пĕрчĕ пĕрлĕхен выртать.
1405. Тăвайккире пĕр пус выртĕ.
1406. Ту çинче йĕрĕлче выртать.
1407. Таса уйра мулла ларать.
1408. Тап-такăр çул çинче мулла ларать.
1409. Атăл варринче пулттинĕк тенки выртать.

## Кăкăр шăмми

1410. Тĕттĕм чăланта пĕкечесем çакăнса тăраççĕ.
1411. Урай варринче йĕс пукан ларать.
1412. Ӳт витере шăмă читлĕх.

## Кукша

1413. Арпалăхра курăк çук, аксассăн та шăтас çук.
1414. Хура вăрман варринче уçланкă пур, çав уçланкăра йывăç та ӳсмест, курăк та ӳсмест.
1415. Аслă вăрман варринче уçланкă пур.

1416. Çеçенхирĕн варри — йĕтем.
1417. Кăмака çинче тул чусти выртать.
1418. Шур куракçем хушшинче ту тĕмески куранать.
1419. Кăмака çинче сĕлĕ пашалăвĕ выртать.
1420. Яка ту çинче курăк сайра.
1421. Им-паш пашалу, иртсе каян усламăç.
1422. Кĕпĕрнаттăр хурама тăрри кăпăр-кăпăр.

## Куç

1423. Ĕнчĕ-пĕнчĕ, кĕленче çинче пĕр пĕрчĕ.
1424. Ĕнчĕ-мĕнчĕ, тĕмĕ урлă ик пĕрчĕ.
1425. Икĕ енчĕкре икĕ шăрçа, пин тенкĕпе сутмастăп.
1426. Икĕ ахах пĕрчи тĕнче тавра çаврăнĕ.
1427. Акка шăрçи аякка сапăнать.
1428. Пĕр пăчăх туллăм пĕтĕм хире саланать.
1429. Икĕ пĕрчĕ вирĕме пĕтĕм тĕнчене салатрăм.
1430. Икĕ пăт чула тĕнчипе акса çӳрĕп.
1431. Икĕ пăт тулла темиçе уя салатăп, пӳрт тавра салатаймăп.
1432. Икĕ пăт тулă пур, çанталăкпех акса çаврăнăп.
1433. Икĕ тăван урам урлă пурăнаççĕ, нихçан та пĕр-пĕрне курмаççĕ.
1434. Икĕ мулкач каска урлă выляççĕ.
1435. Пĕр каска урлă икĕ автан вăрçаççĕ.
1436. Икĕ автан вăрçаççĕ, кашта урлă каçаймаççĕ.
1437. Пиччĕшпе шăллĕ урам урлах пурнаççĕ, пĕр-пĕрне нихçан та курмаççĕ.
1438. Марьепе Тарье пĕр-пĕрне курмаççĕ.
1439. Пĕр çут аяккинче икĕ куршак.
1440. Сарай çунатти айĕнче икĕ ăмăрткайăк пăхса лараççĕ.
1441. Çавра ту, çавра ту çамкинче ăмăрткайăк çунатти, ăмăрткайăк çунатти айĕнче çунса тăран хăйçути.
1442. Ик-так, чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
1443. Йĕкĕрлĕ хăвăлта мăшăрлă хăнтăр вылять.
1444. Хăвăлта хăнтăр вылять.
1445. Пĕлĕтсĕр-мĕнсĕр çăлтăр пăхать.
1446. Çамка, çамка çинче тамха, тамха çинче шăрçа, шăрçа çинче пăрça.
1447. Çĕр сумлăх лаша çӳпĕ туртаймĕ.
1448. Çĕр çинче мĕн çивĕч?

## Куç харши

1449. Икĕ кашта хура чăххăм пур,

## Куҫпа куҫ харши

1450. Ылтӑн кӳлӗ тавра сыхлавҫӑсем тӑраҫҫӗ.
1451. Ҫутӑ кӳлӗ хӗрринче хӑмӑшлӑх.
1452. Ҫавра кӳлӗ хӗрринче хӑва хуллисем ӳсеҫҫӗ.
1453. Йӗри-тавра хӑях пулӗ, вӑта ҫӗрте кӳлӗ пулӗ.
1454. Икӗ хӗрри тӗкленсе тӑрать, вӑта ҫӗрӗ нӳрленсе тӑрать.
1455. Пӗр йӑлтӑркка тавра хӗрӗх шӑрт.
1456. Икӗ тарӑн кӳлӗ пур, икӗ енӗпе вӗтлӗх пур

## Куҫпа ҫӑмса

1457. Икӗ кӳлӗ хушшинче ту хысакӗ.
1458. Икӗ кӳлӗ хушшинче улӑп тӗмески.

## Куҫпа хӑлха

1459. Ик тӑванӗ малтан чупаҫҫӗ, иккӗшӗ хыҫалтан хӑвалаҫҫӗ.

## Миме

1460. Ахах арчара ачаш тавар.
1461. Уҫман арчара пуҫламан шӑрттан.
1462. Уҫман арчара касман катанпир.
1463. Уҫӑлми арчара пиҫмен какай пур.
1464. Сунтӑхра чӑкӑт пур та, ҫимелле мар.
1465. Уҫман-хупман сунтӑхра катман кашӑк выртать.
1466. Йӗс сунтӑхра калем пур.
1467. Тир хутаҫра шӑмӑ арча, шӑмӑ арчара ҫуллӑ нимӗр.
1468. Уҫман чӳлмекре йӳҫмен чуста.

## Пуҫ

1469. Аял ту, аял туран вӑта ту, вӑта туран ҫӳллӗ ту, ҫӳллӗ туран вак хӑва.
1470. Аяллӑ сӑрт, аяллӑ сӑртра вӑта сӑрт, вӑта сӑртра вак хӑва.
1471. Вӑрӑм хӑва, вӑрӑм хӑва айӗнче тӗм хӑва, тӗм хӑва айӗнче ҫавра кӳлӗ, ҫавра кӳлӗ айӗнче тӗмеске, тӗмеске айӗнче лепрешке, лепрешке айӗнче мӑн шӑтӑк, мӑн шӑтӑкра тӗп шӑтӑк, ҫав шӑтӑка сыхлама хӗрлӗ йытӑ кӑкарса хунӑ.
1472. Кавлем, кавлем ҫинче нарат, нарат ҫинче кӳлли, кӳлли хыҫӗ хӑвалӑх, хӑвалӑх ҫинче вӑрман.

1473. Ляв-ляв, ляв-ляв ҫинче нăр-нăр, нăр-нăр ҫинче ҫут кӳлĕ, ҫут кӳлĕ ҫинче мăн ту, мăн ту ҫинче сĕм вăрман.
1474. Нямни, нямни ҫинче нăрни, нăрни ҫинче ҫутă кӳлĕ, ҫутă кӳлĕрен вĕт хăва.
1475. Ҫӳл ту ҫинче пĕчĕк пӳрт, ҫав пӳрт ҫине хăмăш витнĕ, унăн икĕ чӳрече, икĕ тăмана шăтăкĕ, икĕ кушак шăтăкĕ, пĕр тĕпсакай.
1476. Хам-хам, хам-хам ҫинче сам-сам, сам-сам ҫинче ҫут кӳл, ҫут кӳл ҫинче ҫӳл ту, ҫӳл ту ҫинче вĕт хăва, вĕт хăвара вĕт кайăк.
1477. Мучи пӳрчĕ — пĕчĕк пӳрт, алăкĕ мăкланнă, тĕнĕ шăтăкĕн пăкки ҫук, ҫил шăтăкĕн хуппи ҫук, ҫине кăлкан витнĕ.
1478. Пĕр муклашкан ҫичĕ шăтăк.
1479. Пĕр хурана ҫичĕ ҫĕртен шăтарнă.
1480. Пĕр ҫăмхан ҫичĕ шăтăк.
1481. Алпа туман ҫăмхан ҫичĕ шăтăк.
1482. Асамлă ҫăмхан ҫич шăтăк: иккĕшĕ тип шăтăк, иккĕшĕ йĕпе шăтăк, иккĕшĕ нӳрлĕ шăтăк, пĕри тĕпсĕр шăтăк.
1483. Иккĕн пăхаççĕ, иккĕн итлеççĕ, пĕри калаҫать.
1484. Пĕр ҫăкăр сăмси, икĕ икерчĕ, пĕр хуран кукли, икĕ йăвача, икĕ кĕлентĕр.
1485. Ням-ням, нăр-нăр, ҫутă кӳл, хушка ту, вĕт хăва.
1486. Хып-хып, нăш-нăш, йăл-йăл, вĕл-вĕл, вăш-вăш.

## Пӳрнесем

1487. Пĕр амаран пилĕк ача.
1488. Пĕр арăмăн пилĕк ывăл, пиллĕкĕшĕ те пĕр ятлă.
1489. Пĕр йывăҫăн пилĕк турат.
1490. Пĕр йывăҫăн пилĕкшер юплĕ ик турат.
1491. Алапит ҫемйинче пилĕк ача.
1492. Алтаккайăн пилĕк яш, пиллĕкĕш те сарă яш.
1493. Ик арăмăн пилĕкшер ывăл.
1494. Икĕ аманăн пилĕкшер ача, хăйсем пурте пĕр ятлă.
1495. Икĕ ама, кашни аман пилĕкшер ача, пиллĕкĕш те пĕр ятлă, чĕнме тĕрлĕ чĕнеççĕ.
1496. Лараççĕ пилĕк ача, пĕри теприн чен пĕчĕкҫĕ.
1497. Пилĕк нарат, наратсерен пилĕк турат, туратсерен пилĕк нухрат.
1498. Пĕр вăхăтра ҫуралнă, тĕрлĕрен пӳ туяннă.

## Сăмса

1499. Виçĕ юпапа аслăк тăрать.
1500. Икĕ çутă варринче эпĕ пĕччен.

## Сăмса шывĕ

1501. Ик çырмаран тан тапать.
1502. Ик вар хушшинчен тан тапать.
1503. Ик вар пуçĕнчен тан тапать.
1504. Юплĕ вартан тан тапать.
1505. Қапан айĕнчен юс пăхать.
1506. Қапан айĕнчи юс пĕр тухать те пĕр кĕрет.
1507. Вуçми сунтăх çинче калемпĕр выртать.
1508. Иккĕн варалаç, пиллĕкĕн тасатаç.
1509. Иккĕн тухĕç, пиллĕкĕн çапса пăрахĕç.
1510. Иккĕн чупса тухаççĕ, пиллĕкĕн çĕклесе çапаççĕ.
1511. Шĕвикĕм-шĕнкерĕм, шыва ятăм, путмарĕ.
1512. Лап! çĕре, çутă пуç.
1513. Юмах пуртă кăна, унтан килсен, кистă қăна.

## Сула

1514. Қăмака айĕнче симĕс пукане ташлĕ.
1515. Тĕпсакайĕнче пукане ташлать.

## Сухал

1516. Пура хĕрринче талттин ташлĕ.
1517. Пура хĕрринче канка ташлать.
1518. Пура хĕрринче кантис ташлĕ.
1519. Пура хĕрринче карлик ларать.
1520. Ырçи хĕрринче канти ларать.
1521. Сăрт хысакне мăк шăтнă.
1522. Ту айĕнче тулăксăр курăк çитĕнет.
1523. Ту айĕнче вăрман пур, пырса кĕме çулĕ çук.
1524. Сак урати çумĕнче тыллапуççи çакăнса тăрĕ.
1525. Сухаламан, сӳремен ана çине çирĕм çултан çăм шăтрĕ.
1526. Тимук хирне вир акрăм, тикĕс шăтин юрĕччĕ.
1527. Чипер-чăпар ярханах.

1528. Сик сикĕлтĕр, сикĕлтĕр,
Пакăс кĕлтĕр, кĕс кĕлтĕр.

## Çамка

1529. Улăм ури çинче кĕмĕл чашăк ларать.
1530. Çутă кӳлĕ çинче çӳллĕ ту.

## Çăвар

1531. Ват асаттен вăрманĕнче питĕ тарăн нӳхреп пур.

## Çивĕт

1532. Пӳрт айккинче чĕн пушă çакăнса тăрĕ.
1533. Пӳрт айккинче хура çĕлен çакăнса тăрать.
1534. Пӳрт хыçĕнче хăрăк шанкă çакăнса тăрать.
1535. Ампар умĕнче юплĕ пушă çакăнса тăрĕ.
1536. Пӳрт хыçĕнче икĕ вĕçлĕ саламат çакăнса тăрать.
1537. Пӳрт хыçне икĕ пушăт йывăççи тăратнă.
1538. Икерĕлчĕк-кӳкерĕлчĕк, утмăл икĕ кукăрăлчăк.
1539. Икĕрчĕк-кукăрчăк, çитмĕл ик кукăрчăк.
1540. Явман кантра, çимен утă.
1541. Тăр-кăнтăрла микулкки, каçпулттипе çăварни, çур çĕрпе шăрăх хĕр, тул çутăлсан — çатма аври.

## Çӳç

1542. Çӳлте вăрман ларать.
1543. Çӳл ту çинче вĕт хăва.
1544. Сĕм вăрманта кăкаклăх [120] йывăç çук.
1545. Сĕм вăрманта пуртă аврилĕх йывăç çук.
1546. Сăрт çинчи çаранне уйăхра пĕр çулаççĕ, сурăхсем çимеççĕ, капана хывмаççĕ.
1547. Çӳллĕ çӳçен çӳçи çук.

## Çӳçпе пит-куç

1548. Вăрманĕ çӳлте, хирĕ аялта.

## Ура

1549. Тӳрчĕ малта, хырăмĕ кайра.
1550. Çурăмĕ малта, хырăмĕ кайра.
1551. Хырăмĕ пур, çурăмĕ çук.

## Ура пӳрнисем

1552. Виç кĕтеслĕ пӳртре пиллĕкĕн пурăнаççĕ.

## Урасем

1553. Икĕ çывăх тăван пур, шав тупăшас йăли пур.
1554. Уйрăлми тăвансем пур, шав ăмăртса чупаççĕ.
1555. Икĕ тăван ăмăртаççĕ, малтан мала ăнтăлаççĕ.
1556. Пĕр мăнттая икĕ çăмăлттай йăтăрласа çӳреççĕ.
1557. Пĕр улпута икĕ тарçи йăтса çӳреççĕ.
1558. Эс иртен те — эп иртеп, эп иртеп те—эс иртен.

## Хăлха

1559. Ту айккинче шăтăк алтăр ларать.
1560. Пĕр тăвайккинче икĕ шăтăк алтăр ларать.
1561. Çырма хĕрринче лаç ларать.
1562. Çырма хĕрринче тайлăк кĕлет ларать.
1563. Пӳрт çумĕнче пĕрмен кукăль выртать.
1564. Аймăш-маймăш тур пачăшки.

## Хырăм

1565. Лаххана нихçан та тултараймăн.

## Чĕлхе

1566. Хуп-хуп пахча, хуп пахча, хуп пахчара шăмă пахча, шăмă пахчара хĕрлĕ автан.
1567. Ай, хуп вите, хуп вите, хуп витере шăм вите, шăм витере çӳрен ут, çӳрен учĕ кĕçенет.
1568. Шăмă витере сарă лаша кĕçенсе тăрать.
1569. Шăмă пахчара юпах тиха.
1570. Шурă картара хĕрлĕ пăру.
1571. Йĕпе пăру витере выртать.
1572. Тĕттĕм аслăк айĕнче йĕпе пăру макăрать.
1573. Кăмакара тĕл-тĕл.
1574. Кăмакара чĕл-чĕл.
1575. Çут тĕнчере мĕн çивĕч?

## Чĕре

1576. Сакайĕнче сар такмак çакăнса тăрать.
1577. Сакайĕнче сивçу чĕресси çакăнса тăрать.
1578. Сакайĕнче хаклă тавар çакăнса тăрать.
1579. Тĕпсакайĕнче хĕрлĕ пукане ташлать.
1580. Кăмакара хытă такмак çакăнса тăрать.
1581. Хĕввĕмре хĕвелĕм пур.
1582. Пĕр сунтăхра вĕри чӳлмек.

## Чĕрне

1583. Пĕр май пăхсан — курăнать, тепĕр май пăхсан — курăнмасть.
1584. Тыткан вĕçĕнче хыткан пур.

## Шăлсем

1585. Икĕ кашта чăххăм пур, пурте шап-шурă.
1586. Икĕ кашта çинче шурă чăхăсем ларĕç.
1587. Икĕ кашта шур чăххăм пур.
1588. Кашта тулли шурă чăхă.
1589. Хуп-хуп, хуп вите, хуп витере шăмă лаша.

## Шăлсемпе чĕлхе

1590. Икĕ кашта шурă чăхă, хĕрлĕ автан сиксе авăтать.
1591. Шап-шур халăх авăн çапать, хĕрлĕ Энтри кĕлте таврать.

## Этем пӳ-сийĕ

1592. Тап-тап, тап-тап çинче паш-паш, паш-паш çинче хуп-хуп, хуп-хуп çинче кап-кап, кап-кап çинче йăл-йăл, йăл-йăл çинче мăш-мăш, мăш-мăш çинче тĕк-тĕк, тĕк-тĕк çинче çăм-çăм.
1593. Икĕ тап-тап, пĕр ням-ням, пĕр нăш-нăш, икĕ йăл-йăл, икĕ ап-ап.
1594. Икĕ турчăка, икĕ турчăка çинче пичĕке, пичĕке çумĕнче икĕ кĕрепле, икĕ кĕрепле тăрринче пĕр чӳлмек, çав чӳлмекĕн çичĕ шăтăк.
1595. Икĕ юпа юнашар, юпасем çинче пичĕке, пичĕке çинче кавăн, кавăн çинче хытхура.
1596. Икĕ юпа, юпа çинче пичке, пичке çинче ик кĕвенте, кĕвенте çинче арбуз, арбуз çинче вăрман.
1597. Пушăт, пушăт çинче сурăх, сурăх çинче кантăр, кантăр çинче ам-ам, ам-ам çинче нăш-нăш, нăш-нăш çинче çӳллĕ сăрт, икĕ енче çутă кӳлĕ.
1598. Сенкĕ, сенкĕ çинче пилеш, пилеш çинче такана, такана çинче икĕ кĕрепле, икĕ кĕрепле çинче ням-ням, ням-ням çинче лĕр-лĕр, лĕр-лĕр çинче икĕ çутă кӳлĕ, икĕ кӳлĕ çинче çут уй, çут уй çинче вĕтĕ вăрман.
1599. Ирпе тăват уран, кăнтăрла ик уран, каçпа виçĕ уран.
1600. Пĕри калаçать, иккĕн итлеççĕ, иккĕн пăхса тăраççĕ.
1601. Пĕр йывăçа касса ярăн та тăратаймăн.

1602. Тăхăр уйăх тĕрмере ларать, çичĕ уйăх çакăнса тăрать, кайран ирĕкре çÿрет.
1603. Çак тĕнчере кам вăйлă?

# ÇИПУÇ

## Алка

1604. Пăт-пăт тумлĕ, çĕре ÿкмĕ.
1605. Тумлать-тумлать, çĕре тивмест.
1606. Чăнкăр-чăнкăр чăх ури, лаппин-лаппин хур ури.
1607. Антăрлă-чĕнтĕрлĕ, арки вĕçĕ кĕмĕллĕ.
1608. Тимĕл-тимĕл çĕр тимĕ.

## Атă

1609. Хуп-хура — хуран мар, вĕçĕ кукăр — турчка мар.
1610. Картлă — купăс мар, хăвăл — пичке мар, кукăр — турчка мар.
1611. Икĕ арап пĕртăван, çÿллĕшĕсем чĕркуççи çÿллĕш, пур çĕрте те пирĕнпе çÿреççĕ тата пире сыхлаççĕ.
1612. Çемен пĕççи картлă-картлă.

## Енчĕк

1613. Хĕрлĕ хĕрхин тăвата хÿре.
1614. Хĕрлĕ шăшин тăвата хÿре.
1615. Чипер акамăн тути пĕрĕнчĕк.
1616. Кăрт туртмăш, куклетмĕш, Энтри арăмĕ тухатмăш
1617. Кĕлет алăк туртмăш, Энтри йытти пĕлтермĕш.
1618. Кăр! шупăр пĕрмечи.
1619. Хуш хутаççи хунт хушать.
1620. Эсех пуян, çăварна каран та ларан.

## Йĕм

1621. Пĕр çилĕмĕн ик тетел.
1622. Улпут йытти тăват хăлхаллă.

## Калуш

1623. Улпут çунин турти çук.
1624. Пылчăк çуни туртасăр.
1625. Навус çуни туртасăр.

### Кĕпе тĕрри

1626. Апаш [121] кĕперри пуçхĕрлĕ.
1627. Мускав кĕперри кутăн тăрĕ.
1628. Шурча [122] чиркĕвĕ кутăн тăрĕ.
1629. Ярмушка [123] кĕперри пуçхĕрлĕ.

### Кĕрĕк

1630. Пĕр ен вăрманлăх, тепĕр ен уйлăх.
1631. Пĕр енĕ хăмăшлăх, тепĕр енĕ çеçенхир.
1632. Пĕр енче хир, тепĕр енче вăрман.
1633. Пĕр ен вăрман, тепĕр ен хир.
1634. Тĕкли çине якли.
1635. Унталла та ăшă, кунталла та ăшă.

### Кĕрӳ тутри

1636. Вĕл-вĕл вăлча, вăлча тăрринче вăлчака.

### Масмак

1637. Асламас кĕперри авăнчăк.
1638. Пӳрт урлă пĕкĕ ывтăп.
1639. Лаптак кашта çине симĕс курăк шăтĕ.

### Нухрат

1640. Чип-чиперкке, чиперкке, икĕ пичĕ сĕвĕркке.
1641. И чиперук, чиперук, икĕ пичĕ сĕверӳк.
1642. Чип-чиперӳк, чиперӳк, икĕ куçлă сĕверӳк.
1643. Чип-чиперкке, икĕ пичĕ шĕвĕркке.

### Пальто

1644. Атте тăхăнман пĕрмесĕр сăхман.

### Пĕркенчĕк

1645. Чипер акин аркă вĕçĕ вĕлт-вĕлт.

### Пир

1646. Кĕрт-кĕрт тăрăх кĕвĕнет,
Юртан шурă пулап, тет;
Çине-çине çапсассăн,
Çеп-çемçе пулап, тет.

## Пиçиххи

1647. Юман йĕри-тавра юн тăкăннă [124].
1648. Юпа çумне юн тăкăнать.
1649. Пĕри пĕкече кайрĕ, тепри тавра кайрĕ, хăвăл хыçĕнче тĕл пулчĕç.
1650. Эп кунтан кайăп, эс унтан кайăн, Энтри лаççи тĕлĕнче тĕл пулăпăр.
1651. И! кайăп, пи! кайăп, Энтри Пасарне [125] кĕрех кайăп.

## Пушмак

1652. Пĕр шăшийĕн хӳри çук.
1653. Сентре айĕнче хытнă Настаççи выртать.

## Пушăт пушмак

1654. Сентре айĕнче шатра шапа выртать.
1655. Навус çуни туртасăр.

## Пыр çыххи

1656. Шехретинпе Марттин тус пулнă.
1657. Эсĕ унтан кай, эпĕ кунтан каям, Энтри Пасарĕнче тĕл пулăпăр.
1658. Эсĕ унтан кай, эпĕ кунтан каям, Энтри арманĕ хыçĕнче тĕл пулăпăр.
1659. Эсĕ Куптарпа [126], эпĕ Çĕктерпе [127], иккĕн пĕрле Маймак арманĕ патĕнче тĕл пулăпăр.

## Саппун çыххи

1660. Эс унтан кай, эп кунтан каяп, Энтри Пасарĕнче тĕл пулатпăр.

## Сăрка

1661. Пӳрт хыçне сӳре çакрăм.
1662. Чип-чиперкке, чиперкке, чипер çĕртен кукăрри.
1663. Вĕрене, вĕрене вĕр улти, çăппи-çаппи çĕрулми.

## Сăхман

1664. Асаннен шурă, аннен хура, аттен кăвак.
1665. Ярăп-ярăп, яра парăп, исмелĕп те тӳмелĕп.

## Сулă

1666. Хум * хĕрийĕн пиçиххи.
1667. Чипер акайăн пиçиххийĕ çитмест.

## Сурпан

1668. Вите хыçне сӳре çакнă.
1669. Варрипе вар пырать, ик хĕррипе çул пырать.

## Сурпан çакки

1670. Чӳкасси чӳхенчĕк, Артакасси арканчăк, Конихлин теçетник.
1671. Вăр-вăр карта, вăр карта, тимĕр пуç Тимови.

## Çăматă

1672. Турчка пек кукăр, уйран çӳпçи пек хăвăл.
1673. Çӳпçе пек хăвăл, турчка пек кукăр.
1674. Хăвăл — катка мар, кукăр — турчка мар.
1675. Хура — хуран мар, тĕплĕ — витре мар, кукăр — турчка мар.
1676. Тĕпелти тĕплек пуç, Якку арăм — пуклак пуç.
1677. Тĕпĕлти-тепĕлти шыçмак кут, Якку арăм — пуклак кут.
1678. Йăкăлти-йăкăлти пуклак кут, Якку арăмĕ — шыçмак кут.
1679. Мăкăлу-макăлу шыçмак кут.
1680. Қăмака çинче Йăкăнат пĕççи выртать.

## Çăпата

1681. Пĕр шăшийĕн ик хӳре.
1682. Пĕр пакшан икĕ хӳре.
1683. Пĕр кушакăн пилĕк сăмса.
1684. Пĕр çыннăн пилĕк сăмса.
1685. Пилĕк сăмсаллă, икĕ хӳреллĕ.
1686. Икĕ чăпар чăххăм пур, ялан хыçран çӳреççĕ.
1687. Хăй тӳре пек, йĕрĕ укçа пек.
1688. Виç кĕтеслĕ пӳртре пилллĕкĕн пурăнаççĕ.
1689. Пуçĕ пур — мими çук, çурăмĕ пур — хырăм çук.
1690. Эрхип арăмĕ — пуклак пуç.

---

* Хун.

## Çăпата кантри

1691. Эс унтан кай, эп кунтан каям, Вылпасарĕнче [128] тĕл пулăпăр.
1692. Пĕр юпа тавра икĕ çĕлен явăнать.

## Çăпата урлавĕ

1693. Урам урлă Урине.

## Çăпатапа калăп

1694. Курити çемçе, ути хытă.
1695. Куритинчен юрни хытă.

## Çăпата, тăла, кĕпе

1696. Çăкалăх, сурăхлăх, кантăрлăх.

## Çĕлĕк

1697. Çӳлте ларап, кам çинчине каламастăп.
1698. Йĕри-тавра ука, варринче çăм.

## Тилĕ çĕлĕкĕ

1699. Им-им чечек, им чечек, вĕлле тăрринче пĕр чечек.
1700. Вĕл-вĕл чечек, вĕл чечек, вĕлле çумĕнче пĕр чечек.

## Çĕрĕ

1701. Пĕчĕкиç тиек йĕс пиçихи сыхнă.
1702. Пĕчĕкçеççĕ пичче йĕс пиçихи сыхнă.
1703. Пирĕн пичийĕн йĕс пиçихи.
1704. Чипер пиччи туй пиçихи сыхнă.
1705. Çăка чĕресе кăшăл çапнă.
1706. Аш касмăкĕ [129] — тимĕр кăшăл.
1707. Ӳт пичĕкен йĕс кăшăл.
1708. Чипере курсан, тăхăнас килет.
1709. Мăн тăрли, мăн тăрли, ман пӳрне хĕп-хĕрлĕ.
1710. Тĕпсĕр каткара аш тулли.
1711. Тĕпсĕр катка — аш тултараймăп.

## Тăла

1712. Пĕр май туртсан — çурăлать. тепĕр май туртсан — çурăлмасть.

## Тенкĕ

1713. Çап-çут — хĕвел мар, ума çаксан — саппун мар, чăнкăр-чăнкăр — укçа мар.
1714. Мами тенки—ик тенкĕ, пуçтарса та çитереймĕп.

## Туй арăмĕн тумĕ

1715. Санчăллă-канчăллă, сарă курăк çеçкипе, пиçен тăррри муклашки.
1716. Мăс-мăсарик, мăсарик, мăса-тирек кăнсăпат, кĕмĕт татса килнĕ пек, кĕпçе чипер, ярапарчăк, мăмăрчăк.
1717. Пĕсехи — кĕмĕл, хӳри — шăрçа.
1718. Чăнкра-чăнкра шĕкĕртĕк, йĕс тум, выс тум, вĕл-вĕлвĕл.
1719. Пĕвенĕ пур та, йĕвенĕ çук.

## Тура

1720. Хусан турпасĕ [130] кунта килсе выртĕ.
1721. Хусан турпасĕ Хутара килĕ.
1722. Хусан хăми — пуç çемми.
1723. Хăй шăллă, анчах çыртмасть.
1724. Пӳрт тăрринчен Караçка ярăнать.

## Турашăл

1725. Пĕчĕккеç ачан чике сухал.

## Тухъя

1726. Кĕмĕл кӳме тăрринче тăхлан тăрна.
1727. Шĕлтĕр-шĕлтĕр шĕлтĕрми, килĕшет хĕрсен пуçĕнче.
1728. Тумлать-тумлать, çĕре тумлаймасть.
1729. Çумăр çăвать, çĕре тивмест.
1730. Хурăн тăрри чăп-чăпар.
1731. Антăрлă-чăнтăрлă, арки вĕçĕ кĕмĕллĕ.

## Тӳме

1732. Кукша пуç, тăвата куç.
1733. Пĕчĕк пичче хыт тытать.

## Хултăрмач

1734. Кушак тяппи тяп-тяп.

### Хуртпуççи

1735. Пĕчĕк акин хырăмĕ çурăк.
1736. Чипер акин хырăмĕ çĕтĕк.
1737. Шур акайăн шăлĕсем хура.
1738. Шакăр пĕр май.

### Хушпу

1739. Лап çăпата, çутă куç.
1740. Вăрăм алтăран тĕпĕ шăтăк.
1741. Кĕмĕл тиркĕн тĕпĕ шăтăк.
1742. Кĕмĕл чашкăн тĕпĕ шăтăк.
1743. Чип-чиперкки, чиперкки, икĕ пичĕ сĕвĕркки.
1744. Умĕ улпутлă, хыçĕ сăнчăрлă.
1745. Алăк çинче хуп татăкĕ.
1746. Атланк-чатланк, шăнкăртанк-ташланк! Атлайăм-чатлайăм, шăнкăртайăм-татлайăм!
1747. Атласт-катласт, чĕнтĕр кайăк ташласт!
1748. Кăмака çинче кĕмĕл кушак ларать.
1749. Кăмака çинче вир çĕмел.
1750. Чăр-чăр чăрка, чăр чăрка, кĕмĕл чăлка, пĕр чăлка.
1751. Пăрлă курка пăрăç çинче.

### Хушпу хыçĕ

1752. Пÿрт хыçне хуран хуп тăратнă.
1753. Пÿрт хыçне хуп тăратнă.

### Хушпу ярапи

1754. Тумла тумлать, çĕре тивмест.

### Чăлха

1755. Хăвăлта хăнтăр выртать.

### Чепчушка

1756. Икĕрĕлчĕк-кукăрăлчăк, утмăл икĕ кукăрăлчăк.

### Чĕрçитти

1757. Вĕл-вĕл чечек, вĕл чечек, вĕлле çинче пĕр чечек.

### Шăрçа

1758. Ерчен-мерчен, варринче вĕрен.
1759. Ерчен çине мерчен, варринче вĕрен.

1760. Чăмăр пăрçан хакĕ хаклă.
1761. Атаккин çăмарти аллă пус.

### Шупăр

1762. Вăртти-вартти Варвари, кайма-килме пĕр юлташ.

### Пӳштĕрлĕ шупăр

1763. Чăнтăрлă-мăнтăрлă, сарă тĕрлĕ, çурăм урлă.

### Тĕрленĕ шупăр

1764. Чăнтăрлă-мĕнтĕрлĕ, сарă тĕрĕ çурăм урлă.

### Шӳлкеме

1765. Пĕр ен хуплăх, тепĕр ен пасарлăх.
1766. Пĕр ен хуплăх, тепĕр ен çутлăх.
1767. Пĕр ен тыналăх, тепĕр ен патшалăх.
1768. Пĕр ен пăрулăх, тепĕр ен патшалăх.
1769. Тухри çинче Круня, ал лаппи çинче Татьяна.
1770. Вĕрене вĕр улттă, çӳппи-çаппи çĕр улттă.

### Улача кĕпе

1771. Алтакким-калтакким, çĕр сакăрвун çăмарта.

## ĔÇМЕ-ÇИМЕ

### Консерва.

1772. Йĕс пуракра тутлă шăрттан.

### Кукăль

1773. Тĕр-тĕр, тĕр карта, вуникĕ сурăх — пĕр карта, пурте татăк хӳреллĕ.
1774. Пĕр картара сурăх мăйне пăрса хурăп.
1775. Пĕр карта сурăхăм пур, пурте мăйпăран.
1776. Пĕр карта сурăх, пурте пĕр майлă.
1777. Кĕленкене мăйне пăрса лартнă.
1778. Кăмакара Алюш пĕççи выртать.

### Кулач

1779. Пăшти-пашти тăмаши-яши.

## Пашалу

1780. Ҫăмакара мами тенки выртӑ.
1781. Ҫăмака айĕнче хĕреслĕ тенкĕ выртӑ.
1782. Ҫăмакара пилĕк пус укҫа выртать.
1783. Истĕр-пистĕр кулачă.

## Пӳремеч

1784. Тĕнче пĕрес, ҫанталăк сарас.

## Пыл

1785. Явман кантăра, ҫăрман чуста.

## Пылпа сахăр

1786. Йăм! тăсăлаканне илетни, шарт! катăлаканне илетни?

## Салат

1787. Ҫăмака ҫинче хуртлă кĕҫҫе выртать.
1788. Сак ҫинче хуртлă кĕҫҫе выртать.
1789. Сак айĕнче пăшăлти пăтти пĕҫереҫҫĕ.

## Салма

1790. Тимĕр вакка вак ҫерҫи.
1791. Пĕр вакка хĕрĕх ҫерҫи тăкăнать.
1792. Пĕр вакка хĕрĕх ҫерҫи тирĕннĕ.
1793. Пĕр вакра шутсăр ҫерҫи сикет.
1794. Ĕнтен пиче сиксе ташлать.
1795. Асатте кăмака ҫинче урине ҫĕрелле уснă.

## Салмасемпе кашăк

1796. Пин сурăх шыва сикрĕҫ, кĕтӳ ачи вĕсем хыҫҫăн чăмрĕ.

## Сахăр

1797. Юртан шурă, пылтан пылак.
1798. Эп пурă пек шурă, пурте мухтаҫҫĕ мана, пурне те кăмăла килеп, анчах шăлсене пĕтереп.
1799. Нимрен хытă, нимрен тутлă.

## Сăра пички

1800. Кӳпнĕ сурăх сакайĕнче выртать.

## Сĕт

1801. Шĕвĕ — шыв мар, шурă — юр мар.
1802. Кăмакана кĕмест, кĕрекене лармасть, ăна çимен çын çук.
1803. Пиçмен, хуçман, сĕтел çине хуман, ăна çимен çын та çук.
1804. Çăрман, çупман, çатмапа пĕçермен, çу сĕрмен, тăвар яман, ăна çимен çын çук.
1805. Пиçмесĕр, хуçмасăр хырăм тăрантарать.
1806. Сĕтел çине хумаççĕ, çĕçĕпе касмаççĕ, ăна çимен çын та çук.
1807. Алăпа тытман, кăмакана хывман, сĕтел çине хуман, çĕçĕпе касман, ăна çимен çын çук.
1808. Пиçмесĕр, хуçмасăр, сĕтел çине хумасăр мĕн çийĕп?
1809. Ик-так чăмăртак, иккĕн тытса çимелле.
1810. Çăл пур тăвайккинче икĕ кăвакал ларать.

## Çăкăр

1811. Патакпа хĕртеççĕ, чулпа хĕстереççĕ, кăварпа пĕçереççĕ, çĕçĕпе вакласçĕ, çавăнпа та мана пурте юратаççĕ.
1812. Çиелти хытă, варри çемçе, айĕ шурă.

## Çăмарта

1813. Шур пичкере икĕ тĕслĕ сăра.
1814. Пĕр кĕленчере икĕ тĕслĕ эрех.
1815. Шур пичкере икĕ тĕслĕ сăра, темĕн чул пăтратсан та пĕр-пĕринпе хутшăнмаççĕ.
1816. Тулĕ шурă, ăшĕ хĕрлĕ.
1817. Сарă арчанăн çĕвви çук.
1818. Çĕнĕ çĕлĕкĕн çĕвви çук.
1819. Шурча чиркĕвĕн алăк çук.
1820. Пĕчĕкçеç шурă пӳрт, уçса кĕме алăк çук.
1821. Шурă хуланăн хапхи çук.
1822. Пирĕн кăшăлсăр пичкесем нумай, вĕсен пăкки те çук, ани те çук.
1823. Чăп-чăмăркка пӳртĕм пур, ниçтан кĕме шăтăк çук.
1824. Шурча чиркӳ — шур чиркӳ, ниçтан кĕме алăк çук.
1825. Уçăлмасть, хупăнмасть, çынна курăнмасть.
1826. Шурă пуçлă шур арча лартсан — лармасть, тăратсан — тăмасть.
1827. Чĕрĕрен вилĕ çуралать, вилĕрен чĕрĕ çуралать.
1828. Юр-вар çук чухне кут муклашки.

1829. Юр-вар ҫук пирки кут муклашки.
1830. Қарта урлă ялт! сикет, ланкашкана ланк! анать.
1831. Ир те вак-вак, каҫ та вак-вак, валей вак-вак.

## Ҫу

1832. Шевенкем-шинкерем, шыва ятăм — путмарĕ, ҫĕре хутăм — ҫĕрмерĕ.
1833. Шĕввикĕм-шемкемер, шыва ятăм — путмарĕ, ҫĕре хутăм — курăнмарĕ.
1834. Шевеккĕм, шĕввиккĕм-шенкерĕм, шыва ятăм — путмарĕ.
1835. Шевиккĕм-шĕвиккĕм, шыва кайрăм — путмарăм.
1836. Пăнчăрт! шыва ятăм — путмарĕ.
1837. Шĕввиккĕм-шенкерĕм, шыва ятăм — путмарĕ.
1838. Шăвик шанкă шыва пăрахсан путмарĕ.
1839. Вутра ирĕлет, шывра путмасть.
1840. Шывра йĕпенмест, вутра йĕпенет.
1841. Сивĕрен те, патакран та хăрамасть, ăшăран хăрать.
1842. Хĕвелте ирĕлет, шывра хытать.
1843. Хĕвелпе ирĕлет, шывра шăнать.
1844. Сивве чăтать, ăшша чăтаймасть.

## Табак

1845. Туна шăмми тăп-тутлă, йытта патăм — ҫимерĕ.
1846. Тутлă-тутлă туна шăмми, тула пăрахсан — йытă ҫимĕ.

## Тăвар

1847. Ҫавра кӳлле ахах ятăм.
1848. Тĕпсĕр кӳлле чул ятăм.
1849. Атăл тĕпне якăр ятăм.
1850. Тинĕс тĕпне якăр ятăм.
1851. Атăл тĕпне вут чул ятăм.
1852. Тинĕс тĕпне чул ятăм, шыраса та тупаймăн.
1853. Аллăм тулли тăп-тулли, йытта парсан — вăл ҫимест, кушака парсан — кушак ҫимест.
1854. Тутлă туна шăнни, тула пăрахсан — йыт ҫимĕ.
1855. Тутлă-тутлă туна шăнни, тула пăрахсан — йытă ҫимĕ.
1856. Шур хăйăра ҫимен ҫын ҫук.
1857. Шывра ҫуралать, шывран хăрать.
1858. Шывра ҫуралать, шывра пĕтет.
1859. Шыв ҫинче ҫуралать, вут ҫинче тĕне кĕрет, шыва курсанах вилет.

1860. Шывра çуралать, вутра çитĕнет, ашшĕне курсан — каллех вилет.

### Хуплу

1861. Салатсан — такмак пек, пуçтарсан — пучах пек.

### Хурăн шывĕ

1862. Шурă ĕнен сĕчĕ пылак.

### Чей

1863. Хут арчара хура тăпра.

### Чуста

1864. Алăсăр-урасăр йывăç тăрне хăпарать.
1865. Пăшăлтатать, шăкăлтатать, анчах хыттăн калаçмасть.

### Шăрттан

1866. Қăмакара йĕпе пăру.

### Шăршламалли табак

1867. Йĕкĕр çăла кĕрпе ярăп.

### Эрех

1868. Пĕчĕк пичче пите хĕретет.
1869. Қуллин култарчĕ, симĕс сиктерчĕ.
1870. Қулава култарать, симĕсси сиктерет.
1871. Серти Макçи квакçи.

## ÇУРТ-ЙĔР

### Авăн вучаххи

1872. Асатте хуранне аллăн йăтаймĕç.
1873. Мăн асаттен хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ.
1874. Атте мар, анне мар, пуççапмасăр кĕреймĕн.
1875. Улпут мар, пике мар, тайăнмасăр кĕрес çук.
1876. Янкурас, мĕн курас, пуççапмасăр кĕреймĕп.
1877. Çăварне карса пуп тăрать.
1878. Пачăшкă çăварне карса тăрать.

## Авăн йывăççи

1879. Хĕрĕх чăрăш — пĕр турат.
1880. Хĕрӳ-хĕрӳ хĕрĕх хыр, хĕрĕх хырăн пĕр тăрă.
1881. Хĕрĕх йывăçăн тăрри пĕрре.
1882. Хĕрĕх йывăçăн пĕр тăрă.
1883. Хĕрĕх йывăçăн тăррисем пĕр çĕрте.
1884. Тĕпĕ хĕрĕх, тăрри пĕрре.
1885. Пĕр тăраллă, хĕрĕх кутлă.
1886. Хĕрĕх кут, пĕр тăрă.
1887. Хĕрĕх салтак, пĕр калпак.
1888. Хĕрĕх шаршан, тăрри пĕр.
1889. Тĕпĕ çитмĕл, тăрри пĕрре.
1890. Уй варринче йĕке чĕресĕ ларать.
1891. Кĕрӳ çинче çĕлĕк, хĕр çинче пĕркенчĕк.
1892. Кĕркунне кĕрĕкпе, çуркунне çурхахпа.
1893. Тул ен тутлăх, шал ен выçлăх.

## Авăн хуранĕ

1894. Асатте хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ.

## Алăк

1895. Выртсан — ут вырăнче, ларсан — черкке вырăнче.
1896. Икĕ кинĕ ларать, хунямăшĕ ĕçлет.
1897. Хуняшшĕпе хунямăшĕ пăхса лараççĕ, кинĕ чупса çӳрет.
1898. Икĕ тăшман хире-хирĕç пăхса тăраççĕ.
1899. Икĕ тухатмăш хире-хирĕç.
1900. Иккĕн выртаç, иккĕн ура çинче тăраç, пиллĕкмĕш пăхса тăрать, улттăмĕш çавăтĕ.

## Алăк кĕли

1901. Пĕчĕк анчăк кукланчăк, анчăк арăм çакланчăк.
1902. Шăнкăрч кайăк, туппи çарăк.
1903. Алăк патĕнче Энтри пӳрни çакăнса тăрать.

## Алăк тăпси

1904. Ни тулта, ни шалта çерçи йăви.
1905. Пӳртре те мар, тулта та мар пĕр пĕчĕк кайăк йăви.
1906. Ни тулта мар, ни шалта мар шăпчăк йăва çавăрнă.

## Алăк хăлăпĕ

1907. Килен-каян ал тытать.
1908. Пĕчĕкиççĕ кинĕм пур, килен-каян ал тытать.
1909. Хур-кăвакал ӳстертĕм те, килен-каян ал тытать.
1910. Пĕр çын тунине пин çын тытать.
1911. Пĕр çын тăвать, пин çын тытать.
1912. Пĕр çынна хĕрĕх çын ал параç.
1913. Кайнă чух та ал парап, килнĕ чух та ал парап.
1914. Мана кĕнĕ чух та, тухнă чух та ал параççĕ.
1915. Пирĕн атти кăвапине пин çын тытĕ.
1916. Пĕр çын кăвапине çĕр çын пырса тытĕ.
1917. Пĕр кинемине кăвапинчен туртса кăларăп.
1918. Пĕр çын хăлхине пин çын туртать.
1919. Пĕр вăкăрăн хӳрине хĕрĕх çын туртать.
1920. Пăру хӳри пăкăлтĕ.

## Алăк янаххи

1921. Ик тутар тăнă çĕртех хытса кайĕç.

## Арпалăх

1922. Çулла — выçлăх, хĕлле — тутлăх.
1923. Хĕлле тутă, çулла выçă.
1924. Хĕлле мăнтăрланать, çулла начарланать.

## Аслăк

1925. Çитти-питти, пархун питти.

## Ашăм юпи

1926. Хура кĕççе çинче пĕр хĕр ларĕ.
1927. Йĕтем варринче ват старик ларать.

## Йĕтем

1928. Анкартинче çавра çатма ларать.
1929. Хирте çара çатма ларать.
1930. Уй варринче çара çатма выртать.
1931. Мăн уйра мăн çатма.
1932. Маçак çатми—мăнă çатми, ниепле те тытса илеймĕп.
1933. Асаттен çатми — мăн çатма, тытса çавăрма мелĕ çук.
1934. Асаттен çатмине çавăрса çапаймăн.
1935. Асанне çатми—мăн çатма, ниçтан тытса ӳпĕнтерме çук.

1936. Маçак çатми — ман çатми, çапатăп-çапатăп — çĕмĕрĕлмест.
1937. Уй варринче кĕсел тирки ларать.
1938. Анкартинче хура кĕççе сарнă.
1939. Хĕлле тутă, çулла выçă.

## Йĕтем, авăн йывăççи, çапуççи, кĕлте

1940. Амăш лаптак, ашшĕ шĕвĕр, ывăлĕ ухмах, хĕрĕ лăстах.

## Йĕтем юпи

1941. Хуньăм хĕрĕ хура кĕççе çинче ларать.
1942. Пăр та çăвать, юр та çăвать, Пăртас хĕрĕ тулта тăрать.

## Карта юпи

1943. Хунямăшĕнчен кинĕ вăрăм.
1944. Икĕ пиччен пĕр пиçиххи.
1945. Икĕ мужик пĕр пиççипе.
1946. Икĕ çынна пĕр кушшакпа çыхаççĕ.

## Каштасем

1947. Сарай тулли сарă хĕр.

## Кăмака

1948. Амăшĕн аллă саплăк, хĕрĕн хĕрĕх саплăк.
1949. Пĕр майран çĕр саплăк.
1950. Ахмат кӳминеултă лаша туртаймасть.
1951. Кайми-килми кӳме ларать.
1952. Улпут павускин турти çук.
1953. Кутăн йысна шурă кĕпе тăхăннă, янаххи айĕ мачча-на тивет.
1954. Вăрăм йысна шурă кĕпе тăхăннă.
1955. Шаймак, шакмак, шап-шурă шупăр тăхăннă.
1956. Варринче пуставлăх, икĕ хĕрринче шупăрлăх.
1957. Икĕ ен шупăрлăх, вăта çĕрти капталлăх.
1958. Кашни килте шур упа.
1959. Асаттен вăрăм çипиркке.
1960. Алăсăр-урасăр, шап-шурă питлĕ ларать.
1961. Çамки хура, чĕлхи хĕрлĕ.
1962. Çамки хура, ăшĕ хĕрлĕ.

1963. Нумай çиет, тăранмасть.
1964. Хĕлле çиет, çулла канать.
1965. Ӳчĕ ăшă, чунĕ çук.
1966. Çулла çывăрать, хĕлле çиет, ӳчĕ ăшă, юнĕ çук.
1967. Пĕр карчăк çăварне хĕрĕх шăрпăк кĕрет.
1968. Çак пӳртре мĕн пысăк?
1969. Тăлăпĕ пӳртре, çанни тулта.

## Кăмака, çулăм, тĕтĕм

1970. Амăшĕ самăр, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ паттăр, пĕлĕт патне кайнă.
1971. Амăшĕ хулăн, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ çӳле каять.
1972. Амăш пысăк, хĕрĕ хĕрлĕ, ывăлĕ кăтра.

## Лаç

1973. Хура сыснан тӳрчĕ шăтăк.

## Мачча кашти

1974. Аçу пуçĕ тулалла.
1975. Энтри шалта, пуçĕ тулта.

## Мачча каштипе хăмисем

1976. Пĕр салтак çине пин салтак пуç хурать.
1977. Пуçлă-вĕçлĕ пуçана выртать.
1978. Утмăл кахал ура вĕçлĕ выртаççĕ.
1979. Ретюк ретĕм, Сенчук пĕччен.
1980. Утмăл нӳкер ура вĕçлĕ.

## Мăк

1981. Ула лаша утлантăм, кăмака тавра çавăрăнтăм.
1982. Сан сысна та хĕсĕннĕ, ман сысна та хĕсĕннĕ.

## Мăрье

1983. Мачча çинче маçак ларать.
1984. Пӳрт тăрринче вăрă ларать.
1985. Чипер аккийĕн пуç тӳпи шăтăк.
1986. Пĕр кĕпен хĕрĕх саплăк.
1987. Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк.
1988. Пĕр çĕлĕкре çĕр саплăк.
1989. Пĕр мулаххайăн çĕр саплăк.

1990. Пĕр кăмаканăн хĕрĕх шăтăк.
1991. Пĕр вăкăр хĕрĕх çĕртен чашлатать.

### Нӳхреп

1992. Хĕлле — çулла, çулла — хĕлле.
1993. Çулла сивĕ, хĕлле ăшă.
1994. Ăшă чух сивĕ, сивĕ чух ăшă.
1995. Хĕлле выçă, çулла тутă.
1996. Пĕр хуçанăн шăтăк хырăм.
1997. Хăй пӳрт пек, мĕлки çук.
1998. Кĕлетки пысăк, мĕлки çук.
1999. Мĕн асаттен хуранне çĕр аллă çын йăтаймасть.

### Нӳхрепри юр

2000. Уйăхран, хĕвелтен мĕн пытартăн?

### Пичуркка

2001. Уйăхĕ пур та, çути çук.
2002. Çур уйăхăн çути çук.
2003. Ăшши пур та, çути çук.
2004. Тăват чул çуртăн çути çук.

### Пусă

2005. Асаттен мăн çӳпçине нимле те йăтса ӳпĕнтереймĕн.
2006. Çĕнĕ савăтăн тĕпĕ шăтăк.

### Пусă валашки

2007. Хĕлле мăнтăр, çулла начар.

### Пусă тараси

2008. Тăрик! Кăлтăрк!
2009. Шен-шин, кăлтăр-кук!
2010. Шу-шу çĕлен, кăлтăртин тăр, янтă кăна çеклĕ.
2011. Лай-лай мулаххай апаш.
2012. Шă-ши кăна, йăнкăлтăм-кăлтăртин, тпру!
2013. Шĕпĕн-ши, кăлтăр-кук!
2014. Эхтем пĕçси хăй-хай!
2015. Текех пĕр пуçне хăпартать, тепĕр пуçне антарать.
2016. Алсăр, урасăр, турра пуççапать.
2017. Вăрăм вырăс пуççапать.

2018. Хура така кучёпе те, пуçёпе те сёкет.
2019. Улпутла ларать, шуйттанла кăшкăрать.

## Пусма

2020. Сак-сак сакăлтак, сакăрвун сакăлтак.

## Пÿрт

2021. Тултан сакăр кётеслё, шалтан тăват кётеслё.
2022. Шăтăк çамка — çутă куç, шукăль çамка—каçăр пуç.
2023. Хура-мара хуртумăш, хуп-хупланкă хупламăш.
2024. Çурăк çамка Ваçинкка.

## Пÿрт кётесси

2025. Пÿртрен тăваттă, тултан саккăр.
2026. Шалта тăваттă, тулта саккăр.
2027. Пёр пуçелёк çинче çёр çын выртать.

## Пÿрт пёрени

2028. Тулта чăмăр, пÿртре лаптак.
2029. Энтри шалта, пуçё тулта.

## Пёрене çурăкё

2030. Пирён пÿртре мён кулать?
2031. Алăкран кёрёп — акам курăп.
2032. Алăкран кёрёп — акам кулё.

## Сак

2033. Сазан пулă касмалла выртать.
2034. Ачи-пăчи месерле, ашшё-амăшё хăяклă.
2035. Улпети урăлса выртать, ачи-пăчи хирёлсе выртать.
2036. Пёр енё çутă, тепёр енё хура.

## Сак урисем

2037. Сакран çÿллё пулаймарăм, питрен хура каймарё.

## Сакпа урай

2038. Уравăша урлă, Эскетене тăрăх.

### Саксемпе чӳречесем

2039. Пӳрт тулли пӳремеч, унта-кунта кулач.

### Çатан

2040. Явман кантра.
2041. Икĕрĕлчĕк-кукăрăлчăк.
2042. Икĕрчĕк-кукăрчăк, утмăл ик кукăрчăк.
2043. Çăтăр-çатăр çатрашка, çитмĕл пилĕк кукрашка.
2044. Хĕçсĕр, кĕрсĕр ратне тĕртет.
2045. Ашшĕ-амăшĕ тӳрĕ, ачи-пăчи кукăр.
2046. Кукăр-макăр суккăр Якку.

### Çӳпĕ

2047. Салансан — сала пек, пуçтарăнсан — пушмак пек.
2048. Тĕпелте тĕпĕртĕк, алăк панче алтĕртĕк.
2049. Тух, тухатмăш, тулалла.
2050. Пӳртре мĕн ытлашши?

### Çӳп шăтăкĕ

2051. Çак пӳртре мĕн пуян?

### Тăмана шăтăкĕ

2052. Уйăх пур та, çути çук.

### Тăпрас

2053. Сакайĕнче кӳпнĕ сурăх выртать.

### Тĕкме

2054. Алмантейĕн аллă сурăх, аллăшин те пуçĕ çурăк.

### Тĕнĕ

2055. Хĕветӳçи çăварĕ — хура çăвар.

### Тĕренче

2056. Сакăрвун салтак, ик секлеттер, пĕр палушник.
2057. Сакăрвун салтак, икĕ шантар, пĕр улпут.

## Тураш

2058. Пирĕн пӳртре ют çын пур.

## Уй хапхи

2059. Уй хĕрринче Ухтилат.
2060. Ир те шак-шак, каç та шак-шак.

## Урай кашти

2061. Виçĕ çын пĕр çынна çĕклесе тăрать.

## Урайпа мачча

2062. Ик эсрелĕ хире-хирĕç пăхаççĕ.
2063. Уринепе Марине хирĕç пăхса кулаççĕ.
2064. Тарьепе Марье хире-хирĕç чуптăваççĕ.
2065. Урпа ани урлă, сĕлĕ ани тăрăх.
2066. Тулă анисем тăрăх выртĕç, урпа анисем урлă выртĕç.
2067. Урташ урлă, Исментер тăрăх.
2068. Мами мамăклă, кинеми кирĕклĕ.
2069. Мами пуçĕ мамăклă, кинеми пуçĕ кирĕклĕ.

## Урайпа стена

2070. Тьяккăн хăяккăн, пуп месерле.

## Хӳме

2071. Икĕ пуçĕнче икĕ этем, вăта çĕрĕнче çĕр этем.
2072. Çĕр пĕртăван пĕр ретре, пурте пĕрле çыхăнса тăраççĕ.

## Чӳрече

2073. Урлă-пирлĕ хыр кашта.
2074. Кукăр-макăр хыр каски.
2075. Лап-лап урапа, урлă-пирлĕ ӳрече.
2076. Урлă-пирлĕ, хĕреслĕ, куçлă.
2077. Хĕреслĕ-мĕреслĕ, çирĕм тăват кĕтеслĕ.
2078. Урлă-пирлĕ Урине.
2079. Урлă-пирлĕ Урине, хĕреслĕ-пирлĕ Хĕреççине.
2080. Урлă-пирлĕ Урине, хĕреслĕ-маслă Хĕреçук.
2081. Урлă шарт, пирлĕ шарт, каспичне тимĕр шарт.
2082. Касначейĕн каснă сакки, урлă-пирлĕ тăрăх сакки.
2083. Урлă сак, пирлĕ сак, касначейĕн тимĕр сак.

2084. Урлă шерте, пирлĕ шерте, касначейĕн тимĕр шерте.
2085. Пĕр карчăкăн ултă куç.
2086. Емелкке куçĕ чарлака.
2087. Арăлтăк-ярăлтăк, Емелкки куçĕ чарăлтăк.
2088. Ирĕлти, ярăлти, Мемекке куçĕ чарăлти.
2089. Ирĕлчĕк-чарăлчăк, Эхмет куçĕ чарăлнă.
2090. Арăлчăк-чарăлчăк, Нямат куçĕ чарăлчăк.
2091. Икĕ айккинче кулачă, варринче пӳремечĕ.
2092. Унта-кунта пĕр кулач.
2093. Ани кантăк, йăранĕ йывăç.
2094. Тăват-тăват кашкăр, тăваттăш та кăвак кашкăр.
2095. Пĕр кĕперĕн улт шăтăк.

## Чӳрече кантăкĕ

2096. Хĕвел витĕ, çу витмĕ.
2097. Хĕвел витĕ, çумăр витмĕ.
2098. Ăшша тӳсĕ, сивве тӳсĕ, патака тӳсеймĕ.
2099. Пӳртре шăнать, тулта шăнмасть.
2100. Ќăт! тĕксен, мăрт! пулать.
2101. Лап! турăм та — чалтăр! турĕ.
2102. Чи! шарт, пи! шарт, йĕтĕн кĕпи çанни шарт.
2103. Хăй хут пек, йĕп кĕмест.

## Чӳрече сули

2104. Икĕ шăнкăлĕ выртаççĕ, икĕ пиччĕшĕ тăраççĕ.
2105. Икĕ эсрел хире-хирĕç пăхĕç.

## Чӳрече хуппи

2106. Ќăвак така кучĕпе те, пуçĕпе те сĕкет.
2107. Икĕ такам пур, кута-кутăн тĕкĕшеççĕ.
2108. Ќантăкран катемпи пăхĕ.
2109. Сӳлти хапхи ярăнчăк.
2110. Шăл-шалт! Матви.
2111. Аршак, аршак, арча çинче тимĕршак.

## Чӳречепе алăк

2112. Вырăспа майри хире-хирĕç пăхса лараççĕ.

# ХУÇАЛĂХРИ ХАТĔР-ХĔТĔР

## Автомобиль

2113. Тăвата кăлтăркка, икĕ йăлтăркка, пĕр мăрăлкка.

## Акапуç

2114. Уй варринче пĕкреç сысна выртать.
2115. Мĕкĕрт сысна çĕр хăйрĕ.
2116. Хирте тимĕр чĕрнеллĕ асамçă çĕр чавать.
2117. Хирте Расман [131] алси ларать.
2118. Тимĕр шăллă карчăк, ури сенкĕ пек, пур тĕнчене тăрантарать, анчах хăй выçах пурăнать.
2119. Пĕри йĕр тăвать, тепри хăйпăтать.
2120. Кукăр-макăр мăйрашки, кукаçейĕн куклешки.
2121. Мăйракинчен тытмасăр ĕç пулмасть.

## Ала

2122. Вăрмана кайрăм — касрăм, çула тухрăм — аврăм, киле килтĕм — çĕлерĕм, варри—тиха тирĕ, хĕрри — пăру тирĕ.
2123. Вăрмана кайрăм, касса килтĕм, пĕкĕртрĕм.
2124. Йĕри-тавра çăкалăх, варринче ахахах.
2125. Йĕри-тавра ăвăслăх, варри и-ха-ха.
2126. Хăй çĕнĕ, шăтăк.

## Алă арманĕ

2127. Кăр-кăр хура, аркă вĕçĕ — хăю.
2128. Вити-вити вирьяла, арки вĕçĕ хăюллă.
2129. Чипер инке вăрт-варт, арки вĕçĕ хăюллă.
2130. Вăр-çаврашка, арки вĕçĕ кĕпеллĕ.
2131. Вăрт Варвари, арки вĕçлĕ шупăрлă.
2132. Тумаль, тумальрен катмаль, катмалĕ катăлмĕ, хĕрĕх те пĕр çăрхалĕ, мăнтăр купи купалĕ.
2133. Упи кăшкăрать, тĕкĕ тăкăнать.
2134. Çеçкесĕр çарăк, хŭресĕр карăк.

## Алмаз

2135. Инкĕч-минкĕч, кĕленче çинче пĕр пĕрчĕк.
2136. Инчĕ-пинчĕ, хывăх çинче пĕр пĕрчĕ.

## Алтăр

2137. Алтăр-малтăр вăт такой *(йĕкĕр ывăçа тытса кăтартаççĕ)*, шай-вай-вай-йо *(чавса таран ал тунине тытса кăтартаççĕ)*.

## Алшăлли

2138. Хăй çĕлен пек авкаланать, чунĕ çук.

2139. Ķилĕрен ластăк.
2140. Ķашни килте Матĕрне.
2141. Ķашни килте ватă тутар пур.
2142. Лăпсăр-лапсăр кинĕм пур, килен-каян чуптăвать.
2143. Виçĕ пуслăх таварĕ çук, çĕр çын пырса килĕшĕ.
2144. Çичĕ пуслăх тавара çĕр çын пырса килĕшĕ.
2145. Алашит, палашит, вутамина килешит.
2146. Çийĕмре-пуçăмра татăк çук, ыр çын умне тăратăп.
2147. Упиккăм, тупиккăм, ăна тупмасан, арăмсăр юлан.
2148. Упиккĕн-тупикĕн, çавна тупмасăр шанчăксăр.

## Ана йăранĕ

2149. Уй варринче масмак выртать.
2150. Уйра тимĕр кисĕп выртать.
2151. Уй тăрăх пăта тăсăлса выртать.
2152. Сарлакăшĕ сарăлса выртать, вăрăмăшĕ тăсăлса выртать.
2153. Вăрăм вырăс çул кăтартать.

## Арман чулĕ

2154. Çеçкесĕр çарăк, хӳресĕр карăк.
2155. Кăвак сурăх кĕрте ларать.
2156. Хăйĕн çимелли çук, тĕнчипе тăрантарать.

## Ăйă

2157. Пĕчикĕç пикемпи пин çапсан та вилмĕ.
2158. Пĕчĕк пичи пин çапсан та вилмест.

## Ăса

2159. Суккăр сурăх тĕкме витĕр тĕкет.
2160. Пĕр кăвакалăн ик сăмса.

## Балалайка

2161. Вăрманта ӳсет, алăра макăрать, урайĕнче ташлатать.

## Валашка

2162. Пĕр пичче икĕ пуçлă.
2163. Хĕлле мăнтăрланать, çулла начарланать.
2164. Хĕлле мăнтăр, çулла начар.

## Вăлта

2165. Пулли тинĕсре, хӳри сапур çинче.

## Вăчăра

2166. Икĕрчĕк-кукăрчăк, утмăл ик кукăрчăк.

## Витре

2167. Ир те вик-вик! каç та вик-вик!
Мĕншĕн вик-вик пултăм-ши?

2168. Пасартан килен Паймичей пилĕк пиçихиллĕ, икĕ хăлхаллă.
2169. Хăлхисем пур та — илтмест.
2170. Икĕ пичче кунĕпех шыва кĕме каяççĕ.
2171. Қайнă чух чиперех каять, килнĕ чух хăсса килет.
2172. Қайнă чух юрла-юрла, килнĕ чух хăса-хăса.
2173. Қайнă чух юрласа кайнă, килнĕ чух макăрса килнĕ.
2174. Сӳс вĕрен вĕçĕнче ăйăр вылять.
2175. Хĕлĕп арăмĕ — йĕпе пуç.
2176. Нестĕр арăмĕ — йĕпе кут.
2177. Ластăр арăмĕн кучĕ — лач шыв.
2178. Лутăр карчăкăн кучĕ лачкам.

## Вут сыппи

2179. Қăмака çинче суккăр старик выртать.

## Вут çинчи хуран

2180. Хура йытти çакăнса тăрать, хĕрлĕ йытти вĕрсе тăрать.
2181. Хура йытти харсăррăн пăхать, хĕрлĕ йытти çаплах вĕрет.
2182. Хура ĕнене хĕрлĕ йыт сыртать.

## Гидроплан

2183. Хăй сывлăшра вĕçет, канма тинĕсе анать.

## Йĕке

2184. Вĕрен вĕççĕн тиха (лаша, сысна) самăртăп.
2185. Пĕчĕкçеççĕ утăм пур, вĕрен вĕççĕн мăнтăрланать.
2186. Чĕлпĕр вĕççĕн лаша мăнтăрланать.

2187. Пĕчĕкçеççĕ тиха (тур лаша) вĕрен вĕççĕн тăранать.
2188. Пĕр лашана вĕрен вĕççĕн вылятăп.
2189. Мĕн чухлĕ çаврăнать, çавăн чухлĕ хулăнланать.
2190. Ик хырăмлă, пĕр пилĕклĕ.
2191. Пĕр вĕçĕ пымак, тепĕр вĕçĕ шĕвĕр.

### Йĕлтĕр

2192. Пуччушшинчен пушăчĕ вăрăм.
2193. Павăлпа Савăл ăмăртса чупаççĕ.

### Йĕлтĕр йĕрĕ

2194. Уйра шур сурпан выртать.

### Йĕнер

2195. Икĕ пуçлă лашам пур.
2196. Йĕкĕрĕлчĕк-кукăрăлчăк, ик айăкки авăнчăк.
2197. Улăхрăм çӳллĕ ту çине, лартăм сăран минтер çине, урана тимĕрпе кăшăлларăм.
2198. Истал-пустал тĕпел тĕрши.

### Йĕнерчĕк

2199. Лашаран çӳллĕ, автанран (чăхăран, курăкран) лутра.
2200. Курăкран лутра, утран çӳллĕ.

### Йĕп

2201. Тимĕр йыттăн (шăшин) сӳс хӳре.
2202. Йĕс шăши — сӳс хӳре.
2203. Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă пĕр кĕрет те пĕр тухать.
2204. Кучĕ шăтăк, пуçĕ шĕвĕр.
2205. Пирĕн пӳртре кам хыткан?

### Йĕрĕлче

2206. Ачама пиçиххи çыхап.
2207. Тимĕр пуканăн варри пур.

### Йĕрĕх

2208. Икĕрчĕк-кукăрчăк, Ехветĕр ватти кукăрчăк.

## Калăп

2209. Каласан та — калăп, каламасан та — калăп.
2210. **Çич кĕтеслĕ чăсмака.**
2211. Пĕр вĕçĕ виç кĕтес, тепĕр вĕçĕ тăват кĕтес, пĕлсен те — калăп, пĕлмесен те — калăп.
2212. Пĕр пуçĕнче тăватă кĕтес, тепĕр пуçĕнче виçĕ кĕтес, пĕлмесен — хам калăп.
2213. Пирĕн килте çичĕ кĕтеслĕ япала пур, пĕлмесен — хам калăп.
2214. Юмах ярăп, туппине хамах калăп.
2215. Курити çемçе, ути хытă.
2216. Арпийĕ куритинчен хытă.

## Капан

2217. Пĕр пичкен хĕрĕх кăшăл.

## Капанпа кĕлте

2218. Ашшĕнчен-амăшĕнчен малтан ачи çуралать.

## Каска

2219. Пўрт умĕнче сысна тăрать.
2220. Пути муклашки.

## Катка

2221. Пĕр улпутăн тăват пиçиххи.
2222. Кĕлетки юман, пиçиххи хăва.

## Катмак

2223. Хăй курпун, чунсăр, çĕр чавать.

## Кашăк

2224. Пĕчĕк кинĕм пур, ирĕн-каçăн чуптăвап.
2225. Пĕр çын тунине пин çын çулать.
2226. Çатан пўртре вĕт халăх: тытсан — калаçаççĕ, тытмасан — калаçмаççĕ.

## Кăвас калакки

2227. Ырă çын хĕрĕ Ухтепи.
2228. Килĕрен Настаççи.

## Кӑвас чӗрес

2229. Çак пӳртре мӗн пуян?

## Кӑкшӑм

2230. Кӑвак така мӑйне пӑрса шыв ӗçет.
2231. Хура така шыва анать.

## Кӑранташ

2232. Пӗрене ӑшӗнче хура çӗлен.

## Кӑрман

2233. Армак-чармак Пӑритун.

## Кӑшкар

2234. Тулашӗ тутӑ, ӑшӗ выçӑ.
2235. Шалаш выçӑ, тулаш тутӑ.
2236. Вӑр-вӑр вӑрханти, турат куçӗ турханти.
2237. Вӑр-вӑр вӑркамн, турат куç тӗркеми.
2238. Упӑти пиччен пуç кукӑр.

## Кӗленче

2239. Мамаккин тути тавӑрӑннӑ.
2240. Пирӗн инкин тути тавӑрӑнчӑк.
2241. Кучӗ сарлака, тӑрри шӳреке.
2242. Симӗс чиркӳн тӑрри шӑтӑк.

## Кӗлте

2243. Пин çармӑсӑн пӗр пиçиххи.

## Кӗнеке

2244. Ани шурӑ, вӑрлӑхӗ хура.
2245. Шурӑ ана, хура вӑрлӑх.
2246. Пуçӗ çук — этемрен нумай пӗлет.
2247. Хӑйне çӗленӗ — темӗн те калаçать.
2248. Кӗпе мар — çӗленӗ, йывӑç мар — çулçӑллӑ, çын мар — каласа парать.
2249. Пӗчик япала тӗнче çавӑрать.

### Кĕнчелеççи

2250. Кукăр çака айĕнче Ене ятлă хĕр хӳхлĕ.
2251. Ени выртать, хӳри тăрать.
2252. Ват качака — мăк сухал.
2253. Пăтавккана кĕмест, ывăçа кĕрет.
2254. Кукăр туна Марина.

### Кĕпе кĕвенти

2255. Çырмара икĕ майра (сар хĕр, туй арăмĕ) ташласа тăраççĕ.
2256. Уй варринче икĕ эсрелĕ ташлĕ.
2257. Тăрсан — çăмарта ырăнĕ илĕп, выртсан — лаша вырăнĕ илĕп.

### Кĕпер

2258. Ик çыран хушшинче улăп выртать.
2259. Уртемей мучи çырма урлă ӳпĕннĕ.
2260. Чике старик шыв урлă чикĕнсе выртать.
2261. Мăн йĕнер айĕпе шыв юхать.

### Кĕрепле

2262. Шăлĕ пур — çыртаймасть.
2263. Урташ — урлă, Исментер — тăрăх.

### Кĕсле

2264. Чунсăр-юнсăр — юр юрлать.
2265. Вунă пӳрне сиккелĕ, чăрăш йывăç чĕтренĕ, ăшри ӳте макăртĕ.
2266. Вуник пӳрне шалт та шалт.
2267. Палан палт-палт, вуникĕ пӳрне шалт-шалт!
2268. Палан йывăççи парт та парт! Пилĕк пӳрне шарт та шарт!
2269. Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен, лăппи-лаппи хур ури.
2270. Лаппин-лаппин хур ури, кăлттин-кăлттин чĕп ури.
2271. Чăнкăр-чанкăр чăх ури, лай-лай хур ури.
2272. Кăтьăр-кăтьăр кăткă тĕмески, Ураскилт — Мемет упăшки.

### Кĕсмен

2273. Каялла мăйрака, лаптăк кут.

## Кĕççе

2274. Ҫăнтăрла труба пулать, каçхине лекке.

## Килĕ

2275. Туп-тупансăр, тупансăр, тулти вăкăр каçансăр.
2276. Туп-туп тупансăр, тути мăкăрç, каçансăр.
2277. Туп-тупинке, тупинке, туртса кайрăм, туртса килтĕм.
2278. Тулти вăкăр каçансăр.

## Кимĕ

2279. Яка çул, йывăç лаша, çимесĕрех турттарать.

## Комбайн

2280. Сарă тинĕсре карап çӳрет.

## Краççын

2281. Шыв çинче путмасть, çĕр çинче путать.

## Краççын лампи

2282. Тунката çинче çутти пур.
2283. Тунката çинче çутă пуç.
2284. Лап çăпата, çутă куç.
2285. Лап çăпата, çутă пуç, çинçе пилĕк, хура куç.
2286. Лап çăпата, çинçе пилĕк, хĕрлĕ сăмса.
2287. Ҫинçе пилĕк-çурăм, чăл-чăл куç.
2288. Лап урасăм, çинçе пĕвĕм, чĕл-чĕл куçăм.
2289. Чăл-чăл куçлă, лай-лай хăлхаллă.
2290. Лапша ураллă, çинçе пилĕклĕ, ял-ял куçлă.
2291. Чăр-чăр куçлă, мăн хырăмлă.
2292. Ҫӳлте çăлтăр, аялта çăл.
2293. Пĕчĕк пиччен пин шăтăк, пысăк пиччен пĕр шăтăк.
2294. Чипер акин пуç тӳпи шăтăк.
2295. Пин пин пин шăтăк, Микулайăн пĕр шăтăк.
2296. Пин-пин шăтăк, пин шăтăк, пирĕн Микулайăн пĕр шăтăк.
2297. Пирĕн Микулан хĕрĕх шăтăк.
2298. Ҫийĕ чашăк пек, ăшĕ чăмăр пек.
2299. Йк çумăр пĕлĕчĕ хушшинчен хĕвел пăхать.
2300. Ёмĕрсĕр çăлтăр пĕр пӳрте анчах çутатса тăрать.

2301. Ҫӳлте ҫăлтăр, аялта ҫăл.
2302. Мӳклеке, мӳклеке, мӳклеке тăрринче ҫавра ҫап-ҫутă.
2303. Йĕтем, йĕтем варринче вут.
2304. Кĕленче пӳртре ылтăн шăллă карчăк ларать.
2305. Якур арăмĕ яла тухмĕ.
2306. Патша хĕрĕн пурҫăн ҫӳҫ.
2307. Кĕленче чиркӳ ăшĕнче пĕр хĕр кĕлтăвать.
2308. Пĕчĕк аппан хырăмĕ пысăк.
2309. Мăн хырăмлă асаннен шăлĕсем тимĕр.
2310. Пĕрĕлчĕк, чарăлчăк, Илтирей куҫĕ чарăлчăк.
2311. Килĕрен ясар.
2312. Пĕр пӳртĕн ҫĕр чӳрече.
2313. Катка, катка тăрринче пичке, пичке тăрринче ывăс.

## Краҫҫын лампин ывси

2314. Пĕр енĕ — кантăр вăрри икерчи, тепĕр енĕ — тăпăрч икерчи.

## Кравать

2315. Улт уралла, ункайлă [132], мамăк тӳшек манерлĕ.

## Кравать, пукан, лампа

2316. Алăк патĕнче улт уралли, тĕпелте тăват уралли, сĕтел ҫинче пĕр уралли.

## Купăс

2317. Чике старик, хур сухал.
2318. Ай, тет, вай, тет; чунĕ пур та, юнĕ ҫук.
2319. Вăрманта ҫуралать, килте макăрать.
2320. Йынăшать, макăрать, ăша-вара ыталать.
2321. Палан-палан пат та пат, пилĕк пӳрне шалт та шалт.
2322. Хутлă-хутлă хутаҫлă, хура сăран атăллă.

## Курка

2323. Утьăкки, шыва!
2324. Натякка, шыва!
2325. Шахчă шыва каять.
2326. Пĕчĕкиҫ утĕкки шыв ҫинче ярăнса ҫӳрет.
2327. Иван пичи шыва кайĕ, шыва кайсан — кăларĕ.
2328. Кăвакалĕ шывра, хӳри карта ҫинче.

2329. Ӑвакал шыв ҫинче, хӳри ту ҫинче.
2330. Пулли шывра, хӳри сӑртра.
2331. Пӗчӗкҫеҫҫӗ Пинекей, килен-каян чуптӑвать.
2332. Чипер ҫын, килен-каян чуптӑвать.
2333. Пӗчӗкҫеҫ кинӗм пур, килен-каян чуптӑвать.
2334. Пирӗн инкене пит юратаҫҫӗ, пымассерен чуптӑваҫҫӗ.
2335. Пӗр ҫын тунине пин ҫын чуптӑвать.
2336. Пӑхӑр ҫӗленӗн хӳри кукӑр.

## Кусар

2337. Ӑвак така ту ярӑнать.

## Кустӑрма

2338. Тӑваттӑн пӗртӑван, пӗрне-пӗри кураҫҫӗ, пӗр-пӗрин патне пыраймаҫҫӗ.
2339. Вӑр-ҫаврашка, варри шӑтӑк.
2340. Ҫулла ҫу ҫиет, хӗлле типӗ тытать.

## Куҫлӑх

2341. Улпут урапин турти каялла.
2342. Каять пуш утпа, ларнӑ каялла, пӑхать малалла.
2343. Хӑй утланнӑ, урине хӑлха ҫине хунӑ.

## Кутамкка

2344. Хирелле кайнӑ чух ялалла пӑхать, яла кӗнӗ чух хирелле пӑхать.

## Лампа

2345. Йӑлтӑр-йӑлтӑр Илмельял [133], ҫинҫе пилӗк Киремет [134], пысӑк кут Мӑкшӑ [135].

## Лапатка

2346. Хура аппа икӗ енчен ҫупать.

## Лаххан

2347. Виҫ уралла, ик хӑлхаллӑ.
2348. Виҫӗ ура, тӑваттӑмӗш — хырӑм.
2349. Ик хӑлхаллӑ, мӑн хырӑмлӑ, виҫ уралла.

2350. Ик ăлхаллă, виç ураллă, варринче хырăм.
2351. Виç ураллă, ик хăлхаллă, нимĕне те тиркемест.

### Лашапа çара çуна шăлĕсем

2352. Тăваттăн тăраççĕ, саккăрăн хăвалаççĕ.

### Маяк

2353. Хĕлле ларать, çулла ÿкет.
2354. Уй варринче качака кутăн ташлать.

### Мелке

2355. Кăмакара упа ташлать.
2356. Кăмакара лăпсăр-лапсăр упа ташлать.
2357. Пĕчĕк мунчара упа ташлать.
2358. Пĕр упа кĕрĕ те пĕр карта сурăха пĕтĕмпе хăваласа кăларĕ.
2359. Пĕр лĕмсĕр йытă пĕр карта сурăха хăваласа кăларчĕ.

### Мелке валашки

2360. Кашни килтех пĕр пыл калакки.
2361. Килĕрен пыл чашки.

### Милĕк

2362. Пушăт Пухтан, симĕс сăхман.

2363. Пушăт Пуштан, кăвак сăхман,
Туртнă çыхнă пилĕкне,
Урлă лартнă çĕлĕкне.

2364. Пушăт Пуштан, симĕс кафтан.
2365. Хăй симĕс, кăвак тăхăнать, пилĕкне мунчала çыхать.
2366. Çĕтĕк-çатăк тумтирпе, крымски çĕлĕкпе, московски пиççипе.
2367. Синепи симĕс кĕрĕк тăхăннă, пилĕкне пурçăнпа çыхнă, хăй мунчана каять.
2368. Симĕс кĕпеллĕ, пурçăн пиçхиллĕ. Ан çап, каччăм, ан çап, каччăм,— аттене калăп.
2369. Пĕр лутра йĕкĕт пилĕкне туртса çыхнă, çĕлĕкне хуçса лартнă — хыптарать те çунтарать.
2370. Симĕс кĕпе тăхăннă, пĕр çынна та хĕнемесĕр хăвармасть.

## Минтер

2371. Пĕр кăвакалăн тăват сăмса.
2372. Алăсăр-урасăр кĕпе тăхăнать.

## Михĕ

2373. Сӳс кĕлетĕн мунчала çăра.
2374. Выçсан — выртать, тăрантсан — тăрать.
2275. Тăрантсан — тан тăрĕ.

## Молотилка

2376. Кĕлти кĕрет, тырри юлать, арпи вĕçет, улăм юлать.
2377. Унтри-кантри вут çурать, Ваçли арăм çăм тапать.

## Мотоцикл

2378. Уйра утсăр урапа кусать.

## Мунчала

2379. Килĕрен пăчăр.
2380. Хутлă-хутлă хучавчă, урлă-пирлĕ кĕперлĕ.
2381. Хуч-хучала, хучала хушши мамала.
2382. Пĕр пӳртре пĕр пăчăр.
2383. Унемĕш-кунĕмĕш, култăрин касак.

## Пакур

2384. Тӳрĕ те тӳрĕ, кукăр та кукăр, хӳри вăрăм.

## Параппан

2385. Хут пек çӳхе, хуп пек хытă.
2386. Тепĕр-тепĕр, тепĕртек, тăхăр така, пĕр путек.

## Патефон

2387. Пĕчĕкçеç кăвак арча: арча ăшĕнче шăрчăк пур, арча çинче шăпчăк пур; астарать те култарать, пур кăмăла тултарать.

## Пăрахут

2388. Ну! тесен — утмасть, тăр! тесен — тăмасть.
2389. Кайăп-кайăп — йĕр çĕтсех пырĕ.

2390. Ну! тесен — утмасть, тăр! тесен — тăмасть, çиме парсан — çимест, каять — йĕрĕ çухалать.
2391. Улăх тăрăх ула вăкăр мĕкĕрсе хăпарать.
2392. Шыв тăрăх пӳрт йăванать.
2393. Атăл варринче шур пӳрт юхать.

### Пăта

2394. Пĕчĕк пиччен пӳрни кукăр (куклек).
2395. Пĕр пуçĕ шĕвĕр, тепĕр пуçĕ лапчăк.

### Пăтавкка

2396. Алăсăр-урасăр тӳрĕ тăвать.
2397. Алăсăр-урасăр хисеп илет.

### Пăчкă

2398. Шăлĕ пур, çăварĕ çук.
2399. Çултан-çул вată карчăк шăмă кăшлать.
2400. Вată мучин пĕр ĕрет шăл, çăвăнпах тăранса çынна усă тăвать.
2401. Тĕртсе яр та туртса ил.

### Пăшал

2402. Кĕмсĕрт! тăвать — çĕмĕрет.
2403. Йытă, кирек епле тăрантарсан та, вăл çапах ăшра тăратмасть.
2404. Аякран курать, хытă çыртать.

### Пăшатан

2405. Хĕртсе чикеççĕ, кăвакарса тухать.
2406. Хĕрелсе кĕрет, хуралса тухать.

### Пекĕ йĕнни

2407. Усман усăннă, лавкка айне хĕсĕннĕ.
2408. Пĕçĕ тăрăх ямпăл-ямпăл.

### Пĕкĕ

2409. Утлансан — утран çӳллĕ, ансан — автанран лутра.
2410. Пĕр йывăç куп-кукăр.

### Пир юпи

2411. Пӳрт вăти çĕрĕнче юпа ларать: çуркунне лартаççĕ, кĕркунне касаççĕ.
2412. Путь пуклак.

### Писмен

2413. Кĕлеткинчен пуçĕ пысăк.
2414. Пуçĕ пĕр пăт, пĕççи-каççи кĕрепенкĕ.
2415. Çуралман, тĕне кĕмен, хăй тӳре тăвать.
2416. Çутă пуç Пăринька, мăн çăпата Апас.
2417. Ишикки-вашикки, московăски усламăç.
2418. Шуç пуç Микулай.

### Питлĕх

2419. Хураç кутне хĕрес çакрăм.
2420. Килĕрен çур укçа.

### Пичке

2421. Хура ёнен хырăмĕ шăтăк.
2422. Пĕр вăкăрăн икĕ шăтăк.
2423. Тăрупайăн тăрри шăтăк, Сименкийĕн хырăмĕ шăтăк.
2424. Пиçиххийĕ çĕмĕрт, хырăмĕ юман, кăвапи çăка.
2425. Хăй юман, пиçиххи хурама, сăмси çăка.
2426. Кăшăлĕ çĕмĕрт, кĕлетки юман, тути çăка.
2427. Пирĕн пиччен вуникĕ пиçиххи.
2428. Пĕр çын вуникĕ пиçиххи çыхнă.
2429. Картлă-картлă пашалу тĕп-тĕп сакайне.
2430. Тĕпсакайĕнче кӳпĕннĕ сысна выртать.
2431. Сакайĕнче кӳпĕнсе кайнă сурăх выртать.

### Пичке пăкки

2432. Çурри ӳсĕр, çурри урă.
2433. Упанăн тути çурăм çинче.

### Пичке çăварĕ

2434. Тупас, тупас туп шăтăк, чăмăр кĕрес пĕр шăтăк.

### Пуйăс

2435. Тимĕр çулпа тимĕр ăйăр ахăрса чупать.

2436. Тимĕр çул тăрăх хурçă ут чупать.
2437. Чух-чух тарать, ух-ух хăвалать.
2438. Ури çук — чупать, çăварĕ çук — кăшкăрать.

## Пукан

2439. Ая юрать, ая кĕмест.
2440. Вуникĕ хуçăк — пĕр çӳхӳ.
2441. Тăваттăн пĕртăван, тăваттăш та пĕр тан.
2442. Ури пур — утаймасть.
2443. Ниме юрамасан та, кута юрать.
2444. Хыçалти Энтри мĕн пĕлĕш?

## Пукане

2445. Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă, эреветлĕ-теветлĕ.

## Пуртă

2446. Суккăр (куççăр) автан сиксе авăтать.
2447. Кун каçиччен таккăн-таккăн та, пӳрте кĕрсен, юнлă сурса выртăн.
2448. Лутра вырăс ял касать.
2449. Пуççапать, пуççапать, киле çитсен — тăсăлса выртать.
2450. Сĕм вăрманта кăвак йытă вĕрет.
2451. Вăрманта çара пуçлă пичче кăшкăрать.
2452. Сĕм вăрманта çара майра кăшкăрать.
2453. Вăрманта çутă пуçлă ватă çын кăшкăрать.
2454. Вăрман урлă çутă пуçлă старик кăшкăрĕ.
2455. Вăрмана кайнă чух килелле пăхать, вăрмантан килнĕ чух вăрманалла пăхать.

## Пушă

2456. Ваши! Ваçка пуç тавра.

## Пушăт

2457. Хай-хай каччăм, хай каччăм, кӳр сăхманна, хывса пар.
2458. Хай-хай каччăм, хай каччăм, хай каптална хыв пăрах.

## Пӳрнеске

2459. Пĕр пиччен пин шăтăк.

2460. Пӗчӗк пичин хӗрӗх шӑтӑк.
2461. Пӗр ҫӑмхан хӗрӗх шӑтӑк.
2462. Пӗр сысна пин шӑтӑклӑ.
2463. Пилӗк тӑрӑх ҫӗр шӑтӑк.
2464. Пинӗн пин шӑтӑк, Микулайӑн пӗр шӑтӑк.
2465. Хӑли Мӗтрин хӗрӗх куҫ.
2466. Пӗтри пуҫӗ пин куҫлӑ.
2467. Мӑкшӑ куҫӗ — пин куҫ.
2468. Шакла пуҫлӑ Ҫтаппанӑн пин куҫ, пӗрийӗ те кураймасть.
2469. Тӗпсӗр лутка аш тулли..
2470. Вӑталӑх ывӑл тимӗр шлепке вӑхӑтӑн тӑхӑнать.

## Радио

2471. Килсерен пӗртӑван Ӑртиван.
2472. Чунсӑр, юнсӑр — юрӑ юрлать, сӑмах калать.

## Ручкӑпа перо

2473. Пӗр пуҫӗ йывӑҫ, тепӗр пуҫӗ хурҫӑ, ик тӑраллӑ та шӑтӑклӑ.
2474. Патак татӑкки хӑвса пырать, тимӗр татӑкки чӗрсе пырать, йӗпе Марттин ӳксе пырать, хыҫалтан йӗр пулса пырать.

## Сава

2475. Ӑӑптӑртӑм-кӑптӑртӑм, якуне тӑршук.

## Самолет

2476. Чунӗ ҫук — вӗҫет.
2477. Чунӗ ҫук, юнӗ ҫук, кайӑкран хытӑ вӗҫет.

## Сӑмавар

2478. Тинӗс варринче авӑн ҫунать.
2479. Атӑл варринче вут (авӑн) ҫунать.
2480. Тинӗс варринче авӑн ҫунать, пӗлӗт ҫинче лӑпсӑр-лапсӑр упа чупать.
2481. Ҫӳлте шӑтӑк, тӗпӗнче шӑтӑк, варринче вут.
2482. Ҫӳлте те шӑтӑк, аялта та шӑтӑк, варринче вутпа шыв.
2483. Ҫӳлте пӗлӗт, йӗри-тавра шыв, варринче вут.

2484. Варри вутлăх, йĕри-тавра кӳллĕх.
2485. Маттур хĕрĕн ăшĕ-чикки çунать.
2486. Йĕс-йĕс карта, йĕс карта, йĕс картара тимĕр карта, тимĕр картара хĕрлĕ пăру.
2487. Пăхăр вите, пăхăр витере тимĕр вите, тимĕр витере хĕрлĕ вăкăр, мĕкĕрет, тулхăрать, хӳрине тăрататать.
2488. Тăват ураллă, ик хăлхаллă, пĕр сăмсаллă, пĕр куçлă.
2489. Тăвату ураллă, икĕ хăлхаллă, вăхăчĕ-вăхăчĕпе юрласа ларать.

## Сăмаварпа чей куркисем

2490. Амăшĕ сарă, чăххисем шурă.

## Сăпка

2491. Тумлать, тумлать — çĕре тивмест.
2492. Тумлăп-тумлăп — çĕре ӳкмĕп.
2493. Тайăлать — çĕре тивмест.
2494. Пӳртре кимĕ ярăнать.
2495. Ярански, парански, çĕмĕрт тăрри — çӳрен лаши.

## Сăрнайпа купăс

2496. Пин-пин пинече пин халăха култарать, хурама хуппи хултăрчи хура халăха кустарать.

## Сенĕк

2497. Аслăк çинче Йăкăнат пĕççи выртать.
2498. Пирĕн кинемейĕн виçĕ шăл.
2499. Виçĕ шăлпа утă çиет.
2500. Кам тутасăр виçĕ шăлпа утă çиет?

## Сехет

2501. Лармасăр талăк ĕçлет.
2502. Ĕçлет, ĕçлет — ывăнмасть.
2503. Чунĕ çук, хăй çавах ĕçлет.
2504. Ĕçлет-ĕçлет, укçи çук.
2505. Асĕ çук, ĕçĕ пур.
2506. Кунĕн-çĕрĕн чăнт-чăнт!
2507. Утать-утать, ниçтан та çитеймест.
2508. Урасăр утать, алăсăр шаккать.
2509. Чĕлхесĕр, хăлхасăр вăхăт пĕлет.

2510. Чӗлхесӗр япала вăхăт пĕлет.
2511. Чик-чак, алли çук — шаккать, пуçĕ çук — кăтартать.
2512. Шаккать, çаврăнать, пуçĕ çук — кăтартать.
2513. Килĕрен шăкки-шакки.
2514. Хăй çӳрет, вырăнтан куçмасть.
2515. Алăсăр-урасăр çӳрет, анчах пӳртрен тухаймасть.
2516. Куçĕ çук, алли çук, çитрĕ! тесе кăшкăрать.
2517. Тăлăх автан талăкра тăхăрвунă хут авăтать.

## Сĕреке

2518. Мамин кучĕ мамăклă, кинемин кучĕ кирĕклĕ.

## Сĕрме купăс

2519. Ай! тет, вай! тет; чунĕ пур та, юнĕ çук.

## Сĕтел

2520. Шĕлепке айĕнче тăватă ача ташлать.
2521. Тăватă пичче пĕр шĕлеппе *, пĕр пиçиххипе.
2522. Пĕр сунчăк айĕнче тăват пичче ларать.
2523. Пĕр шĕлеп айĕнче тăватă тăван тăраççĕ.
2524. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр йĕрет.
2525. Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă майра лараççĕ.
2526. Мачча çĕклеймĕ, урай çĕклĕ.
2527. Чап-чап, турă парсан, йăлтăр-йăлтăр пуçана.

## Сиктĕрме

2528. Пĕчĕкçеççĕ Татьяна сикет ларать маччана.

## Сурат

2529. Уйра пĕр урлă кĕлет ларать.

## Сухапуç

2530. Мăйракинчен тытмасăр ĕç пулмасть.
2531. Курпун старик çул шырать.

## Сӳре

2532. Шывсăр-мĕнсĕр кимĕ шуса пырĕ.
2533. Уялла та, уйран та çурăм çинче шуса килет.
2534. Ури нумай, уйран çурăмĕпе шуса килет.
2535. Пĕр сыснан хĕрĕх чĕчĕ.

* Шĕлепкепе.

2536. Хĕрĕх чĕчĕллĕ ĕне Атăл урлă каçать.
2537. Ана çинче çирĕм тăват чĕчĕллĕ ĕне çўрет.
2538. Уя юрĕ, вăрмана юрамĕ.
2539. Уя шăнăçĕ, вăрмана шăнăçмĕ.
2540. Акман ана çинче мулкач çури выртĕ.

### Сўс килли

2541. Миля Укахви хĕлĕн-çăвĕн тулта ларĕ.

### Çава

2542. Курăк çиетĕп — шăлăм мăкалать, хăйăр çиетĕп — шăлăм каллех çивĕчленет.
2543. Йăлтăр-йăлтăр тăвать, пĕтĕм хире хирсе тăкать.

### Çапуççи

2544. Кучĕ çăка, вăта çĕрри вăкăр, пуçĕ юман.
2545. Пĕр енĕ юманлăх, тепĕр енĕ çăкалăх, варринче вăкăрлăх.
2546. Пĕр пуç çăка, тепĕр пуç юман, варринче вăкăр.
2547. Хура кайăк юман сăмсаллă, чĕн майлă, вĕçет те кăшкăрать: ак тата! ак тата!
2548. Хăй вĕлт-вĕлт тăвать, ыраш пĕрчине тăкать.
2549. И пăльтаки, пăльтаки!

### Çара çуна

2550. Акар йыттăм ашса пырать, аякки витĕр хĕвел пăхать.
2551. Аяк шăмми витĕр хĕвел пăхать.

### Çатма

2552. Кăмака айĕнче çут çăлтăр çуталса выртать.
2553. Кăмака айĕнче хытă пашалу выртать.
2554. Кăмакара мами тенки выртĕ.
2555. Ахсат çамки çулланнă.
2556. Ахмат пиччин кут çуллă.
2557. Теренти куçĕ çуллă.
2558. Çăтти-çатти, çăттти-çатти çара кут.

### Çăм машини

2559. Ти-ти, пăрăс-пăрăс, пăлт-палт паланта, шĕлевешпе хухлавăш, кушак ури тĕп-темĕш.

2560. Чăнкăр-чăнкăр, чăнкăр ту, тимĕр ту, йĕс ту, чĕн тилхепе, шарт! ту.
2561. Муш-мушали мушартирек, алттăм-пеккĕм тĕкме чăпари.

## Çăмха

2562. Пĕчĕккĕскер, çавраскер, хӳринчен тытса çĕклеме пулмасть.

## Çăпата йĕрĕ

2563. Юр çинче тĕрлĕ минтер выртать.
2564. Урамра тамхаллă пашалу.

## Çăпата урлавĕ

2565. Урам урлă Урина.

## Çăра

2566. Вĕрмен йытă çурт сыхлать.
2567. Тимĕр йытă кил сыхлать.
2568. Вĕрмест-тумасть, киле çын кĕртмест.
2569. Ман пĕр шавккам пур, хăй çыртмасть, вĕрмест, алăка уçтармасть.
2570. Пĕчĕкçеççĕ йыттăм пур, вĕрмест-тумасть, çын ямасть.
2571. Ампара кĕрес тенĕччĕ, анчах йытă пур.
2572. Юрлă-пăрлă çумăр çăвать, хура чĕкеç тулта ларать.
2573. Ак-çик чăмăртак.
2574. Ак-ланк, чак-ланк, шăл-танк, таш-ланк.
2575. Шăтăк хырăмлă вăкăр тăрать, ун патне тепĕр вăкăр пырать те хырăмĕнчен тăк тутарать мăйракипе.

## Çăраççи

2576. Шăлтăрт! турĕ — шăтăкне кĕчĕ.
2577. Шалт! турĕ — шăтăкне кĕчĕ.
2578. Хура кĕсре кучĕ лăкăр-лакăр.
2579. Арçати-парçати, тимĕр çарта курçети.

## Çекĕл

2580. Чипер пиччен пӳрни куклек.
2581. Кӳптĕрлĕ мăн аккайăн пӳрни кукăр.

2582. Пĕчĕк пичин пӳрни кукăр, – темĕскере те çĕклет.
2583. Пĕчĕк пиччен чавси хутланчăк.
2584. Михалан чавси куклек.

## Çĕмел

2585. Уй варринче хĕрлĕ сăрăллă кĕлет ларать.
2586. Уйра ыхра килли ларать.
2587. Уй варринче хĕрĕх кăшăллă пичке ларать.
2588. Мăнтăр майра уй сăвать.

## Çиç арманĕ

2589. Уйра ухмах ташлĕ.
2590. Уй варринче ухмах арăмĕ (майра, упа талттин) ташлĕ.
2591. Пĕр сăрт çинче тăвата кашкăр улать.
2592. Çуначĕсемпе хăлаçланать, вĕççе каяймасть.
2593. Вăрăм çуна сулнăка кайĕ.

## Çул

2594. Вăрăм вĕренĕн вĕçĕ çук.
2595. Хура çиппĕн вĕçĕ çук.
2596. Каян-каян — вĕçĕ çук.
2597. Вĕçĕ-хĕрри çук, хăй йĕп çӳллĕш те çук.
2598. Шырăн-шырăн — тупаймăн, вĕçне кураймăн, хыçне кураймăн.
2599. Чипер акин хырăм пиçиххине чĕркесе çитереймĕн.
2600. Йăмăк хăюне чĕркесе çитереймĕн.
2601. Тăрсассăн — пĕлĕте çитетĕп.
2602. Уйра шур сурпан выртĕ.
2603. Уй варринче сурпан тăсăлса выртĕ.
2604. Таса уйра вăрăм сурпан выртать.
2605. Вăрмантан вăрăм, курăкран лутра.
2606. Курăкран лутра, çанталăка витĕр кайĕ.
2607. Тăршшĕ тем тăршшĕ, çӳллĕшĕ курăкран лутра.
2608. Алă-ура пулсассăн — таркăнсене тытăттăм; чĕлхе çăвар пулсассăн — каласа паратăм.

## Çул тăваткăлĕ

2609. Уй варринче хĕреслĕ тенкĕ пур.

## Çулăк

2610. Çӳппи-çаппи çĕр улттă, вĕрени вĕр улттă.

## Çулу, чул, ăвă

2611. Сухапуçĕ — тимĕр, ани—чул, вăрлăхĕ — йывăç.
2612. Сунарçи çапать те — упа куçĕнчен вут тухать.

## Çуна

2613. Хĕлле хĕлĕпех ĕçлет, çулла хăяккăн выртать.

## Çунашка

2614. Пӳртумĕнче ак таппи.

## Çурла

2615. Пĕчĕкçеççĕ пĕкече пĕтĕм хире çавăрать.
2616. Пĕчĕкçеççĕ пĕкĕрĕлчен пĕтĕм хире пĕтерет.
2617. Пĕр пĕчĕк кукăрскер пĕтĕм хире çĕмĕрет.
2618. Пĕчĕкçеççĕ сысна пĕтĕм хире пуçтарать.
2619. Çинçе пилĕк ват майра уйран уя кускалать.
2620. Хĕлле выртать, çулла мĕнпур тырра кăшлать.

## Çурта

2621. Ӳчĕ пур та, чунĕ çук.
2622. Кĕпи хĕвĕнче, хăй çара пакартан.
2623. Ӳчĕ тулта, кĕпи шалта.

## Çухрăм юпи

2624. Хăй курмасть — ыттисене кăтартать.
2625. Хăй курмасть — ыттисене кăтартать, хăй илтмест, калаçмасть — шутлама вĕрентет.

## Çын, лаша, çуна, утă купи (капанĕ)

2626. Аçта каятăн, икĕ ура?— Тăватă урана шырама.
Аçта каятăн, тăватă ура?—Ултă урана шырама.
Аçта каятăн, ултă ура? — Выртнă упана тăратма.

## Çыру

2627. Таса уя хура вăрлăх акнă.
2628. Ани шурă, вăрлăхĕ (тырри) хура.

2629. Сурпан шурă, тĕрри хура.
2630. Шурă çине хура çапать.
2631. Автанпа ака турăм, йăран вĕçне ларса кантăм.
2632. Қассипе калаçăп, автанĕпе ака тăвăп.
2633. Атăл урлă юман касăп, турпасси кунта килсе ÿкĕ.
2634. Хулара касаççĕ, турпассисем яла ывтăнса каяççĕ.
2635. Пай-пай Паюсман, Паюсман ывăлĕ Пайсутан.

### Такана

2636. Çурăмĕ çук, хырăмĕ пур.

### Такмак

2637. Чĕрĕ чух курăк çиет, вилсен çăкăр çиет.

### Тăмра

2638. Пулхачинăм пулт-пулт! пилĕк пÿрни шарт-шарт!

### Тăпка

2639. Икĕрĕлчĕк-кукăрăлчăк, çирĕм пилĕк кукăрăлчăк.

### Телефон

2640. Итлесен — илтĕнет, итлемесен — илтĕнмест.

### Тенкел

2641. Хăй тăват уралла, чупса кайма халĕ çук.
2642. Пĕр лапка карчăка тăваттăн хурал тăраççĕ.
2643. Вуник хуçăк — пĕр пашалу (çÿхÿ).
2644. Маçи лашин мăйĕ çук.

### Терка

2645. Пĕр вăкăрăн хырăмне пĕтĕмпех сĕксе шăтарса пĕтернĕ.

### Тĕк

2646. Çăп-çăмăл япалана пÿрт урлă ывăтаймăн.

### Тĕкĕр

2647. Чÿрече куçĕнчен çын мĕлки курăнать.

2648. Стена витĕр çын (сăн) курнать.
2649. Пĕччен пăхать, иккĕн курнать.
2650. Айккинчен пăхсан — çап-çутă, хирĕç пăхсан — хăвна куран.
2651. Пĕр енĕ — тĕттĕмлĕх, тепĕр енĕ — хĕвеллĕх.

### Тĕнĕл

2652. Çулла çупа пурăнать, хĕлле типĕ.

### Тилхепе

2653. Кăрт! туртмăш-куклетмĕш, Энтри йытти шӳретмĕш.
2654. Туртрăм, куклетрĕм, Энтри йытти — çивитти.
2655. Туттурăски-турăски, пĕверĕски-ярăски.
2656. Ик енпе вăй патăр.
2657. Ик енпе вăйна чар.

### Тимĕр

2658. Шыв çĕклеймĕ, çĕр çĕклĕ.

### Тимĕр кăмака

2659. Акар йыттăм ашăхса пырĕ, аякки витĕр ăшă çапĕ.
2660. Урай варринче упа ларать.
2661. Кăвак сысна хĕрелет.
2662. Хура хĕрĕн алли вăрăм.
2663. Кăвак сурăхăн çурăмĕ шăтăк.
2664. Тăвата уралла, пĕр çăварлă.

### Тир

2665. Пĕр енĕ — вăрманлăх, тепĕр енĕ — уйлăх.

### Тислĕк

2666. Пӳрт аяккинче кӳпнĕ сысна выртать.

### Трактор

2667. Суха тăвать, утă çимест.
2668. Тарламасть, такăнмасть, сĕлĕ парсан — сĕлĕ çимест, киреметрен хăрамасть.

## Турахуп

2669. Ҫăка ҫине ларăп, вĕрене витĕр пăхăп.
2670. Ҫăка ҫине лартăм, вĕрене витĕр пăхрăм, хурăн турачĕ тытрăм.
2671. Ҫăка ҫинче ларатăп, вĕрене витĕр пăхатăп, хурăнпала вылятăп.
2672. Асанне тури аллă шăллă.
2673. Ман ура вăрăм, сак урати кĕске.
2674. Уринен ури урлă.
2675. Тĕкме витĕр йытă харкашать.
2676. Хӳме витĕр йыт харкашать.
2677. Тĕкме витĕр пик туртрăм.
2678. Тăрри хĕрĕх, тĕпĕ пĕрре.
2679. Лутра вырăсăн шур сухал.

## Турчăка

2680. Пĕр вĕҫ кукăр, тепри тӳрĕ, кашни кунах апи тытĕ.
2681. Пути йыснан пӳрни кукăр.

## Тӳшек

2682. Пĕр кăвакалăн тăвата сăмса.
2683. Ыйхă амăш тăват хуҫăк.
2684. Тумтир амăшĕ виҫĕ хуҫăк.
2685. Пĕр карчăк аласăр, урасăр кĕпе тăхăнать.
2686. Тĕр-тĕр авăр, тĕр авăр, ăна тĕрме мĕн пур? Хуҫ-хуҫ авăр, хуҫ авăр, ăна хуҫма мĕн пур?
2687. Хуҫ чух хуҫ тери, куна хуҫма мĕн тери?
2688. Ҡăнтăрла тăрна пек, каҫпа хăма пек.
2689. Пӳштенпе Ҡӳштен пĕр сак ҫинче.

## Тылă

2690. Вата йыттăн хӳри лак-лак!
2691. Йытти ленк-ленк! хӳри шанк-шанк!
2692. Ҫăварĕ ляв-ляв! хӳри шанк-шанк!
2693. Йытти хак-хак! хӳри шалт-шалт!
2694. Йытти лӳк-лӳк! хӳри шук-шук!
2695. Йытти шанк-шанк! хӳри ленк-ленк!
2696. Тукмак ҫăварĕ шарт! шарт!
2697. Ҡашкăр ҫăварĕ шăрт! та шарт!
2698. Ҡăштăртин лак-лак-лак!
2699. Аник-ник-ник, хӳри пăр-пăр!

2700. Лакăштăк-лакăштăк, кăштин тейĕн кукăштик.
2701. Кăштирмин куляк-ляк.
2702. Ай, вăрăм лакăштăк.
2703. Карта хыçĕнче канька ташлать.
2704. Шăлсăр карчăк шăмă кăшлать.
2705. Виç уралла лашам пур.
2706. Ватă йытă — хытнă кут.

## Укçа

2707. Пĕчĕк паттăр ял касать.
2708. Ват асатте ял касать.
2709. Ват нухрат ял касать.
2710. Лутра тиек ял касать.
2711. Пĕчĕкçеççĕ, çап-çаврака, пĕтĕм тĕнчене çав çитĕ.
2712. Куçĕ çук, ури çук, ялтан яла чупса çӳрет.
2713. Пĕчĕккĕ те çаврашка, тĕрмерен тĕрмене çӳрет, пĕтĕм тĕнчене касать, хăй ним те мар, пурте юратаççĕ.
2714. Пĕчĕкçĕ те çаврашка, тĕрмерен тĕрмене çӳрет, пĕтĕм çутçанталăкра кускалать, хăй ним те мар, пурте юратаççĕ.
2715. Çутăскер, çӳремскер, пур çынна юратмалласкер.
2716. Çавракa та шурă, ăна пурте юратаççĕ.
2717. Эпĕ пысăк мар, хитре мар, çавах мана пурте юратаççĕ.
2718. Пĕчĕкçеççĕ пиняккай пин халăха тапратать.
2719. Усрап-усрап усрапи, усламçăсен усравки.
2720. Анат енчен хăпарнăскер, Тутаринтан * килнĕскер.

## Урапа

2721. Армак-чармак, пӳрте кĕмест.
2722. Ик пуçĕнчен шăтартăм, вăта çĕртен сыптартăм.

## Урапа кустăрмисем

2723. Пĕр çăварăн вуникĕ шăл.
2724. Пĕчĕкçĕ тăванне пысăк тăванĕ хăваласа пырать.
2725. Иккĕн чупаççĕ, иккĕн хăвалаççĕ, пĕрне-пĕри çитеймеççĕ.
2726. Мăнни пĕчĕккине хăваласа çитеймĕ.
2727. Пиччĕш шăллĕне хăвалать, анчах çитеймест.

---

* Тутарстантан, тутар çĕрĕнчен.

## Урапапа çуна

2728. Пĕр пичче хĕлле канать, тепĕр пичче çулла канать.

## Урхалăх

2729. Леш айкки, ку айкки, вăй патăр!
2730. Леш айкки те пешайкки, ку айккинче вăй патăр!

## Утă лавĕ

2731. Атăл урлă лăпсăр-лапсăр упа каçать.

## Ухват

2732. Кăмака айĕнче ĕне майраки.
2733. Măннине пĕчĕкки ыталаса илнĕ.
2734. Майраки шалта, хўри тулта.

## Хаçат

2735. Кам пĕтĕм тĕнчерине каласа парать?

## Хачă

2736. Арчак-марчак, арча çинче тимĕр сак.
2737. Икĕ сăмсаллă, икĕ куçлă.
2738. Икĕ куçлă, икĕ хăлхаллă.
2739. Икĕ куç, пĕр çăвар.
2740. Юмах юплĕ, хўри кукăр.
2741. Юмах юплĕ, хўри кукăр, çăварĕ кашкăр.
2742. Пĕр йыттăн ик хўре, иккĕшĕ те кукăр.
2743. Ик вĕçлĕ, ик ункă, варринче пăта.
2744. Ик çаврашка, ик кункрашка, ик шĕврешке, варринче пăта.
2745. Тăрат, Танила, пĕççўне, эс тăратмасан—ĕç пулмасть.
2746. Ирлăк-ярлăк, чарлан пĕççи чарлăк.
2747. Қарттин кăрмаюх.
2748. Қачарттин чавариш.
2749. Қăчăртти курмилч.

## Хачăпа йĕп

2750. Пиччĕш салатать, шăллĕ пуçтарать.
2751. Пысăк пиччĕш салатать, кĕçĕн пиччĕш пуçтарать.
2752. Пысăк тиек салатĕ, пĕчĕк тиек пуçтарĕ.
2753. Вахтĕр ваклать, пурмис пуçтарать.

## Хăйчикки

2754. Ун сикет, кун сикет, пĕр укçалăх вырăн тупаймасть.
2755. Апрамăн çăпати пысăк.
2756. Лап-лап ура, чăл-чăл куç.
2757. Лап ураçăм, çинçе пĕвĕм, чĕл-чĕл куçăм.
2758. Макçи, Макçи çĕрте Макçи, утмăлтурат йывăççи çинче пилĕк лап çăпата, çутă пуç.
2759. Лап-лап çăпаталлă, çинçе пилĕклĕ, тăвата сăмсаллă, хĕрлĕ кикириклĕ.
2760. Урай варринче упа ури.
2761. Пĕр кăвакалăн тăвата сăмса.
2762. Пĕр çыннăн (пиччен) тăвата ывăл, тăваттăшĕ те кăпкăтра.
2763. Пĕр тутарăн тăват ывăл, тăваттăш те Питтимир ятлă.
2764. Карта тăрăх канька (кăнька, канть, карăк) чупать.
2765. Карта тăрăх канькка чупĕ, пăхне-шăкне тăках хăварĕ.
2766. Пушăт йывăççи тăрăх хĕрлĕ автан чупса çӳрет.
2767. Чипер инке хăй ташласа пырĕ, тенки тăкăнса пырĕ.
2768. Шура çиет, хура сысать.

## Хăмăт

2769. Çекĕл, çекĕл, çеклетмĕш, йĕрĕх туртмăш, хутлатмăш.

## Хивсе

2770. Пĕр шӳпкенĕн тăвата куç.

## Хултăрчă

2771. Ичĕк-кучăк, хӳри пăр-пăр.
2772. Кăлтăрку кăткă йăви, Мемеçтилет упăшки.

## Хуран

2773. Шалта йĕпе, тулта хура.
2774. Хура такан, пĕр пĕкече.
2775. Пуклак пуян пултинник.
2776. Хура йытă çакăнса тăрать.

## Хуран çăпали

2777. Хура кĕсре ури хурана кĕмест.

## Хуран çекĕлĕ

2778. Пĕр тĕркен çич сăмса.
2779. Кăсăя вĕчи кĕсъене кĕмест.
2780. Мучин пӳрни кукăр.
2781. Кăмантер мăн акайăн пӳрни куклек.
2782. Няня пиччен нĕççи картлă-картлă.
2783. Çемен пиçхи картлă-картлă.

## Хуран хăлăпĕ

2784. Хура кĕçре пĕççи хурана кĕмĕ.
2785. Хура вăкăр аякки пĕрчи хурана шăнăçмасть.
2786. Атăл урлă пĕкĕ ывăтса каçарăп.
2787. Ункă урлă сӳс кĕпер.

## Хут

2788. Йăтма çăмăл, пӳрт урлă каçарма çук.
2789. Пăхма çăмăл, пӳрт урлă ывăтса каçарас çук.
2790. Алăпа йăтма çăмăл, ывăтма йывăр.
2791. Пӳрт çинчен ӳксен — вилмест, кĕпер çинчен ӳксен — вилет.
2792. Чул çине ӳкет — çĕмĕрĕлмест, шыв çине ӳкет — çĕмĕрĕлет.
2793. Çĕре пăрахсан — çĕмĕрĕлмест, шыва пăрахсан — çĕмĕрĕлет.
2794. Шыв çине ӳксен — вилĕп, çĕр çине ӳксен — вилмĕп.

## Хутăр йывăççи

2795. Вăрт-варт вире ял, çаврăнтăм-пăхрăм — хамăр ял.
2796. Вих-вих-ви! Вире яла кай та кил.
2797. Вăльт, вăльт, вирьял.
2798. Ирĕн-вирĕн, ах-вах.
2799. Пĕр хĕлĕх туртăп, Хусан тапратăп.
2800. Вăр-вăр! вăрканти, турат куç турханти.
2801. Каялла-малалла сулчака.
2802. Малта та Караçăм, кайра та Караçăм.
2803. Вăрт-варт Варвари, кайма-килме çывăх çул.
2804. Икшик-тукшик, мăнтăр Якур.
2805. Анат-и, тăват-и, вăй вылять-и, килет-и?
2806. Пирĕн куккин пĕр шăтăк.

**Чанпа хуран**

2807. Аҫта каян, хура кут? — Хыҫҫăн пырăп, шăтăк кут.

**Чашăк-тирĕк**

2808. Ир те шăкăр-шăкăр, кăнтăрла та шăкăр-шăкăр, каҫ та шăкăр-шăкăр.

**Чăм**

2809. Пĕр кăвакалăн ик сăмса.
2810. Мăтăк тиек ик еннелле тăрать.

**Чăмпа курка**

2811. Сăмалин ик сăмса, Амалин хăрах алă.

**Чей хуранĕ**

2812. Пирĕн аттен вăкăр пур; вутă ҫимест, улăм ҫимест — пилĕк ҫынна ҫимелĕх сĕтне парать.
2813. Хырăмĕ пысăк, ҫурăмĕ кукăр.

**Чĕлĕм**

2814. Алпасăн арманĕ, шуйттанăн тырри.
2815. Апашăн вăрманĕ, йĕксĕкĕн тырри.
2816. Шуйттан арманĕнче апăршан тырри авăрать.
2817. Кăнтанис арманче чурт тырри аврать.
2818. Вутлан шăтăк — вут шăтăк, тимĕр шăтăк — тип шăтăк.
2819. Вутлан енче вут шăтăк, Тивĕш енче тип шăтăк.
2820. Вутланта вут шăтăк, Яртире тип шăтăк.
2821. Кил енче тип шăтăк, Вутлан енче вут шăтăкĕ.
2822. Тетикасси — тăм шăтăкĕ.
2823. Вутлан айĕнче катăршни муклашки выртĕ.
2824. Кукăр ҫăка кутĕнче катăршни муклашки выртать.
2825. Лешекки, куекки — Ясук Теренти каҫан кукрашки.
2826. Путь ҫути маклашки.
2827. Ҫыр хĕрринче кукăр каттăршник ларĕ.
2828. Кукăр хурăн айĕнче катăршнăйăн пусси пур.
2829. Кукăр хурăн кутĕнче усал пăхĕ выртать.
2830. Пĕчĕк шăллăм — ҫул юлташ.
2831. Ман юлташăм кăнтаҫ (пăнтеҫ).

2832. Ах, шăршлă юлташăм, сансăр пуçне ăш вăркать, сана курсан — пуç кашлать.
2833. Кăт-кăтик кăтатмăш, чун йăпатмăш — тухатмăш.

2834. Паккин-пакки паклашка,
Тăм чӳлмек яклашка;
Пĕлекене пĕр пĕлĕм,
Пĕлменнине çĕр чĕлĕм.

2835. Тĕтĕм ашшĕ, кукăр пуç.
2836. Килĕрен пакки-анпакки.
2837. Пичке пăкки петрушка.
2838. Упа кутне мăл-мăл.
2839. Нăр-нăр ривитник.
2840. Пĕчĕкçеççĕ пӳртĕн тĕтĕмĕ тухать, ăшши çук.
2841. Тӳтӳр-лӳттӳ кĕл вучаххи.
2842. Сăмси пур, кучĕ çук.
2843. Сахар мучи сад сыхлать.

## Чиркӳ

2844. Чăрăш, чăрăш тăрринче ылтăн кайăк, ылтăн кайăка çĕклеме мул кирлĕ, мула çĕклеме çын кирлĕ.

## Чукмар

2845. Йăрăм пия, турăм пия.

## Чӳлĕк

2846. Леш айкки, ку айкки, кăчăк туртмăш, куклетмĕш.
2847. Леш айкки, ку айăкки, тавăсъя!
2848. Леш айкки — плешайкки, вăта çĕрĕ, тав сана!
2849. Лешеккей, куеккей, вăй патăр!
2850. Як-якăлтăк, Яхван мучи тухатмăш.
2851. Йĕкĕт туртмăш, хуплатмăш, Яхвар кукки—тухатмăш.
2852. Кăлт туртмăш — тухатмăш, Ехрем кукки—тухатмăш.

## Чӳлмек

2853. Ут утланса вута кĕрет.

## Чӳлмекпе ухват

2854. Хура каччă сарă хĕре ыталать.
2855. Михала ут утланчĕ, те кĕчĕ кайрĕ вут çине.

## Шайкка

2856. Пӗчӗк пиччен пилӗк пиҫиххи.

## Шӑналӑк

2857. Выртсан — мулкач пек, тӑрсан — тӗве пек.
2858. Выртсан — йытӑ пек, тӑрсан — ӗне пек.
2859. Саркаласан — ҫанталӑк пек, пӑчӑртасан — пӑчӑ пек.
2860. Салатсан — сала пек, пуҫтарсан — мулкач пек.
2861. Пысӑклатсан — алӑк пек, пӗчӗклетсен — автан пек.

## Шӑнкӑрав

2862. Йӗс витере йӗс ӑйӑр.
2863. Йӗс витере йӗс ӑйӑр кӗҫенет.
2864. Йысна лаши йӗс витере кӗҫенет.
2865. Йӗс витере ӑйӑр ахӑрать.
2866. Сак айӗнче сар лаша.
2867. Аякран сар лаша кӗҫенет.
2868. Ял-ял урлӑ, хир-хир урлӑ сар лаша кӗҫенсе килет.
2869. Пӗчӗк майра юрӑ юрлӗ, ял тавра ян ярӗ.
2870. Лутра тиек ял ҫурӗ.

## Шӑпӑр

2871. Ҫак пӳртре мӗн усал?
2872. Ҫак пӳртре пӗр синкер.
2873. Пӳртре пукане ташлать.
2874. Урай варринче пӗтӗрсе ҫыхнӑскер ташлать.
2875. Хытӑ ҫыхнӑ пулсан та, ҫапах ташлать урайӗнче.
2876. Алӑк умӗнче Альтук ташлать.
2877. Пӗчӗкҫӗ кинӗм пур, алӑкӑн-тӗпелӗн кускалать.
2878. Пӗчӗк Иван пилӗкне пушӑт ҫыхнӑ, урай тӑрӑх утать, тусан урапа пек ҫаврӑнать.
2879. Хӑнисене вӗриленсе чӗнсе пуҫтарать те хӑпарса ларать.
2880. Хӗл каҫайми хӗр парӑп.
2881. Хӗлӗп арӑмӗ хӗл каҫаймӗ.
2882. Кӗр, пӳрт амӑш, пӳртелле.
2883. Тух, тухатмӑш, тулалла, кӗр, пӗтермӗш, шалалла.
2884. Хӗрӗх тӑрӑ пӗр кутра.
2885. Алӑк патӗнче Ахванеҫ тӑрӗ.
2886. Ун йӑкӑш, кун йӑкӑш, Энтри Пасарне кӗрех кайӑп.
2887. Иклетмӗш, куклетмӗш, Сахар ватти тухатмӑш.

## Шăрпăк

2888. Пĕр пӳртре утмăл пилĕк çын, кунне пиллĕк вилеççĕ.
2889. Пĕр пӳртре аллăн пурăнаççĕ, тула тухсан, пурте çĕлĕксене хываççĕ.
2890. Аллă кушак пĕр пӳртре выртаççĕ.

## Шăрт

2891. Хура йыттăн шăрт сухал.
2892. Кăвак така кĕрте ларĕ.
2893. Ту тăрăх кăвак така чупать.
2894. Кăвак така чу! ярăнĕ.
2895. Тукала карчăк ту ярăнать.
2896. Еххĕм арăм — пуклак кут.
2897. Сăкăт-сăкăт сăкланать, сăхнă çĕрте татса илет, лăпăс-лăпăс силленет, пыйти-шăрки тăкăнать.

## Шăртпа тĕрен

2898. Пĕри йĕр тăвать, тепри хăйпăтать.
2899. Ывăлĕ йĕр туса пырать, ашшĕ хăйпăтса пырать.

## Шĕшлĕ

2900. Патти пичченĕн пӳрни кукăр.
2901. Пĕчĕк пиччен нӳрни кукăр.
2902. Вырăс пиччен пӳрни кукăр.
2903. Патçуттин ури кукăр.
2904. Асаттенĕн хăрах ура, вăл та пулин кукăр.
2905. Курпун старик çĕр чавать.
2906. Куçсăр сысна йĕр йĕрлет.
2907. Курпун вырăс йĕр йĕрлет.
2908. Курпун вырăс çул шырать.
2909. Курпун старик çул шырать.
2910. Курпун вырăс çул кăтартать.
2911. Иртмĕш, туртмăш, йăпăрт туртмăш.
2912. Ятăм ярма пуçĕ — шанк! турĕ.

## Шыв армане

2913. Ват старик шывра ларать, сухаллипе шыва силлет, çынсене тăрантарать.

## Шыв кĕвенти

2914. Пĕр патак çинче икĕ курак ларать.
2915. Килĕрен пуп майри.

### Ывăс

2916. Тăп-тăваткал тутина.
2917. Авăрлă кулач.

### Электричество

2918. Ҫашта урлă кантра картăм, кашта вĕҫне енчĕк ҫакрăм, енчĕк ăшне ылтăн ятăм.
2919. Ҫунать-ҫунать — ҫунса пĕтеймест.
2920. Пӳртре ҫутă ҫăлтăр пур.
2921. Вĕрен вĕҫҫĕн вир пăтти пĕҫерĕп.

## ĔҪ-ХĔЛ

### Авăн ҫапни

2922. Ҫӳлте văш-văш, аялта тĕп-тĕп!
2923. Ҫӳлте văс-văс, аялта туп-туп!
2924. Ҫӳлте văт-văт, ҫĕрте тĕп-тĕп!
2925. Тӳп-тупăлтăк, тупăлтăк, тупăлтăк айĕнче чăш-чăш.
2926. Ҫара ҫатма ҫат-ҫат-ҫат, шĕшкĕ тĕми тӳп-тӳп-тӳп!
2927. Тăп-тăпиҫĕм, тăпиҫĕм, ишемеҫĕм-курăкҫăм, курăк ҫине пусмăп.
2928. Тӳп-тӳп тӳпелет те сарă инкене вĕлерет.
2929. Ултă кайăк хур вĕҫсе пырать, пурте юман сăмсаллă: вĕт эпир! те вĕт эпир! теҫҫĕ.
2930. Тăрнасем аялалла та, ҫӳлелле те вĕҫеҫҫĕ.
2931. Ҫĕр ҫынна вырттарса хĕнеҫҫĕ.
2932. Пĕри хĕртет, тепри ташлать.

### Алса тăхăнни

2933. Пĕр старикĕн пилĕк ывăл: тăваттăшĕ пӳрте кĕреҫҫĕ, пĕри чăлана кĕрсе юлать.
2934. Пиллĕккĕн пĕртăван: тăваттăш киле таврăнать, пĕри хваттере кĕрсе юлать.
2935. Эпир пиллĕкĕн ҫулпа пыратпăр, пĕри аташса юлчĕ.
2936. Пиллĕкĕн пĕртăван аслă ҫулпа пыраҫҫĕ; пырсан-пырсан, аслă тăванĕ пĕчĕк ҫулпа уйăрălса каять.
2937. Тĕклине яки кĕрет.

### Атă тăхăнни

2938. Ик хĕрринчен тытрăм та варринчен чышрăм.

## Вир тӳни

2939. Тӳп-тӳп, тӳпен кĕлти, мĕн кĕлти? Ваш-ваш кĕлти, мĕн кĕлти?
2940. Ир те чак-чак, каç та чак-чак, валиккĕм вак-вак.

## Вутă хутни

2941. Аслăк айĕнче хĕрлĕ автан хирĕлсе авăтать.
2942. Пĕр шăтăка çĕр савăл çапрĕç.
2943. Мами хыçне шăрпăк чиксе тултарăп.
2944. Йăкăнат пуçĕ кăмакара выртать.
2945. Кăмакара йĕп ташлĕ.

## Вырăн сарни-пуçтарни

2946. Ир те кăшăр-кăшăр, каç та кăшăр-кăшăр.
2947. Каç — улăх, ир — купа.
2948. Тĕр-тĕме, ăна тĕрме мĕнĕ пур? Хуç-хуçма, ăна хуçма мĕнĕ пур?
2949. Хуç хуçмалла, ăна хуçасси мĕн пур? Тĕр-тĕрмелле, ăна тĕресси мĕн пур?

## Ĕне суни

2950. Пĕр кӳлле тăватă çăл юхса кĕрет.
2951. Тăватă хĕр пĕр шăтăк шыраççĕ.
2952. Тăватă насус пĕр çĕре пĕрĕхет.

## Ĕне сăмса çӳлани

2953. Пĕр мелкепе икĕ кăмака шăлăп.

## Икерчĕ пĕçерни

2954. Тăм ту, тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче урпа, урпа çинче ĕне ашса çӳрет.
2955. Тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче тырă уйĕ, тырă уйĕнче хура ĕне.
2956. Тăм ту, тăм ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче пăри капанĕ, пăри капанĕ çинче ĕне хӳри.
2957. Çӳл ту, çӳл ту çинче тимĕр ту, тимĕр ту çинче пăрçа ани, пăрçа ани çинче ĕне хӳри.
2958. Йывăç ту, йывăç ту çинче чул ту, чул ту çинче чугун ту, чугун ту çинче йӳç ту, йӳç ту çинче ĕне, ĕне çинче чăхă.

2959. Тăм ту, тăм ту хĕрринче чугун ту, чугун ту хĕрринче урпа калчи, урпа калчи çинче шур упа выртса йăванать.
2960. Тăм ту, тăм ту çинче чугун ту, чугун ту çинче урпа, урпа çинче шур мулкач кускаласа çӳрĕ.
2961. Мăн ту, мăн ту, мăн ту çинче Иван ларĕ.
2962. Халап ятăм, халлантартăм, Йĕмпикене йĕлпĕртрĕм, Туйпикене култартăм.
2963. Юмах ятăм юптартăм, юплĕ çăмах хыптартăм.
2964. Йĕрĕп-йĕрĕп, йĕпретĕп, Ерми питне чăшкăртăп. Ярăп-ярăп сирпĕтĕп, Епрем питне епретĕп.
2965. Ярăп-ярăп, ярр! ярăп, тимĕр çине сарса хурăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп.
2966. Тимĕр çине сартарăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп, кайран ачасене таткаласа парăп.
2967. Ихĕртĕп, чĕкĕртĕп, вутра пĕçерĕп, кайран хăвна çитерĕп.
2968. Ярăп-ярăп, хĕрлĕ йытта вĕртерĕп.
2969. Юмăç карчăк кутне йĕпретĕп.
2970. Ярăп-ярăп, яра парăп, Ерми кутне епретĕп.
2971. Юмăç ярăп, йĕпретĕп, Ерли кутне чакăртăп.
2972. Кĕлтĕртрĕм, пĕлтĕртрĕм, кăмакана ĕлкĕртрĕм.
2973. Куçма кĕрӳ хускалать, Лапата кĕрӳ лап ларать.
2974. Лупан калать, лупкалать, кусан калать, кускалать.

## Кантăр пуçне çерçи çини

2975. Менти пуçне Тевти сăхать.
2976. Çеркей пуçне Çемен çиет.

## Кăвас йӳçни

2977. Пăш-пăш калаçать — чунĕ çук, этем мар.
2978. Алсăр-урасăр юман (çăка) тăрне хăпарать.
2979. Алсăр-урасăр хăпарса анать.

## Кăвас хуни

2980. Ыраш пăтти шăмпăрти.

## Кăмакаран вучаха кăвар кăларни

2981. Шĕлтĕртĕм-шĕлтĕртĕм туй килет.
2982. Тĕпĕр-тĕпĕр туй килет, ланкашкана кĕрех каять.
2983. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, лупашкана анах каять.

2984. Чăнкăр-чăнкăр туй килет, пĕр шăтăка анах каять.
2985. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, аслă хапхаран тухать те кĕçĕн хапхаран кĕрет.
2986. Чăнкăр-чăнкăр туй килет, чӳрече витĕр пай туртать.
2987. Шăнкăр-шăнкăр туй килĕ, пăлтăр хыçне туй ӳкĕ.
2988. Пиччĕш патне туй сикĕ, шăллĕ патне туй ӳкĕ.
2989. Пиччĕш патĕнче туй ӳкнĕ, шăллĕ патĕнче çĕр выртĕ.
2990. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пиччĕш панче кун кунлать, ашшĕ панче çĕр выртать.
2991. Аслă ялтан кĕçĕн яла туй килет.
2992. Аслă Кашаран[136] Кĕçĕн Кашана[137] туй килет.
2993. Тукшикре[138] туй сикет, Çеçмерте[139] çĕр каçать.
2994. Тĕмпĕл-тĕмпĕл туй килет, Аччакассинче[140] çĕр выртать.
2995. Тăкăс картаран пĕчĕкçĕ картана тăрияx!
2996. Аслă картаран кĕçĕн картана тăр-рях!

## Кăшман çини

2997. Эс те чипер, эп те чипер; иккĕн тытса чуптăвар.

## Кĕнчеле арлани

2998. Айтар капанне айĕнчен туртаççĕ.
2999. Алтăр капан айĕнчен утă туртăп.
3000. Алтăр капан айĕнчен вунă сурăх туртĕ.
3001. Паттăр капанне шăши аялтан туртать.
3002. Тĕнсĕр капан айĕнчен пĕри утă туртать.
3003. Пĕр капана пилĕк ĕне туртать.
3004. Айсăр капан айĕнчен утă туртаççĕ.
3005. Пĕр капана вуникĕ качака çиет.
3006. Пиллĕкĕн туртаççĕ, пиллĕкĕн тăраççĕ.
3007. Пĕр капана пилĕк качака çиĕ.
3008. Асаттен сухалне çăла-çăла пӳрнем ыратрĕ.
3009. Вупăрлă карчăкăн кăвапинчен тӳртăп.
3010. Пӳрнепе çисех хырăмне пысăклатать.
3011. Ярăп, ярăп, яра парăп, писмелĕп те тӳмелĕп.
3012. Шиххи-паххи, талуй пайтти.

## Кĕсел лăкани

3013. Йĕл-йĕл йĕлсе выртать, уксах салтак сиксе çавăрнать.

## Кĕтӳ кĕртни

3014. Паняç хыççăн пуччи чупать, пуччи хыççăн чух-чух чупать.

## Лаша кӳлсе тăварни

3015. Энтриччĕ, çăваччĕ; кĕрĕк туртнă, куклетнĕ.
3016. Алашит, тулашит, вăтаммине кĕлешит; тӳп-тӳремми, тӳрески, тĕверĕски-ярăски.

## Лаша чупни

3017. Пĕри ухлать, тепри авăсать, тăваттăн тĕвеççĕ, иккĕн итлеççĕ.

## Пăри тӳни

3018. Иресун-пиресун, тринн-тринн Васили.
3019. Ир те чак-чак, каç та чак-чак валли ват.
3020. Ир те чак-чак, каç та чак-чак, варри вак-вак.

## Пир тĕртни

3021. Çăрттанĕ чăмсах пырĕ, пăрĕ шăнса пырĕ.
3022. Çăрттан пулли сикех пырĕ, йăпăлтан пулли вылях пырĕ.
3023. Çăрттанĕ сиксех пырать, Атăлĕ шăнсах пырать.
3024. Вăлтăрт-вăлтăрт пукане, шăлтăрт-шăлтăрт шăнкăрав.
3025. Çатан витĕр çил вĕрет.
3026. Кăтри силленет, яки шăтăк шырать.
3027. Тымарĕ карăнать, кăтри силленет, яки шăтăк шырать.

## Пит çуни

3028. Пĕр улпута вуннăн çăваççĕ.

## Пӳрт мăклани

3029. Хăни килех тăрать, кĕççи сарăлах тăрать.
3030. Хăни килсе тăрĕ, кĕççине сарса тăрĕç.
3031. Хуньăм хĕрĕ килех тăрĕ, айне кĕççе сарах тăрăп.
3032. Килчĕ хăна, килчĕ хăна — минтер хурса çитерей-мерĕм.
3033. Пирĕн пата та, сирĕн пата та сысна çури хĕстернĕ.
3034. Пирĕн те сысна хĕсĕннĕ, сирĕн те сысна хĕсĕннĕ.
3035. Сирĕн-пирĕн сысна хĕсĕннĕ.
3036. Пӳрт тавра пеклĕ * вĕрен.

* «Пакля» сăмахран (чӳлĕк).

## Сӑмавара кӑвар яни

3037. Шывлӑ пусса вут ятӑм.

## Сӑра йӳҫни

3038. Тӗпсакайӗнче сарӑ кӗсре кӗҫенет.
3039. Сакайӗнче сар лаша кӗҫенсе тӑрать
3040. Сармантейӗн сар лаши сакайӗнче кӗҫенет.
3041. Аслӑ ямра сим вӗрет.

## Сӑра туни

3042. Ӑҫта каян, хура кут? — Эп те пырап, шӑтӑк кут.
3043. Аслӑк патӗнче алтӑртӑк, тӗпелте пӗтӗртӗк, вӑта тӗлӗнче чӑшт-пашт!
3044. Шак-шак, шакӑлти мине шак-шак; тӳп-тӳп, тупӑрти мине туп!

## Сурӑх ҫӑмӗ касни

3045. Вӑрман касаҫҫӗ, турпасӗ сирпӗнмест.

## Суха туни

3046. Ҫӑкӑрӗ хура, ҫӗҫҫи шурӑ.

## Сӳс арлани

3047. Ҫӑки ҫине лартӑм, вӗрене витӗр пӑхрӑм, ҫулҫипе вылярӑм.

## Сӳс тӳни

3048. Пӗр карчӑкшӑн тӑваттӑн вӑрҫаҫҫӗ.
3049. Пӗр шӑтӑка тӑват хӗр сикӗ.
3050. Тӑрри тӗрнеҫ, тӗпӗ мамӑк.
3051. Ҫӳлте шӑкӑлит-макӑлит, аялта туп-туп!
3052. Янасала [141] янк-янк! Ураскилте [142] тӳп-тӳп!
3053. Теп-тепӗлчӗк, тепӗлчӗк, тепӗлчӗк айӗнче мамайлӑк.
3054. Аялалла тӗп-тӗп, ҫӳлелле вӑш-вӑш.
3055. Тӳн-тӳн, ӑҫта тӳнлетни курӑнмасть.
3056. Тӳп-тӳпӗлти, тӳпӗлти, чӑрӑш тӑрри янкӑлти.
3057. Тӳп-тӳпеле, тӳпеле, тӳпеле айӗнче мамалла, мамалла айӗнче пыйти.
3058. Инкӗлтӗм-янкӑлтӑм, юман килтӗм-янкӑлтӑм.
3059. Теп-тепӗлтӗк, тепӗлтӗк, тепӗлтӗк айӗнче мамалтӑк.

3060. Пĕр шăтăка тан-тан-тан!
3061. Пĕр тӳпĕлтĕк, тӳпĕлтĕк, чăрăш тăрри йăнкăлтăк
3062. Тӳпĕлтĕк-тӳпĕлтĕк, тӳпĕлтин калта тӳпĕлтĕк!

### Сӳс тыллани

3063. И-и, мак-мак, калля шак-шак!
3064. Елттим-меттим, хӳри шалт-шалт!
3065. Шалттин-шалттин, çăттин-çаттин!

### Сӳс шăртлани

3066. Туканаш [143] карчăк ту тăвать.

### Çатан авни

3067. Яв-явăски, явăски, пĕкевĕски, явăски.

### Çăкăр унани

3068. Кăпăртик-капăртик, кăнни-манни, ирĕке юртăк, эпеç карчăк.
3069. Авăрлик-авăрлик, мăнтăр упа çăвăрлик, карчăк аппа путел тел-тел.
3070. Сып лап-лап пинтен, сып лап-лап.
3071. Пир лап-лап, ар лап-лап, сенкер лап-лап.

### Çăнăх аллани

3072. Çăкалăхра тăманлăх.
3073. Çăкалăх витĕр юр çăвать.
3074. Юмансар витĕр тăмансар çăвать.
3075. Лутра пĕлĕтрен юр çăвать.
3076. Лутра ялта юр çăвать.
3077. Çилсĕр-тăвăлсăр тăман тухать.
3078. Çатан витĕр кĕрт хывать.
3079. Лутра Паньтăкра [144] юр çăвĕ.

### Çăпата сырни

3080. Ун кайăп, кун кайăп, Энтри арăмне тĕлех пулăп.
3081. Унта кайăп, кунта кайăп, тунти пасарне çитсе тăрăп.
3082. Унтан каять, кунтан каять, ытларикун пасарне сиксе тухать.
3083. Ир тĕ, каç та кăштăр-кăштăр.
3084. Ир те кăштăр-кăштăр, каç та кăштăр-кăштăр.

3085. Ир те, каҫ та кăр-кăр.
3086. Урам урлă таната карнă.

**Ҫăпата туни**

3087. Аклик-чаклик, каштăрик-ташлик.

**Ҫăпата хуҫни**

3088. Ҫиччĕн кайса вунтăваттăн килĕп.
3089. Ямпăлтатпа Пайпăлтат вуник урампа чупаҫҫĕ.
3090. Их-фух, вирьял, вунтăвата ҫул кускалать.
3091. Сархурăнтан[145] сарса килет, Хучахматран[146] хуҫса килет.
3092. Хучахмат енчен хуҫса килет, Сархурăн енчен сарса килет, Тимĕрҫырми[147] енчен тирсе килет.

**Ҫу уҫлани**

3093. Швикĕм-синкерĕм, шыва ятăм — путмарĕ.

**Ҫын апат ҫини**

3094. Шурă кĕпеллисем ҫапаҫҫĕ, хĕрлĕ кĕпелли тавăрса пырать.
3095. Вăтăр иккĕн авăн ҫапаҫҫĕ, пĕри кĕлте тавăрса пырать.
3096. Вуник арҫын ҫапаҫҫĕ, Митрахван тавăрать.
3097. Йывăҫ турттарать, шăмă ватса ярать, йĕпе Мартин тирпейлесе ярать.
3098. Пĕр вĕҫĕнчен кĕрет, тепĕр вĕҫĕнчен тухать.

**Така пуҫне пĕҫерни**

3099. Катман катăка катăп, уҫман арчана уҫăп.

**Таракан шăнтни**

3100. Кăвак кăмрăк чупса пырать, хĕрлĕ ҫарĕ тарса пырать.

**Тăла пусни**

3101. Тĕкли ҫине тĕк те тĕк.

**Тырă акни**

3102. Ишентерĕп, пишентерĕп, ҫулталăксăр тапратмăп.

### Тырӑ вырни

3103. Ҫӑчӑрттин Курмила, пӗлтӗрхи вырӑс мӗн ятлӑ?

### Тырӑ сӑвӑрни

3104. Чу! кайӑп та ылтӑн та кӗмӗл пулса анӑп.
3105. Ҫӳле кайӑп, аяла кайӑп, мӑнтӑр купи купалӑп.
3106. Чу! кайӑп, лап! ӳкӗп, мӑнтӑр купи купалӑп.

### Тырӑ тӳни

3107. Ҫӳлте вӑш-вӑш, аялта тӳп-тӳп! Тӳпен кӗлти мӗн кӗлти, чаш-чаш! чашан кӗлти мӗн кӗлти.
3108. Тӑвӑш-тӑвӑш тӗверле, хӑна-вӗрле Ҫавӗрле.
3109. Тӳп-тӳпӗлтӗк, тӳпӗлтӗк, вӑш-танкӑлтӑк, янкӑлтӑк.
3110. Тӳп-тӳп тӳпен кӗлте, ман кӗлти, чаш-чаш чашан кӗлти, ман кӗлти.
3111. Ир те чак-чак, каҫ та чак-чак, вӑрри вак-вак.
3112. Яш-яш якӑлти, якӑлти; мӗн-тӗп тӗпӗлти, тӗпӗлти.

### Тырӑ аллани

3113. Виҫ ураллӑ кӗлетре пысӑк аппа пӗркенчӗксӗр хӗр йӗрет.
3114. Ҫатран-катран пӗлӗт килет, ҫумӑр ҫӑвать.

### Тупӑк туни

3115. Ҫуллен ӗҫлӗн, кивҫен ӗҫ мар.

### Уйран уҫлани

3116. Вӑкӑрӗ мак! макӑрать, хӳри тӗк тӑрать.
3117. Пӗр хӑвӑлта хӑнтӑр вылӗ.

### Ура сырни

3118. Урам урлӑ таната карнӑ.
3119. Эсӗ кайӑн леш енчен, эпӗ кайӑп ку енчен, вуласнай * кӗпер тӗлӗнче тӗл пулӑпӑр иксӗмӗр.

### Урай шӑлни

3120. Хурӑн тӑрри хумханать, хура халӑх пуҫтарӑнать.

* Вулӑс.

3121. Вăш çил килет, хура халăх пуçтарăнать.
3122. Вĕт халăх кĕтÿ хăвалать.

## Урпа тÿни

3123. Вари-вак-вак, чăк-чăк!

## Утă çулни

3124. Шук пулă чăмса пырать, çарĕ сирĕлсе пырать.
3125. Хĕçĕ касса пырать, çарĕ хирĕлсе пырать.
3126. Çăрттанĕ чăма пырать, çар хирĕле пырать.
3127. Çаран тăрăх уксах карчăк кăшкăрать.
3128. Ваш килчĕ, вăш килчĕ, хурăнай вăш килчĕ.

## Хăйă чĕлни

3129. Тимĕр така ту ярăнĕ.
3130. Тимĕр така тăвайкки ярнать.
3131. Кăвак така ту ярăнать.
3132. Сикĕп-чикĕп, шăрпăклăп, аймаклăп та ташаклăп.
3133. Кĕлете пăсма пĕлĕп, юсама пĕлеймĕп.
3134. Пĕр пÿрте пăсап, ниçтан та юсаймастăп.
3135. Пĕр çын пăснине пин çын тÿрлетеймест.
3136. Пĕр кĕлете пăсăп та юсаймăп.
3137. Пĕчĕкçеççĕ пÿртĕм пур, салатрăм-пăрахрăм, умне-сумне тупма çук.
3138. Пĕчĕкçеççĕ чăланăн имне-симне тупма çук.
3139. Пĕр çынтан пин çын тăвăп.
3140. Пĕр аршăнтан çĕр аршăн тухать.
3141. Ĕретĕм ĕретпе, Çенчук пĕччен.

## Хуран вĕрени

3142. Хура йытти хам-хам! тет.

## Хут çырни

3143. Шурă ана çине хура вăрлăх акаççĕ.
3144. Шур ана çине хура вăрлăх акать: кам акать, вăл пĕлет.
3145. Çĕрĕ шурă, вăрлăхĕ хура; пиллĕкĕн сухалаççĕ, иккĕн пăхса тăраççĕ, пĕри астуса пырать.

## Хушпупа çĕлĕк тăхăнни

3146. Мăн акай пашлăкне вуннăн çĕклеççĕ, мăн пичи пашлăкне пиллĕкĕн çĕклеççĕ.

## Чан çапни

3147. Чĕрри виллине çапать, вилли макăрать.

## Чăлха тăхăнни

3148. Ик айккинчен тытрăм, вăта çĕртен чикрĕм.

## Чăпта çапни

3149. Шак-шак муклашки, тăлмачи-петрушки.
3150. Шăкăлт-шакăлт, хăнтăрт-хант!

## Чăхсене сĕлĕ сапса пани

3151. Сапри сапать, тупакан тупать.
3152. Саприс сапать, туприс тупать.

## Чуста çăрни

3153. Авăрлă та павăрлă мăнтăр упа çаврăнĕ.

## Чӳрече йĕпенни

3154. Мучин тути йăл кулать.
3155. Ĕçлемесĕр тар тухĕ.
3156. Шăл сăмсуна, мана намăс.
3157. Çармăс хĕрĕн ĕçлемесĕр тар юхать.

## Чӳрече шăнни

3158. Алсăр-урасăр тĕрĕ тĕрлет.
3159. Шăнкăр-шăнкăр туй килет, чӳрече умне пай килĕ.
3160. Кусуй (Шур мучи, Мехет, Энис, Пипи, Асар, Милет, Ярантай, Акшар, сурăх) куçне шур илнĕ.

## Шакăлла выляни

3161. Çӳле ывăтрăм — тăп! тытрăм; тепре ывăтрăм — лап! ӳкрĕ.

## Шăпăр калани

3162. Пĕчĕкçеç пикенеç (пикенек, путене) пур халăха пуçтарать.
3163. Пысăк пуçлă путене пур халăха пуçтарать.
3164. Пĕр пĕчĕкçĕ пимпĕлтет пĕтĕм килйыша хускатать.
3165. Пин-пин аккам, пин аккам, мĕн халăха вăратан?

## ТĔРЛĔРЕН

### Арçури

3166. Вăкăр пек мĕкĕрет, качака пек çухăрать, çил-тăвăл пек çавăрать, çырмана та сиктерет.

### Ĕмĕр

3167. Пÿлĕх явнă вĕренĕн вĕçне-хĕрне пĕлме çук.
3168. Виçсе панă япалан вăрăмăшне пĕлместĕп.
3169. Вăрăм та пулĕ, кĕске те пулĕ — вăрăмăшне пĕлме хĕн пулĕ.
3170. Мĕнле вăрăм тăсăлсан та, мĕн пĕчĕкрен çав вĕрене виçетĕп.
3171. Алăпала тытма çук, аршăнпала виçме çук, аршăнпала виçсен те — вăрăмăшне пĕлме çук.
3172. Пĕр вăрăмкка вĕрен пур, мĕн пĕчĕкрен çав вĕрене виçетĕп.
3173. Çут тĕнчене çуралтăм, çип аврама пуçларăм; çут тĕнчерен çухалăп — тин аврама пăрахăп.

### Календарь

3174. Асатте пахчинче пан йывăççи пур, пан йывăççи тăрринче виççĕр утмăл пилĕк çулçă пур, çав йывăç çинчен куллен пĕр çулçă çухалать.
3175. Кулинеинкен виççĕр утмăл пилĕк шур тутăр, Кулине кашни кун пĕр тутăрне хывса пăрахать.
3176. Пĕр йăвара виççĕр утмăл пилĕк кайăк пур, кашни кун пĕр кайăкĕ вĕçсе каять.
3177. Пĕр кайăкăн виççĕр утмăл пилĕк чĕпĕ пур, кашни кун пĕр чĕппи çухалса пырать.

### Кулă

3178. Вырăсăн-чăвашăн пĕр халап.

### Масар

3179. Автанĕсем авăтаççĕ, сыннисем тăмаççĕ.
3180. Ялĕ ларса тухнă, автанĕсем авăтаççĕ, çыннисем тăмаççĕ.

## Пуп

3181. Пĕр пуç милĕк, тепри юплĕ, варри панк.
3182. Кам хырăмне ĕçлемесĕр тăрантать?

## Сасă

3183. Утсĕрех пурăнать, чĕлхесĕрех калаçать, никам та ăна курмасть, пурте илтеççĕ.
3184. Мĕн вăл? Пурне те хирĕç калать, хăйне курма çук.

## Сăмах

3185. Пĕр тухса кайсан, нихăçан та хуса кĕртейместĕн.
3186. Куçĕ те çук, алли те çук, ури те çук; ни этем, ни усал — хытă каять.

## Суя

3187. Шăтман ана кутĕнче çуралман мулкач выртĕ.
3188. Алман[148] ана çинче, шăтман хурăн кутĕнче çуратман мулкачă выртать.
3189. Акаламан, сухаламан ана çинче çуралман кайăк чупса çӳрет.
3190. Урамра туман урапа кусать.
3191. Çук çырма пуçĕнче шăтман йывăç çитĕнет.

## Çилленни

3192. Мунча хыçне мăкăлттăм.
3193. Улча юпи мăш.
3194. Шăпак * хыçĕнче мĕшли ларĕ.
3195. Йăпăр-япăр мунча хыçне.

## Чухăнлăх

3196. Шухăшпа шур пӳрт лартăп, çине пĕлĕтпе витĕп.

## Шăршă кăларни

3197. Сăмса тавра çаврăнать, алла тыттармасть.
3198. Ик ту хушшинче Пахтиер кăшкăрать.
3199. Укле** хыçĕнче Пахтяр кăшкăрать.

---

* Шкаф.
** Упле.

3200. Икĕ кĕлет хушшинче Васлей Иванчă кăшкăрĕ.
3201. Пукан айĕнче пуп кăшкăрать.

## Шкул

3202. Хăй пĕрех çех, пĕтĕм яла ăслăлатать.

## Шухăш

3203. Ашшĕ тула тухиччен ывăлĕ Мускава çитĕ.
3204. Тĕнчере мĕн питĕ хытă чупать?

## Ыйхă

3205. Пылпа çуран мĕн тутлă?
3206. Пылпа кулач парсан та улăштармастăп, хамăнах тутлă.
3207. Пуç айĕнче пыллă çăпала.
3208. Хыçалтан та туртать, малтан та туртать.
3209. Савни килчĕ те ирĕксĕрех тĕксе ÿкерчĕ.
3210. Пуç тăрринче тăмана ларать.
3211. Çĕрле мĕн нумай?

## Элек

3212. Тикĕт мар — çынна варалать.

## Юрă

3213. Шыв мар — юхать, тимĕр мар — шăранать.

## Ят

3214. Шывра путмасть, вутра çунмасть, çĕрте çĕрмест.